К 84.09(=Чув)
У 89
Ч-45854

Якоов Ухсай



# АКĂШ КӲЛ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
1955

Национальная библиотека ЧР
4-045854



К84.Ч9(=Чув)
У-89

Якоов Ухсай

# АКАШКӲЛ

РОМАН

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. №

Чӑваш АССР
Государство Издательстви
Шупашкар — 1955

84(2Рос=Чув)6-5І
К 84.09(=Чув)6-5І

ТУПМАЛЛИ

Пӗрремӗш пайӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Иккӗмӗш пайӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 95
Виҫҫӗмӗш пайӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 182

---

Проверено 19 СЕН 2017

**Ухсай Яков Гаврилович**

**АГАШКЮЛЬ**
**Роман в стихах**
**Обложка и рисунки Ф. Осипова**

Национальная библиотека
Чувашской Республики
И-45854

Редактор *С. Павлов.*
Худож. редактор *М. А. Ильин.*
Тех. редактор *А. И. Краснов*
Корректоры *М. Степанова, И. Остроумов.*

Сдано в набор 28-IV 1955 г. Подписано к печати 14-IX 1955 г.
Формат 84×108 1/32. печ. л. 12,09 Уч.-изд. л. 11,85 Тираж 3000 экз.
НТ 09300. Цена 7 руб. 45 коп. Заказ № 1385.

Типография № 2 Министерства культуры Чувашской АССР,
г. Алатырь, ул. Комсомола 25/27.



## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

1

Лейтенант Иван Михайлов
Таврăнать тăван ялне.
Ķалама та çук хаваслăх
Тулнă çамрăк чĕрине.

Пĕр-пĕр лав ăна çăп-çăмăл
Леçессе кĕтмест—ирпе
Станцирен тӳрех утать вăл
Икĕ пусă хушшипе.

Сылтăм хул айне хĕстернĕ
Çĕнĕ сăрă шинелне,
Тепĕр аллипе çĕкленĕ
Йывăр мар чăматанне.

Тĕтĕм витĕр иртсе кайнă
Çулсене, курнисене
Асилсе утать Михайлов
Хăй çуралнă ял енне.

Тăрисем юрлаççĕ юрă,
Кантараççĕ ун чунне.
Ик енчи тĕкме пек тырă
Сĕртĕнсе илет питне.

Ешĕл тинĕсре пыруçăн
Курăнса каять ăна
Юланутлă çыннăн пуçĕ
Е лаша пĕкки кăна.

Карттусна халь хыв та ывăт—
Путмĕ вăл, ыраш çăра.
Яланах чăваш çĕршывĕ
Пулнă амĕш пек асра.

Ерипен çеç утнă майăн
Пĕр парка пучах татать,
Пучахне вара Михайлов
Алтупань çине хурать.

Сăтăрса тасатнă хыççăн
Çĕнĕрен тухать шăрки.
Тырпула юратнă çыннăн
Пур хăйне кура йĕрки.

Шăлкаларĕ, вĕркелерĕ
Аллинчи пучаххине,
Хăй сиссе те ĕлкĕрмерĕ,
Тухрĕ вăл çерем çине.

Вăл кунта кервен ӳтленнĕ,
Тĕрекленнĕ ачаран,
Тантăш-йышĕпе çӳренĕ
Ярханах, çара уран.

—Ҫам мала!—чупса тавлашнӑ
Вӑхӑтра, ача чухне,
Урипе тапса салатнӑ
Ҫӗрӗк сар кӑмпасене.

Астуса илет Михайлов
Лашалла вылянине.
Инҫетри хитре ачалӑх
Тухса тӑчӗ куҫ умне.

Пӗчӗк чух юман икелӗ
Пиҫнӗ кӗл вучахӗнче.
Тутлӑ пулнӑ-ҫке!—сӗткенӗ
Халӗ те чӗлхе ҫинче.

— Пепӗккем!—тесе минтерлӗ
Сӑпкара атте-анне
Сиктерсе пӑхса ӳстернӗ
Теветкел ачисене.

Хӑлхаран та туртнӑ ӗнтӗ,
Ҫапкаланӑ та, анчах
Ҫаласси килет пурин те
Тӑванне ачаш сӑмах.

Ҫынсене вӑрман пек сывӑ,
Паттӑр та таса, матур
Ӳстерме тӑван ҫӗршывӑн
Яланах хӑвачӗ пур.

Ун таса ҫӑкри-тӑварӗ
Вӑй пулса вылять пирте—
Пирӗн пӳ тӳсме пултарӗ
Тем пек йывӑр хӗн-терте.

Ҫапӑҫма ҫӗршыв йыхравӗ
Ҫитсенех, эпир вӑрҫа
Ҫайрӑмӑр ҫӗршыв ялавӗн
Хӳттинче пӗр кар тӑрса.

Лейтенант ун чух:—эп килӗп!—
Терӗ ҫурчӗ умӗнче,
Ҫул ҫине ҫӗлен ҫиппе йӗп
Илчӗ амӗш аллинчен.

Ывăлне тăват çулталăк
Вăрçăран кĕтсе, куллен
Амăшĕ хуратчĕ кашăк
Апата лармассерен.

Сывлăш пăчă. Ылтăн çăлтăр
Шăрăх кунăн çуттинче
Вут-хĕлхем пек йăлтăр-йăлтăр
Ялкăшать кăкри çинче.

Хăй çуралнă ялĕ ĕнтĕ
Айлăм вырăнта ларать,
Хӳхĕмех те мар пулин те,
Салтака савăнтарать.

Чарăнса тăрса Михайлов
Пăхнă чух çулçисемпе
Шавламасть, шавлать йăмралăх
Кураксен сассисемпе.

Ун çинче йăва нумайччĕ,
Курак йышĕ ĕлĕк те
Çĕкленсе кунта хуплатчĕ
Кĕрхи хăмăр пĕлĕте.

Ватă йывăçсем хупланă
Вырăнта хӳтте пула
Яланах çăлкуç шарланă,
Панă тăрă шыв яла.

Тĕнчере темле те лайăх
Çăлкуçсем нумай—кунтан
Тутлине Иван Михайлов
Ĕмĕрте ĕçсе курман.

Йĕкĕр ывăçпа ăсса вăл
Сиплĕ шыв ĕçет, вара
Ырнă ӳт те уншăн çăмăл,
Çăмăл уншăн ал-ура.

Йăмрасем кăна лараççĕ.
Урăх йывăç çук ялта.
Юрлама килсе тухмаççĕ
Шăпчăк та, саркайăк та.

Чим-чим-чим, пĕр пĕрчĕ çитĕ!—
Тенĕ пек, сиксе çӳрет
Картара чее çерçи те,
Чанлатса чавка вĕçет.

Шыв чăххи тăвăр çыранăн
Тĕпĕнчи шур чул çине
Телеграмма хăвăрт çапнăн
Сиктерет хӳрешкине.

Çуллахи уяр çанталăк
Йăлтăртатнă кунсенче
Чĕп тапма çеç хĕрен-кайăк
Вĕçет Атăл леш енчен.

Кĕркунне тăм илнĕ курăк
Вăйсăр-халсăр йăвансан,
Иленет тата та урăх
Кайăк-кĕшĕк вăрмантан.

Хĕл хута хирте, ялта та
Шавласа илет пăртак
Чĕвĕл-чĕвĕл кăсăя та
Чăкăр-чакăрти чакак.

Çуркунне вĕçсе иртеççĕ
Хур та, акăш та тăрна.
Хирсене вĕсен ӳкеççĕ
Мĕлкисем кăна.

Савăнса пăхса тăмалăх
Кăвăлти те çук, анчах
Акăшкӳл—ят панă халăх
Ку яла авалтанах.

— Хитреленĕ çакă айлăм
Йывăçпа, чечексемпе!—
Шухăша кайса Михайлов
Утрĕ ял урамĕпе.

Акă хăй çуралнă çурчĕ!
Икĕ пысăк чӳрече
Йăлтăр-йăлтăр вутлă çунчĕ
Кăнтăрла, хĕвел çинче.

Ҫайнă чух вĕр-ҫĕнĕ ларнă
Сарă вырăсла хапхан
Хăмисем чылай хуралнă
Юр та ҫумăр ҫапнăран.

Акă пӳрт. Аял тăпрасăн
Ҫăпăшка тусанĕпе
Выляса выртать хаваслăн
Ватă чăх чĕпписемпе.

Вăрҫăра Иван манмарĕ,
Кĕтрĕ ҫак хаваслăха.
Хăлăпне тытсан, юрларĕ
Кĕтнĕ пек пулса хапха.

Ҫăм арланă, ларнă амĕш
Сулхăн пăлтăр хӳттинче.
Хăй ачи-ҫке, чун ҫунтармĕш,
Халь тăрать ун умĕнче...

Мĕн калас? Тăват ҫулталăк
Хатĕрленнĕ калама
Чĕререн, анчах сасартăк
Вăйĕ ҫук ҫăвар уҫма.

Амĕш хулăн хулпуҫҫиллĕ
Хăйĕн чун тĕпренчĕкне
Ыталать. Юхать куҫҫулĕ
Ывăлин кăкри ҫине.

2

Пысăк-ҫке ачин хисепĕ!
Амĕш васкаса ҫӳрет,
Уҫăлать пĕрре нӳхрепĕ,
Уҫăлать тепре кĕлет.

Вăрҫăра тăват ҫулталăк
Пулнă чух сĕтел ҫинче
Кĕтсе выртнă сарă кашăк
Пултăр ывăл аллинче!

Ҫĕлене вутпа ҫунтарнă
Юмахри улăпсене
Кĕтнĕ пек кĕтме пултарнă
Амĕш чун тĕпренчĕкне.

Çикелет Иван; çӳресшĕн
Васкатать чĕри ăна
Сарлака, çăра, ем-ешĕл
Тыră-пуллă таврана.

Сиплĕ çĕрĕн пур илемĕ,
Чапĕ те пур мухтама—
Тивĕç ун ачи-этемĕ
Хăй çĕрне сума сума.

Вăл сана куллен çитернĕ,
Унăн хаклă тăпринчен
Илнĕ пысăк вăй сĕткенĕ
Пулнă кăкăр сĕтĕнче.

Çĕр сана усранă тутă—
Хисепле те сума су:
Унран пулнă сан шăмму та,
Сан ӳтӳ, куçу, сассу.

Курасси килет салтакăн
Сăртсене, лапамсене,
Салтакла лартать хăяккăн
Сылтăма пилоткине.

Çунатланнă евĕр паттăр
Тухрĕ вăл; çурт умĕнче
Вĕлкĕшет сар пурçăн тутăр
Савнă амĕш пуçĕнче.

Çулсерен юр шывĕ вирлĕ,
Акăш-макăш ватнăран
Йыт çăварĕ пек хĕп-хĕрлĕ
Курăнса выртать çыран.

Хăй ача чухне çӳренĕ
Чуллă тарăн çыранра
Çулçăсен шăрши çĕкленнĕ
Халĕ нӳрлĕ сывлăшра.

«Улăп ту»—тесе каланă
Паллă вырăнта, сăртра,
Тем пирки чавса кăларнă
Капан çӳлĕшех тăпра.

Мускавран пӗр ват профессор
Килнӗ те унта ҫӳрет.
Мӗншӗн кирлӗ-ши ӑна сӑрт
Мӗн шырать-ши, мӗн тӗпчет?

Тахҫанах авал хӑпарнӑ
Ҫак масар тӑпри айне
Хисепе хурса пытарнӑ
Пысӑк ҫар утаманне.

Вырӑс паттӑра ачашшӑн—
Эсӗ улӑп, эс маттур—
Теекен халап чӑвашӑн
Халь те сывӑ, халь те пур.

Кунӗпех тӗпчет профессор,
Пӑхкалать апла-капла.
Вӑл нихҫан та каҫ пулмасӑр
Ҫывӑрма килмест яла.

Кӗмӗл тӗслӗ шурӑ ҫӳҫӗ
Вӗлкӗшсе тӑрать ҫилпе.
Ун умне тухать яр уҫӑ
Иртнӗ вӑхӑт пӗтӗмпе.

Утмӑла-тӑр халӗ кайнӑ
Археолога курсан,
Каласма Иван Михайлов
Именсе тӑрать малтан.

— Кӑмӑл тӑвӑр, чунӑм, ларӑр.
Юрататӑп туслӑха.
Паллашар—тесе профессор
Ал парать Михайлова.

— Ҫапӑҫас пулать наукӑн
Вӑрҫӑ хыҫҫӑн та хаяр.
Кӳлӗри пек пит те лӑпкӑн
Пурӑнма эп пулӑ мар.

Пур ман ватӑ ҫын хисепӗ,
Эп те сирӗн пек салтак.
Яланах кӗрешӗп эпӗ
Вӑйӑм пур таран хытах.

Эп айван статья тĕл пултăм
Пĕр француз хаçатĕнче—
Тăр ухмах пек урăм-сурăм
Çырнă вăл чăваш çинчен.

Парижри карма çăварăн
Элекне шанас пулсан,
«Халĕ те чăваш, мăнтарăн,
Выльăхран иртмен, пĕр тан.

Ун чĕлхи те лĕнчĕр-ленчĕр.
Ун истори те пулман».
Урăх ан та лĕпĕртетчĕр!
Пур çырас хаваслăх ман.

Намăса пĕлмен суеçĕ,
Санăн ирсĕр сурчăк пур.
Эс камне кунта пĕлеççĕ.
Сапăрлан, тăшман, ан сур!

Хĕрнĕ тимĕрпе пусатпăр
Сĕлехеллĕ чĕлхĕре...
Яланах чăвашăн паттăр
Çулĕ пур историре!

Йыт пуллли пек çуралман вăл
Наймака лĕккисенче.
Пулнă çил те, пулнă тăвăл
Унăн ĕмĕр тăршшĕнче.

Хĕвеле чăваш ырланă,
Пĕлнĕ вăл тĕрĕслĕхе,
Атăл хĕрринче юрланă—
Пулнă ун кăвар чĕлхе.

Каюра пекех мăнтарăн
Куççăр пурăнман чăваш,
Тăшманпа пуплет хаяррăн,
Тусĕпе—ялан ачаш.

Авалтан ун çулĕ пысăк—
Вырăспа пĕрле пĕр çул,
Тытнă пĕр пек йывăр кашăк,
Тăкнă пĕр вĕри куççуль.



Аслӑ пиччӗш мӗн-мӗн курнӑ,
Курнӑ шӑллӗ те ӑна.
Хурлӑх витӗр юн-юн урлӑ
Пынӑ йывӑр самана.

Питӗр хулине лартасшӑн
Никӗс хунӑ ҫулсенче
Шӑммисем путса чӑвашӑн
Юлнӑ уҥ никӗсӗнче.

Çулсерен юман кастарнă
Паттăр чунлă чăваша;
Юманран карап тутарнă
Атăл хĕрринче патша.

Вырăспа пĕрле хӳтленĕ
Çĕршыва чăваш ĕçчен.
Хăйсене асап йĕвенĕ
Хытă тытнă, вĕçертмен.

Эх, парам эппин тăрлавсăр
Леш Париж элекçине!—
Тенĕ май суллать профессор
Чăмăртанă аллине.

Малалла тата профессор
Калама тăрать, анчах
Ансăртран пĕр шарламасăр
Пырса тăчĕ хĕрача.

Ивана пĕрре сип-сивĕ,
Тепринче вĕри пулать.
Хĕрĕн йĕкĕр вăрăм çивĕт
Çурăм тăрăх яр выртать.

Тем вăтаннă пек, пăртакçă
Именсе, Иван çинчен
Таталми куçсем пăхаççĕ
Вăрăм хăрпăк айĕнчен.

Тинкерсе пăхаççĕ хĕрĕн
Куçĕсем сенкер тĕспе—
Курăнать çапла сенкеррĕн
Çуркунне каçхи тӳпе.

— Чавнă чух, эпир кĕтменччĕ,
Сикрĕ-тухрĕ тем шăмми,—
Тенĕ майăн хĕр тинкерчĕ
Ивана ытарайми.

Ват профессор пăхкаларĕ
Сарă вак-тĕвек шăмма,
Тĕлĕнсе кайса пуçларĕ
Ерипе уткалама.

— Акăш ку, танкист юлташăм,—
Терĕ вăл Михайлова,—
Хуçасем услам пухасшăн
Хăртнă сирĕн çĕршыва.

Çилсемпе пĕрле канашлă
Пурăнса, хура вăрман
Авалтан кунта кашланă,
Çивчĕ пуртă янраман.

Çакă сирĕн Энĕш шывĕ
Пăсланман хĕвел çинче,
Шăрăхра та пăр пек сивĕ
Юхнă сулхăн айĕнче.

Ёлĕк пулнă тем сарлакăш
Çутă тĕплĕ кӳлĕре
Авăк мăйлă шурă акăш
Ишнĕ ярăнса хитре.

Çакă пурлăха ăмсаннă,
Пĕтĕмпе çăтса-хыпса
Пĕтерме килсе капланнă
Лăк туляи улпут, купса.

Сĕм-сĕм вăрмана кастарнă,
Йывăçа тие-тие
Караппа инçе шутарнă
Англие, Голландие.

Йывăç тапă та хĕстернĕ,
Вăрттăн капкăн та хĕлле
Пакшапа юса лектернĕ,
Тытнă сăсарпа тилле.

Хаплатса пăшал кĕрленĕ
Варсенче, çырансенче.
Хăнтăр тир çуха çӳренĕ
Лондонри миссем çинче.

Çăткăн пыр—капитализм —
Мăнтăрланнă, тăранман,
Атăл хĕрринче пĕр пусăм
Çаратмасăр хăварман.

Кантарман тĕнче илемĕ,
Ун пулман юратасси—
Хăлхине пырса иленнĕ
Шăпчăк пек укçа сасси.

Вилсенех, тĕнче кисрентĕр!—
Мур-усламçă хĕвеле
Сĕтĕрсе кайма та хатĕр
Çавана хăйпе пĕрле.

Пирĕн вăхăтри этемĕн
Чунĕпе чĕри таса—
Кăмăлне тĕнче илемĕ
Илĕртет хаваслатса.

Вăл хăйне кăна хуçалăх
Çавăрма чавмасть çĕре,
Малашне тата та лайăх
Пуласса шанать ĕçре.

Пур кунта Митюк Макаров—
Чирлĕ килнĕ вăрçăран.
Вăл хуллен кунта хир тăрăх
Уткалать аран-аран.

Вăл ыран-и е паян-и
Вилессе пĕлет, анчах
Пултăр, тет, юман вăрманĕ,
Çутă кӳлĕ те пахча.

Хăй вилсен те, ячĕ тивĕç
Халăхра тăрса юлма.
Пăхăр-ха, пĕр ушкăн йывăç
Лартнă вăл леш лапама.

Хĕмленсе кайса профессор
Тăсрĕ сылтăм аллине.
Кăтартать вăл шавламасăр
Ларакан юмансене.

Сахалтан, пĕр çухрăм яхăн
Тăсăлса выртать вăрман.
Тинтерех çеç лартнă ахăр,—
Юмансем чăркуç таран.

Ашкăрса ӳссе хăпарĕ
Çулсерен çӳлтен çӳле,
Вирелле тăрса вăл чарĕ
Тăвăла, вĕри çиле!

Çитĕ вăхăт, нӳрлĕ ырă
Имçамланă хирсенче
Ашкăрса хумханĕ тырă
Сулхăн хӳтлĕх айĕнче.

Виç-тăват çулхи юманлăх
Çил çинче шавланине
Итлесе пăхать Михайлов
Энĕш улăхĕ енне.

Халиччен Иван пĕлменччĕ
Паттăр çын чирли çинчен.
Сăр-сăр туйăм çӳçентерчĕ,
Иртрĕ пĕтĕм ӳтĕнче.

Хăй чирленĕ пек, Михайлов
Ӳкрĕ халĕ чăм тара.
Васкаса вăл алă пачĕ
Хĕрпеле профессора.

Юратса-ши е ахаль-ши
Хĕр алли ытла вĕри?
Вăл утать, унтах юласшăн
Пулнă пек тапать чĕри.

Ытарса-и е ахаль-и
Хăйĕн ашшĕ умĕнче
Хĕр куçне илмерĕ халĕ
Пĕр самант та ун çинчен?

Чирлĕ çын та шурă акăш,
Хĕр те куçĕ умĕнче...
Явăнать-çке тарăн шухăш,
Пысăк шухăш пуçĕнче.

Акăшкӳл, тесе ят панă
Халăх ĕлĕк хăй ялне.
Ку çĕре чăнах та анĕ
Шурă акăш малашне.

3

Ут çулма-мĕн кайнă халăх
Улăха паян ирпе.
Талпăнса утать Михайлов
Шăрăх ял урамĕпе.

Эх! те эх! çап-çамрăк каччăн
Хулĕнче хăват сикет,
Халăхпа тăрса пĕр таччăн
Вашкăртса, çулас килет.

Йывăр танксемпе çӳренĕ
Йĕкĕте, Михайлова,
Илĕртет халь улăх енĕ,
Йыхăрать çӳхе çава.

Алшишсем çыхса лараççĕ
Карчăксем çерем çинче.
Йĕпсисем хуллен выляççĕ
Пĕркеленчĕк алсенче.

Çĕпритун ачи, Иванĕ,
Иккенне пĕлсен, вара
Карчăксен сăмах арманĕ
Çаврăнать калаçура.

Чунтанах ăна сунаççĕ
Вăрăм ĕмĕрлĕ пулма,
Сăмах майăн шак хураççĕ
Савнă мăшăр та тупма.

— Пырса ларăр калаçмалăх,—
Тенĕ май ваттисене
Ал парса тухса Михайлов
Уттарать Митюк патне.

— Шăл тивме çӳхе икерчĕ
Пĕçерсен, чĕнтер вара!—
Тесе ушкăн карчăк-кĕрчĕк
Шавласа юлать хыçра.

Тӳпене хĕвел çĕкленнĕ,
Çунтарать çунтармаллах.
Шăрăхра шанса ĕшеннĕ
Шăпăр курăк та хупах.

И-45854
Национальная библиотека
Чувашской Республики



БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР

Ӑмакан хӗрӳ кӑварӗ
Хӗртнӗ пек ял варринче
Ҫӑмарта пиҫме пултарӗ
Халӗ ҫул тусанӗнче.

Ӑураксем те шавламаҫҫӗ,
Сулхӑнра канать ҫерҫи.
Шӑрӑха сирсе пӑртакҫӑ
Пӗр вӗрсе ирттинччӗ ҫил!

Вӗлтӗрен тӗмми сархайнӑ.
Аслӑ ҫул хӗрри. Унта
Палласа илет Михайлов
Тимӗр витнӗ пӗр ҫурта.

Шурӑ карантӑк тыттарнӑ
Икӗ пысӑк чӳрече.
Пурӑнать унта Макаров,
Ырӑ ҫын, Митюк пичче.

Сас ан тутӑр манӑн утӑм
Тенӗ пек Иван кӗрет.
Ӑалинкке кӑна пӗр хулӑн,
Пӗр ҫинҫе чӗриклетет.

Хушӑкран пӳрте пӗр ярӑм
Ҫуттине кӗртет хӗвел.
Тӗттӗмре выртать Макаров.
Сӑмсана ҫапать эмел.

Ӗмӗрех ҫутта юратнӑ,
Ырӑ чунлӑ ҫын пӳртне
Килнӗ тӗттӗм каҫ, хупланӑ
Пӳлӗмре мӗн пуррине.

Ӑӗрсенех Иван курмарӗ—
Питӗ йывӑр курасси.
— Эс иккен!—тесе каларӗ
Ӑӗтесрен этем сасси.

Ӑарнине пӑртак ҫип тӑрӑх
Шутарса уҫать инке.
Палласа илми Макаров
Хӑрса кайнӑ, имшеркке.



Селĕм пĕкĕ вăл аватчĕ
Яштака хурамаран.
Пĕр мăскал юлман хăвачĕ
Ĕлĕкхи патварлăхран...

Шăмă юлнă, ÿчĕ тарнă,
Аллисем ырханнипе
Курăнаççĕ типсе ларнă
Тупăлха турачĕ пек.

— Шăллăм, кил,—тесе Макаров
Кăтартать пукан çине,—
Хамăр ял ятне ямарăн,
Эс çĕклерĕн ун ятне.

Ман çиллес чĕре кăварĕ
Питĕ çунчĕ, тăшманпа
Çапăçма килсе тухмарĕ
Пурнăçра мана шăпа.

Йĕксĕк нимĕç пулемечĕ,
Хĕрĕх пĕрмĕш çул хĕлле
Асăнмалăх мана пачĕ
Кăкăр витĕр витмелле.

Тăвал евĕр халăх çарĕ
Малалла та малалла
Кайнă, манăн вăй пулмарĕ,—
Таврăнтăм тăван яла.

Вăрçа кайнă пур хăюллă
Вăйпитти çынсем, ялта
Ĕç тĕрекĕ пулса юлнă
Ачапча, хĕрарăм та.

Лашасен те—вăрçă çулĕ,
Тракторсем те—вăрçăра.
Макăрсан, çынсен куççулĕ
Ўстерсе лартмасть тырра.

Пирĕн çĕрĕн пĕр гектарĕ
Пуш юлмарĕ ун чухне.
Йывăр сухара тарларĕ
Колхозри чылай ĕне.

Пирĕн халăх ылтăн мар-и?
Вăрçă пынă çулсенче
Ĕмĕтленчĕ, шухăшларĕ
Малалла ĕçсем çинчен.

Хĕвелчен ĕçе çўрерĕ,
Хĕвелтен кайран ыйха
Выртрĕ вăл—çапла çĕклерĕ
Акăшкўл хуçалăха.

Урăм-сурăм вăрçă шавĕ
Кĕмсĕртетнĕ çулсенче
Пирĕн ГЭС—çынсен мухтавĕ—
Ӳсрĕ Энĕш хĕрринче!

Пĕвене виç метр тарăн
Цементпа тыттарнă чух
Колхозри хастар хĕрарăм
Аркăпа çĕклерĕ чул.

Чирлĕ çын:—Ачам, Михайлов,—
Тет, хуллен тăрса ларать.
Минтерне вăл тайăнмалăх
Çурăмĕ хыçне хурать.

— Кăкăрти инкек-суранăм
Ыратсан та, эп ялта
Ахлатса сая ямарăм
Парти панă ыр ята...

Ялкăшать сӳнес пек çулăм
Унăн путăк куçĕнче.
— Сывалма каятăн пулĕ
Курорта, Митюк пичче.

— Çук, ачам, курорт текенĕ
Пулăшаймĕ тек пире.
Чĕмсĕр чир хивре йĕвенĕ
Сĕтĕрет халь нӳр çĕре.

Ленин шухăшĕ—идейĕ
Тĕнчене çутатнине
Курнă чух çӳрес телейĕм
Кĕрĕ тĕксĕм çĕр айне.

Çук, вилес килмест, тăванăм,
Вырăн çийĕнче ахаль.
Эх, сиксе тăрасчĕ манăн
Юмахри пек харсăр халь!

Ӳсĕрет Митюк Макаров,
Йăванать тӳшек çине.
Сăрхăнса шăрçа пек тарĕ
Витнĕ унăн çамкине.

Вăрçăра салтакăн чунĕ
Хытнă хурçă пек, анчах
Ивана Митюкăн кунĕ
Хăратать хăратмаллах.

Урамра пĕр-икĕ килĕ
Иртсенех, çунан чĕри
Кÿтесе çитет, куççулĕ
Пит çине тумлать вĕри.

Çынсене курма вăтанчĕ,
Кăмăл йывăр, çавăнпа
Килнелле Иван уттарчĕ
Тарăн хĕрлĕ çыранпа.

4

— Эп паян анне, каятăп
Хулана, Шупашкара,
Мĕн ĕçпе—пурне те калăп
Таврăнсан, кайран, вара.

Шинелне çакать Михайлов
Хулăн хулпуççи çине,
Пур салтак йăли—сыпмалăх
Шыв тултарчĕ флягине.

Уй карти çатанĕ урлă
Вăл сиксе вĕлт каçрĕ те,
Туйса илчĕ хуратулăн
Тутлă шăршине хирте.

Çеçкене ларман, çапах та
Сиплĕ пыл шыра-шыра
Пĕчченшер унта, кунта та
Нăйлатать тĕкĕлтура.

Сывлăш сулхăн. Пусă шавсăр.
Çил пĕртте вĕрменнипе
Çил арманĕ кăлтăр-кăлтăр
Вылямасть çунаттипе.

Татăк-кĕсĕк те сайра çеç
Пĕлĕтсем çӳлте-çӳлте
Ыйхăри пекех тăраççĕ
Хускалмасăр пĕр çĕрте.

Васкаса утать Михайлов.
Çавракa хĕвел унки
Пĕр хĕртмесĕр пăхнă майăн
Карăнса ӳкет мĕлки.

Мĕлкипе пĕрле хир тăрăх
Утнă майăн умĕнче
Çаплипех тăрать Макаров,
Коммунист, Митюк пичче.

Малашне Иван шăмшакĕ
Пулмалли вирпе ыраш
Акăнман чухнех присяга
Тытнă вăл, Митюк юлташ.

Халăхсен çулпуçĕ Ленин
Хурçă броневик çинче
Тăнă чух—ăна итленĕ
Питĕрте Митюк пичче.

Малашне Иванăн кусĕ
Пулмалли кăвак çеçке
Шăтиччен Макаров çӳçĕ
Варçăра шуралнă-çке.

Парти хушнипе Макаров
Коммунист, матрос-салтак,
Вăрçăран килет, патваррăн
Тытăнать ĕçе ялта.

Ӳкĕте кĕртсе парать ăс,
Хускатать чĕресене,
Вăл чĕнет Советшăн харăс
Çапăçма чăвашсене.

Йыхăрать матрос хăвачĕ
Çамрăк ирĕк çĕршыва
Сыхлама, анчах шур гварди
Çаклатать Макарова.

Хĕнесе ăна тĕпченĕ
Шуррисем—чунне çĕнме
Пултарман пăшал кӳпчекĕ,
Саламат, тискер тĕрме.

Кутсăр-пуççăр çил уланă
Вăхăтра, хура çĕрле,
Тĕрмерен ăна кăларнă—
Пемелле, вĕлермелле...

Чĕринчи сӳнми кăварлă
Вăйă-халĕ пур таран
Кĕрешме Макаров тарнă
Çарамас, çара уран.

Ĕлĕкхи пекех Макаров
Утнă тепĕр эрнерен,
Пăхăнман юман пек сывлăх
Инкеке те чир-чĕре.

Чухăн халăхăн тăванĕ,
Ырă çын, Митюк пичче
Калани тăрать Иванăн
Асĕнче, шухăшĕнче.

Чи малтан чăваш букварĕ
Тытнă çул, пĕрре, кĕрпе,
Вăл пырса нумай калаçрĕ
Шăкалти ачасемпе.

Иртрĕ пилĕк-ултă талăк
Вара тепĕр ирхине
Пилешрен те хĕрлĕ галстук
Çыхрĕ вăл Иван мăйне.

— Партишĕн, тăван çĕршывшăн
Хатĕр пул!—тесе пĕрре
Вăл каларĕ—юлчĕ ăшшăн
Ун сăмахĕ ĕмĕре...

— Хатĕр яланах!—Михайлов
Çирĕп сылтăм аллине
Çĕклесе нихçан манмаслăх
Салют пачĕ ун чухне.

Пачĕ те ăна манмарĕ
Çамрăк ĕмĕр тăршшĕнче.
Вăрçă хирĕнче Макаров
Тăчĕ унăн умĕнче.

Паттăр çын çинчен пĕр майăн
Шутласа сисмерĕ те
Пырса чарăнчĕ Михайлов
Чăнкă вырăнлă çĕрте.

Ир тĕтри пекех шап-шурă
Икĕ хутлă пăрахут
Ăсану йыхравĕ турĕ,
Сасă пачĕ висĕ хут.

Хумсене хӳме пек çӳлĕ
Çĕклесе çыраналла
Вăркăтсан, ун выртрĕ çулĕ
Атăл тăрăх тăвалла.

— Тут-тут-тут!—тесе кĕрлерĕ
Йăлăмри вăрман, вара
Пăрахут сасси çӳрерĕ
Каллĕ-маллĕ улăхра.

Уçă сывлăшри ту-чакăл
Хĕрринчен, çыран çинчен,
Курăнать сип-симĕс Атăл
Ту енче, анат енче.

Выртакан тĕве пек мăкăр
Хăйăрлă утрав çинче
Ӳссе ларнă шăкăр-макăр
Хăвасем лутра, çинçе.

Вăштăр-вăштăр пархатарлă
Вĕрекен вĕри çилпе
Типĕтме çакса тултарнă
Сĕреке, йĕмпе кĕпе.

Кунĕпе ĕçре ĕшеннĕ
Пулăçсен вучахĕнчен
Тĕтĕм халь çӳле çĕкленнĕ,
Курăнать вăрман çинче.

Сулхăнра татти-сыпписĕр
Сĕрлесе тăрать ӳпре,
Памасть канăçлăх, тум витĕр
Вĕтелет-çке ӳт-тире.

Пăрахучĕ—хăямачĕ
Килессе кĕтсе ларма
Килĕшмен Иван уттарчĕ
Вăтăр пилĕк çухрăма.

— Çитĕп-ха çуран та,—терĕ.
Хывса мăшăр аттине
Тепĕр хут салтса чĕркерĕ
Уринчи тăлаварне.

Кай енчи хура пăтранчăк,
Мăкăрланчăк пĕлĕте
Ерипен хĕвел пытанчĕ,
Сулхăн çапăнчĕ ӳте.

Çумăр пур,—чĕкеç те курнă,
Çавăнпа иккен хирте
Пусă тăрăх, пусă урлă
Аялтан вĕçсе иртет.

Кураксем те васкаварлă
Шăхăртаççĕ çунатне,—
Çитмелле карма çăварлă
Савнă чĕпписем патне.

Вунă çухрăм та кайманччĕ—
Çил хӳтернине кура
Пĕлĕт лаптăкĕ капланчĕ
Пĕтĕмпе тавралăхра.

Касă çумăр çитнĕçемĕн
Хулăн пĕлĕтре, хирте
Йăлтăр-ялтăр çутă çиçĕм
Сывлăша çурать çӳлтен.

Тумламсем ӳкме пуçлаççĕ.
Пăт та пат ӳксе юлсан,
Тĕтĕм тухнă пек, пăртакçă
Çĕкленсе илет тусан.

Тырă ăнтарма хăвачĕ
Пуррине хыпарласа,
Çумăр килчĕ, яра пачĕ
Чĕресрен пек чашкăртса.

Хӳтлĕхе çитсе пулмарĕ—
Халь Иванăн шоссепе
Утнă майăн шалаварĕ,
Гимнастерки те йĕпе.

Итрĕ ырă сиплĕ çумăр,
Алă вырăнне çунат
Панă пек тумтир те çăмăл,
Ӳт те çăмăл туйăнать.

Халĕ çеç хăйне çанталăк
Юриех пĕветнĕ пек,
Ешерсе выртать тавралăх
Хирĕпе, çаранĕпе.

Пĕтпĕлтĕк!—тесе пĕр майлă
Юрлакан путенене
Итлесе утать Михайлов
Малалла, хула енне.

5

Ирхине, хĕвел çĕре
Лăпкаса, çутатнă чух,
Янкăр уçă уй-хире
Уçăлма тухать Митюк.

Сулхăн сывлăмăн шăрçи
Йĕпетет атти пуçне.
Вăштăр-вăштăр ăшă çил
Хускатать кăвак çӳçне.

Ĕлĕк пулнă тип çырма.
Халĕ унăн хĕррипе
Савăнса утса пыма
Лайăх-çке ăна ирпе.

Инçетри шыва кунта
Каналпа илсе килме
Пулчĕ питĕ йывăр та,
Хĕн те пулчĕ этеме.

Тимĕр пăрăхсем çӳлте
Çирĕп юпасем çинче
Выртнине курать—пĕртте
Тĕлĕнмест Митюк пичче.

Шăрăхра машин ĕçлет,
Ырă çумăр çутарса
Пур çĕре те йĕпетет,
Ĕнтĕхме памасть пусса.

Ĕлĕкрех тыркас кăна
Пулнă типĕ çĕрсенче
Çичĕ тĕслĕн курăнать
Шыв хĕвелĕн çуттинче.

Çӳресси килет иккен
Малалла Митюк пиччен
Халăх «Улăп ту» текен
Паллă çӳлĕ сăрт çинче.

Вăрçă чух колхозлă ял
Лартнăччĕ унта вăрман.
Йывăçсем çĕкленнĕ халь
Çил арманĕпе пĕр тан.

Йăвă та таса, тӳп-тӳр
Ӳснĕ çамрăк вăрманта
Ăсансен те йăви пур,
Пурăнать пăши тата.

Инçетри тавралăхран
Атăл урлă ик пăши
Каçнă та калла кайман,—
Пĕлĕртет юман шăрши.

Выльăх-чĕрлĕхе унта
Çӳреме чарас майпа
Çавăрса чипер карта
Халĕ тытнă пралукпа.

Вăрманти хуçалăха
Çӳреме, кĕрсе тухма
Лартнă сарлака хапха,
Сак та пур ларса канма.

Чĕнтĕрле хапха тăрать.
Халĕ уçă халлĕн.
Ерипен утса тухать
Шурă тумлă Сталин.

Вăл курма килни çинчен
Телеграф хыпарĕ
Мĕншĕн-ха хаçатсенче
Халиччен пулмарĕ?..

Кун пирки кăштах малтан
Пĕлмеллеччĕ ялĕ.
Умĕнче тăрать паян
Хăй Иосиф Сталин.

— Варманта кăмăл тулли
Пулăм-ха, юлташăм,—
Тенĕ май çӳрет кулли
Питĕнче ачашшăн.

— Чăннипех те, çĕршыва
Халăх улăштарчĕ,—
Терĕ вăл, Макарова
Ăшшăн алă пачĕ.

Карттусне йĕри-тавра
Укапа тыттарнă.
Канăçусăр шухăшра
Çӳçĕ кăвакарнă.

Çулленех хаçатсенче
Курнă пек, кунта та
Аслă çыннăн уринче
Халь те сăран атă.

Сталин чĕлĕм чĕртрĕ те
Сăвăрма пуçларĕ,
Митюкпа пĕрле хирте
Утнă май каларĕ:

— Парти пана ĕмĕте
Эс, юлташ Макаров,
Çирĕп тытран та пĕртте
Аллунтан ямаран.

Илĕртсе тарать сана
Паттар ĕç хисепĕ.
Тавтапуç!—теме кана
Пултаратап эпĕ.

Сталинпа Макаров иккĕш
Чаранми калаçура
Утса пычĕç тем сарлакĕш
Тикĕс ешĕл пусара.

Чи-чи-чи,—тет шакаль-кайак,
Пĕлĕтре тари сĕрлет.
Сталин, лапкан утна майан,
Кĕпçесем татса çиет.

Юнашар вĕсем утаççĕ
Шура чулла шоссепе.
Топольсем калаçкалаççĕ
Çаталти çулçисемпе.

Пынаçемĕн, ĕнтĕ халĕ
Сĕвекрех лапам çинчен
Курана пуçларĕ ялĕ
Ешĕл йывaç айĕнчен.

Ик юпа çинчи сарлана
Сарлака хама çине
Пысак çырна, ылтанлатна—
Акашкўл—тесе ятне.

Çĕнĕ çуртсене типтерлĕ
Лартса тухна йĕркерен,
Сара хамапа виттернĕ,
Йывaç лартна килсерен.

Сталин юлташпа Макаров
Шакал-шакал калаçса
Пырса тухрĕç саванмалах
Сарлака Ватакасса.

Ĕлĕкрех пасар шавланă
Вырăнта илемлĕ халь.
Кӳлĕ пек тип-тикĕс сарнă
Хĕррине яка асфальт.

Тахçанах чиркӳ кĕрленĕ
Мăкăр сăртлă вырăнта
Лартнă пысăк çурт-правлени,
Лартнă клуб, больница та.

— Парк та турĕ пирĕн халăх,
Кӳлĕ чаврĕ тăрăшса.
Пăхăр-ха!—тесе Макаров
Чĕнчĕ Сталин юлташа.

Тимĕр карлăкпа тыттарнă
Сулхăнри парка вĕсем
Кĕчĕç те—ӳссе хăпарнă
Лапсăркка хурамасем,

Йывăçсен çăра та ешĕл
Çулçисем хушшисенчен
Çутă ӳкнĕ, вĕшĕл-вĕшĕл
Сиккелет сукмак çинче.

Йăлтăр-йăлтăр шыв фонтанĕ
Пĕрĕхет парк варринче.
Еçлĕ халăх килсе канĕ
Нӳрлĕ сывлăш ыррипче!

Гранитран чутланă Ленин
Шурă постамент çинче
Пĕр алне тăсса çĕкленĕ,
Кепка—тепĕр аллинче.

Сталин юлташпа Макаров
Çитрĕç кӳлĕ хĕррине.
Çаврака кӳлли пит тарăн
Кăтартса выртать тĕпне.

Пулăсем татти-сыпписĕр
Ушкăнпа шăва-шăва
Выляни те шывĕ витĕр
Курăнать Макарова.

Ункă пек çавра хитре
Пĕр гектар сарлакăш
Тăрă шывлă кӳлĕре
Ярăнать ик акăш.

Ĕлĕк тупнă ырă ят
Мĕскĕн чухăн ялĕ.
Акăшкӳл,—теме юрать
Чăннипех те халĕ.

Тарăн шыв, анчах пĕр катăк
Чул та паллă тĕпĕнче...
Вăранса каять сасартăк
Ыйхинчен Митюк пичче.

Сывлăш йывăр. Сивĕ тарĕ
Чĕтретет ӳтне-тирне.
Турткаланчĕ, йăтаймарĕ
Пăхăнман аллисене.

Ун çине темле капмаррăн
Йывăр лав ӳпленнĕ пек,
Антăхса сывлать Макаров
Кăкăрĕ хĕстернипе.

Пысăк ĕмĕтпе вăл халĕ,
Лайăх курчĕ тĕлĕкре.
Ĕçлесси тата сахал-и?
Вăйĕ кĕрет-шим нӳр çĕре?

— Шыв!—тесе пĕрре каласшăн
Тăрăшать, чĕлхи пĕртте
Хускалмасть Митюк юлташăн,
Вăйĕ çук пĕр чĕптĕм те.

## 6

Хамăр савнă Шупашкарăн
Илемне сăввăмсенче
Эп пĕрре çеç мухтамарăм,
Çырăп халь те ун çинчен.

Чан çапа-çапа кӗрленӗ
Чиркӳсем Шупашкарта.
Хушӑран лаша кӗçеннӗ,
Вӗркеленӗ йытӑ та.

Урӑх шав пулман. Шӑп ларнӑ
Емӗрсем хушши хула.
Ехреме чӑваш турттарнӑ
Курӑс хуп та мунчала.

Чӑвашри чӑх какаланӑ
Çаврака çӑмартана
Çеливан хуçа ӑсатнӑ
Тинӗс урлӑ Лондона.

Йӑлтӑр-йӑлтӑр сӑрлаттарнӑ
Ылтӑн хӗрессем çинче
Чавкасем çуллен-çул ларнӑ
Виçӗ ӗмӗр тӑршшӗнче.

Авалхи тӗнче мерченӗн
Курӑнса тӑмасть мана.
Ун пирки çынсем тӗпченӗ,
Çырнӑ та чылай кӑна.

Академик е профессор
Ятне тивӗç этеме
Тӗл пулсан, хӗле пӑхмасӑр
Хывӑп эп шӗлепкеме.

Авалхи чӑваш тымарӗ
Йӗррине историнче
Шыраканӑн пархатарӗ
Пултӑр пысӑк томсенче!

Пӗлмелле, анчах архивӑн
Тусанне сирекене
Юрамасть манма çӗршывӗ
Çулсерен çӗкленнине.

Кайбулка çыранӗ урлӑ
Каçсанах, лапам çинче
Кӗххӗм-кӗххӗм кив культурлӑ
Пӗр этем хӑй çуртӗнче

Пурӑнать, тарса пытаннӑ
Ҫынсенчен, тулти шавран.
Паянхи куна вӑл маннӑ,
Ҫиессе кӑна манман.

«Чӑвашра пулни-пулман-и
Кӗтерне майра патша?—»
Вӑл тӗпченӗ, чакаланнӑ
Ҫаюра пек тӑрӑшса.

Пӗр канми татти-сыпписӗр
Тӗрмӗшет, анчах та шел—
Архиври тусанӗ витӗр
Курӑнмасть ӑна хӗвел.

Тӗпчекен ҫынна йӗр юлнӑ
Ӗлӗкхи юмахсенче.
Кӗтерне чӑнах та пулнӑ
Пирӗн Атӑл хӗрринче.

Ҫичӗ-сакӑр ут кӳлтернӗ
Ылтӑнлӑ урапипе
Майрухха патша вӗҫтернӗ
Аслӑ Сӗнтӗр ҫулӗпе.

Вӑл апат чыхса тултарнӑ,
Ҫавӑнпа, тӳсмен енне,
Ҫветтуйла патшамӑр ларнӑ
Лапсӑркка юман айне.

Малалла чӑваш юмахӗ
Ҫаласа парать ҫакна:
«Кӗтерне патша юманӗ»
Тенӗ ҫакӑ юмана.

Кӗтерне патша сӳтернӗ
Пирӗн халӑх ӳт-тирне,
Хӗрхенмен, анчах типтерлӗ
Тытнӑ хӑй суя ятне.

Вольтерпе ҫыру ҫӳретнӗ,
«Культурлянд» Европӑра
Ырӑ ҫын пек чиперлетнӗ
Хӑй ятне чее майра.

Çав майра патшах кастарнă
Чăвашсен чĕлхисене,
Ним словарьсĕрех хăварнă
Чи матур этемсене.

Кăвакал пекех ан ишчĕр
Сĕм аваллăх кӳллинче
Тĕпчекен çынсем!
Радищев
Пулнă çак урамсенче!

Вырăс халăхĕн мухтавĕ—
Пушкин курнă ку çĕре,
Шăнкăр-шăнкăр шăнкăравĕ
Янăранă пĕкĕре.

Аслă Горький те çӳренĕ,
Вăй-питтиллĕ яш чухне
Чăвашпа пĕрле çĕкленĕ
Пристаньре тиевсене.

Шупашкар чăваш çĕршывĕн
Тĕп хули пулни çинчен
Çырнă Ленин— ячĕ сывă
Пурăнать чĕресенче.

Тĕнчене Ильич декречĕ
Тухнă хыççăн Шупашкар
Сарăлса çуллен çĕкленчĕ
Ватă мар, тĕрексĕр мар.

Ашшĕпе пĕрле Михайлов
Пĕчĕк чух çак хулана
Кĕркунне пĕр килсе кайнă
Кăçатсем сутма кăна.

Лăчăр-лачăр шĕвĕ пылчăк
Лăчăртатнă вырăнта
Вăл курать паян сасартăк
Ешĕл йывăçлă сада.

Ун чухне пĕр автор çырнă
Пьесăна лартни çинчен
Сарлака афиша пулнă
Пĕр урам кĕтессинче.

«Вĕлтĕрен» тесе каланă
Пысăк саспаллисене
Качака пырса вуланă,
Пулнă критик вырăнне.

Вăл кышланă та, сухалĕ
Вĕлтĕртетнĕ çил çинче.
Сĕтел çи пек такăр халĕ
Шупашкар урамĕнче.

Сисĕнет хула хăвачĕ,
Курăнмасть паян кунта
Лешĕ кивĕ пьеса ячĕ,
«Дай зайду!» столовăй та.

Ушкăн-ушкăн йывăç урлă
Курăнать ăна çап-çут
Советсен тăвата хутлă
Капăр çурчĕ, шурă çурт.

... Кĕмелле Иван Михайлов
Обкома ĕçпе, юри,—
Темĕнле именнĕ майлă
Кăрт тапса илет чĕри.

Кăн-кăвак кавирĕ тăрăх
Вăрăм çеç коридорпа
Ерипен утать Михайлов
Вĕтĕ-вĕтĕ утăмпа.

Хуп-хура сăран тыттарнă
Алăка уçсан, кĕме—
«Секретарь»—тесе кăтартнă
Сылтăмри пĕр пӳлĕме.

Каç енне çăмха пек кайнă
Хĕвелтен ӳкен хитре
Çутăра курать Михайлов
Хĕрĕхри секретаре.

Ватă мар, анчах пăртакçă
Кушăрканă питĕнче
Хĕлĕхсем пекех выртаççĕ
Пĕрĕнчĕк йĕрсем çинçе.

Ылтăн сăр сапса тĕрленĕ
Хашакри портретĕнчен
Чăррăн пăхрĕ аслă Ленин,
Кепка—унăн аллинче.

— Мĕнлерех ăнса пыраççĕ
Сирĕн ĕçĕр-хĕлĕрсем?—
Тенĕ евĕр курăнаççĕ
Унăн хĕсĕк куçĕсем.

Секретарь:—Килти пек пулăр!—
Тет хăйман Михайлова.
Чи малтан-çке питĕ йывăр
Пуçласси калаçăва.

— Эпĕ лармăп,—тет Михайлов.
Тусĕн сывлăхĕ çинчен
Каласа пама хăюлăх
Хускалать кăмăлĕнче.

Ивана итленĕ майăн
Секретарь блокнот çине
Тем çырать—ĕçпе нумайăш
Кĕрсе тухнă ун патне.

Пĕрĕнчĕк сăн-пичĕ тăрăх
Шухăш иртрĕ, вăл вара
Ивана калать:—Макаров
Итлемерĕ вăхăтра.

Курортра сывал-ха, терĕм
Вăрçă чух нумай хутчен.
Вăл пĕрре те килĕшмерĕ
Хăпăнма колхозĕнчен.

Вăрçă иртрĕ те, çĕнтерĕп
Эпĕ хамăн чир-чĕре,—
Терĕ вăл, итлес темерĕ
Яхăнне те вăл пире.

Кунсерен имшер вăй-халĕ
Пĕтнине йăлтах манса,
Кĕтрĕ вăл çĕнтернĕ халăх
Колхоза таврăнасса.

— Тухтăра чĕнер те халĕ
Самолет ярса парар.
Вилĕмрен çăлар. Сывалĕ...—
Трубка тытрĕ секретарь.

Ик алли çине таянчĕ
Ырнă евĕр секретарь:
— Вăл чăнах ĕçре кăварччĕ.
Вутлă ĕмĕр вăрăм мар.

Сӳнчĕ çын,—тесе каларĕ,
Ивана тĕпченĕ пек
Тинкерсе пăха пуçларĕ
Пысăк сырă куçĕпе.

— Пĕтĕмпех-и е курмалăх!—
Секретарь унтан ыйтать.
— Пĕтĕмпех!—тесе Михайлов
Вырăнтан сиксе тăрать.—

Тĕтĕм те, кăвар та çулăм
Кайтăр, пĕттĕр-ха вĕçсе!
Уй-хире туртать хул-çурăм,
Тытăнас килет ĕçе.

Секретарь юлташ, пуласшăн
Эпĕ халь ялта кăна.
Яланах тăпра тавраш ĕ
Илĕртсе тăрать мана.

Манăн полк та ман бригада
Халĕ сирĕн аллăрта.
Сирĕн умăрта ниçта та
Эпĕ ямăп хам ята.

Вăрçă хирĕ евĕр халĕ
Курăнать ем-ешĕл хир.
Ялхуçалăх генералĕ,
Секретарь юлташ, эсир!

Çирĕпрех тытсан—пыратчĕ,
Пулăшсан тата аван,—
Терĕ те Иван чыс пачĕ
Хăй сисмесĕр ăнсăртран.

— Генерал пулма епле-ши?
Ҫилӗшес эппин, пулас.
Лайӑх тырӑ ӳстересшӗн
Ҫапӑҫма эпир хавас.

МТС хире хастаррӑн
Кӗрлесе тухсан кӑна
Ҫӗклеме пулать пӗр каррӑн
Колхоза—пехотӑна.

Аслӑ вӑрҫӑ хыҫҫӑн пирӗн
Сахалрах машинӑсем,—
Куҫлӑх витӗр секретарӗн
Чӑрр пӑхаҫҫӗ куҫӗсем.—

Халь республикӑн ялавӗ
Ленин орденлӗ, хитре...—
Терӗ.—Йӑн-йӑн шӑнкӑравӗ
Сасӑ пачӗ пӳлӗмре.

Секретарь кӑшт ҫеҫ итлерӗ,
Хучӗ трубкине калла:
— Самолет та хатӗр,—терӗ,—
Врач та тухнӑ халь ҫула.

Ҫамрӑк тусӑм, хыпаланӑр
Хӑвӑртрах тухса кайма.
Хулана килсен, ан манӑр
Ман пата кӗрсе тухма.

Ав, «Победа» килсе ларчӗ.
Кӗтесре, лере. Ҫӑвак,—
Тенӗ майӑн алӑ пачӗ
Секретарь Михайлова.

* * *

Шупашкар аэродромӗ
Темиҫе гектар ҫӗре
Йышӑнать—ҫеремлӗ умӗ
Ешӗл куракӑлӑ, хитре.

Ҫитсенех, ларать Михайлов
Ватӑ тухтӑрпа пӗрле.
Самолет кӑшт чупнӑ майӑн
Ҫӗкленсе каять ҫӳле.

Хĕллехи пекех сип-сивĕ
Сывлăшран выртать янках
Курăнса чăваш çĕршывĕ
Хирлĕ, сăртлă, сарлака.

Вăрманпа тĕке ту-чакăл
Хĕррипе авкаланса
Тăсăлать-çке анлă Атăл
Кĕмĕл юхнă пек таса.

Самолет нумай каймарĕ,
Сехет те вĕçмерĕ пуль,
Курăнса тăма пуçларĕ
Ик çыранлă Акăшкӳл.

Хĕррине хура çĕленĕ
Траурлă ялав пĕччен
Вĕлкĕшет колхоз правленин
Пысăк çурчĕ тăрринче.

7

Савнă тусăм, вулаканăм,
Тантăш-туссемпе пĕрле
Эс пĕрер кайса курман-и
Атăл леш енне çĕрле?

Шухă пулă çăтăл-çатăл
Сикнĕ чух, тӳлек чухне,
Қаçхине лăпланнă Атăл
Қантарать этем чунне.

Хумсенче чӳхеннĕ хыççăн
Вăй пырса кĕрет ӳте,
Сăвăпа чăп тулнă пуçăм
Шухăшсăр тăмастъ пĕртте.

Ун чухне телейĕм аслă,
Питĕ пысăк иккенне
Ман калас килет хаваслăн
Халăха, юлташсене.

Қаçхине хире хура сăр
Хупласа илсен, кунта
Қилчĕç уçăлма профессор,
Хĕрĕ те, Михайлов та.

Çитсенех Иван тип вутă
Пуçтарать хăвалăхра.
Тĕттĕм сывлăш витĕр çутă
Ялкăшать вучах тавра.

Хӳтĕри çăра хăвалăх
Хĕрринче профессора
Вăлтине яма-мĕн лайăх
Тĕксĕм тарăн авăра.

Ивана вăлталлă хулă
Илĕртет, анчах çĕрле
Утмалла паян Людмила
Юнашар, унпа пĕрле.

Сукмакпа Людмила таччăн
Пынă чух çап-çутă каç
Аллинчен сăпайлă каччă
Ниепле те тытаймасть.

Қалаçас, анчах тем мурĕ
Чĕлхене тытса тăрать,
Те хăюлăх, те культурă
Çитеймест?.. Чĕри тапать.

Вăрçăра тем те пĕр курнă,
Хăраман, усман пуçне,
Çитмĕл çичĕ вилĕм урлă
Вăл сиктернĕ хăй танкне.

Вăтанман вăл пысăк влаçлă,
Чаплă ятлă çынсенчен,
Қонев маршалпа калаçнă
Одер шывĕ хĕрринче.

Шăкăл-шăкăл та тирпейлĕ
Қалаçма вĕренмелле.
Эх, çитинччĕ ун телейĕ
Юрату текен тĕле!

Вăл кăларнă çил те тăвăл
Вăрçăра, анчах паян
Хăяймасть пăхса илме вăл
Çумĕнчи хĕре куçран.

Çапăçу çинчен Михайлов,
Хĕрача Мускав çинчен—
Каласса утаççĕ лайăх
Иккĕш Атăл хĕрринче.

Аякран пăхать хăяккăн
Касăк уйăх çур унки.
Атăла хĕрпе Иванăн
Тăсăлса ÿкет мĕлки.

Тытасса хĕр кĕтнĕ пулĕ,
Кĕтнĕ пулĕ вăрахчен.
Хăй ярса илет Людмила
Ивана хул айĕнчен.

Тайăнса утать, çиçеççĕ
Куçĕсем—çиçеççĕ те—
Çÿçĕ пĕрчисем лекеççĕ
Кăтăклана пек пите.

Каччă чунĕ вĕриленнĕ
Хĕр алли кăвар кăна.
— Мускава васка, вĕренĕн...
Ӳкĕтлет хĕр Ивана,—

Театра кайса çÿресчĕ
Иккĕн ак çапла пĕрле,
Ярăнса пĕрре иртесчĕ
Сивĕ пăр çинче çĕрле.

Савăнса каясчĕ иккĕн
Кăнтăра, унта вара
Çил вĕрмен чухне тип-тикĕс
Тинĕс выртĕччĕ умра.

Ху çуралнă вырăн халĕ
Килĕшет сана, анчах
Ку йăла пĕрре çухалĕ
Чĕрÿнтен яланлăхах.

Йывăр та, кичем те пулĕ,
Кăмăлу вĕри чухне—
Мускава васка!—Людмила
Чăмăртать Иван алне.

— Эх, Людмила, ырӑ тусӑм,
Мускавра эпир пурте
Пулнипе кашламӗ пусӑ,
Тырӑ ӳсмӗ уй-хирте.

Ҫакӑ ял хама ӳстернӗ
Иккенне манатӑп-ши?..
Хӑй патне мана чӗнтернӗн
Туйӑнать тӑпра шӑрши.

Ӗненсем мана, Людмила,
Этемсем ӗҫленӗҫем,
Ҫакӑ ҫӗр ҫинче те пулӗ
Кавказри пекех илем.

— Ӗненетӗп,—тет Людмила,—
Тепӗр хут, тӗл пуличчен
Сансӑр йывӑр пулӗ, пулӗ
Мускавра мана кичем.

Шурӑмпуҫ ҫути тымарӗ
Сапаланнӑ пӗлӗтре.
Улӑха шӑва пуҫларӗ
Атӑлтан ҫӑра тӗтре.

Тепӗр кун васкавлӑ пуйӑс
Хӗрпеле профессора
Илсе кайрӗ—йывӑр туйӑм
Юлчӗ ҫамрӑк каччӑра.

Станциpен утма-ҫке кансӗр,
Юн сахал пек чӗрере.
Эй, ҫилсем, ҫитсе вӗркелӗр,
Йӗкӗр ҫивӗтлӗ хӗре!

Юратун сӳнми хӑвачӗ
Темӗн пек вӑйли ҫинчен
Пӗлнӗ гварди лейтенанчӗ
Ёлӗкрех романсенчен.

Унӑн сӑнчӑр пек йӗвенӗ—
Халь хӑйне тытса ҫӳрет.
Ивана хӗрпе ҫӳренӗ
Лӑпкӑ каҫ аса килет.

Тӳпене пӑхать Михайлов,—
Шурӑ пӗлӗт тӳпере
Кайнӑ хӗрӗн ҫӳҫӗ майлӑ
Курӑнать ӑна хитре.

8

Чуна епле ҫеҫ илӗртмест тӑван тавралӑх!
Окопсенчи йӳҫ тӗтӗм шӑршинче
Шинеллӗ арҫынсем тӑват ҫулталӑк
Шутланӑ ун хура тӑпри ҫинчен.

Ҫурхи шывсем иртсен ҫанталӑк ӑшшӑн
Пӑхса тутлатнӑ куштӑркка ҫӗре
Вӗсем сиктернӗ ал ҫинче ачашшӑн,
Хирпе ялне те курнӑ тӗлӗкре.

Килтен вӑрҫа ҫыру килсе ҫӳренӗ,
Тӑван хирти тӑри юррисене,
Тӗвик текерлӗк сассине ҫитернӗ
Ӗҫе юратакан салтак патне.

Салтак тырра хӗрхенессе хӗрхеннӗ,
Анчах та вӑрҫӑ-харҫӑ хирӗнче
Ӑна таптанӑ, ӳкерсе ҫӳренӗ,
Окоп та чавнӑ унӑн пуссинче.

Атака иртсенех салтак куляннӑ,
Аттисене хывса силленӗ те
Мӑнтарӑн тыр пӗрчисене хӑварнӑ
Акса кӗрлев шӑпланнӑ уй-хирте.

Ҫапла иртсе каять тӑват ҫулталӑк,
Канми кӗтсе тӑран тӑван ялне
Пырса кӗрес чухне шинеллӗ халӑх
Йӑваласа илет аллисене.

Кӗҫтет хӗрӳ ӗҫлесшӗн алтупанӗ,
Хаярлӑх иртнӗ. Ҫитнӗ лӑпкӑ кун.
Йӑмра ҫинче курак-чавка куран-и,
Ӑна пеме те каламасть саккун.

Ӑпла иккен, этем ялта, уйра та
Екки ярса куллен тарламалла!
Ҫулсем ҫинче таканлӑ кирзӑ атӑ
Сукмак хывать хирте кӑҫал ҫулла.

Ҫăкăр чĕлли ҫинчи тăвар пек халĕ
Тӳпе тулли ҫут ҫăлтăр ҫăп-ҫăра.
Ҫăвак ҫутпа этем сасси хускалĕ,
Выртаймĕ пусă тутлă ыйхăра.

Ҫатма ҫинчи пекех вĕри ҫанталăк
Тăр кăнтăрла хĕртсе пĕрет пĕрче.
Ирех вырса пыма иккен каҫалăк
Нӳрленĕ сивĕ сывлăм айĕнче.

Атакăри танксем пекех комбайн
Кĕрлеттерсе ҫĕкленĕ сас-шава
Итлес килсе тăни хирте пĕр майăн
Ҫанма памасть Иван Михайлова.

Машин сахал-ха халлĕхе—вĕсемсĕр
Халь ывҫăн кăчăрт-кăчăрт вырмалла.
Вăрҫма вĕреннĕ халăх тиркемесĕр
Шăллантарса алла тытать ҫурла.

Ĕшеннĕ сурăхсем канса выртаҫҫĕ
Сап-сарă пусăра, теме пулать—
Чăн ылтăн евĕр курăнса лараҫҫĕ
Нумай ҫĕмел те майрапуҫ, сурат.

Автан яшки ҫинчи ҫу пек сар тырă
Тиенĕ йывăр кăрмансем ҫинче
Ларса пырса хĕрсем юрлаҫҫĕ юрă,
Вĕсен юрри ҫӳрет уй-хирсенче.

Митюк пичче вилсен, колхозлă халăх
Суйланă Ивана ун вырăнне.
Нимле майпа та сиреймен Михайлов
— Суйлас!—тесе кĕрленĕ сассене.

Ыраш вырма хĕрсе пуҫланă хыҫҫăн
Иван пулман-ха хăйĕн килĕнче,
Тумне йӳле ярать те ҫара пуҫăн
Каҫчен тарлать каҫалăк умĕнче.

Килет ĕшеннĕ хыҫҫăн тутлă ыйăх.
Тӳшек пек кăпăш курăк ҫийĕнче
Выртан ҫынна пăхать ачашшăн уйăх,
Ҫӳрет каҫ ҫилĕ ҫӳҫĕ хушшинче.

Яра кунах ырни те питĕ лайăх,
Юрать пуçелĕк вырăнне кĕлте.
Нимле те тĕлĕксем курми Михайлов
Пĕвне тăсать те çывăрать хирте.

Ирхи хĕвелĕн йăмăхнă тымарĕ
Пир тĕртнĕ евĕр карăннă чухне
Иван хăйне анаслама памарĕ,
Сиксе тăрас пулать ура çине.

Тĕтреллĕ аслă улăха анать вăл,
Çири тумне алхапăлтах хывать,
Çерем çине хурать, çăмха пек çăмăл
Сиксе çыран çинчен шыва чăмать.

Ишсе киленнĕ хыççăн ун вăй-халĕ
Вылять ырса курман пек паттăрла.
Ыраш вырса пĕтернĕ те, ак халĕ
Вăл сумка çакнă, таврăнать яла.

Малтан пăхса илсен, пĕртте чечекĕн
Выртмасть те илĕртмест кунти тĕнче.
Ниçта та курмăн йытпырши чечекĕ,
Кăвак çеçке те пусă хушшинче.

Поэтсене çырма кичем те пулĕ,
Анчах та эпĕ шăпчăклă садра
Çӳренĕ пек утатăп—сарă тулă
Хитре поэмă пек выртать умра.

Сĕтел çине сĕткенлĕ шур кулачă,
Кĕрхи хуплу та лартасса туйса
Хаваслă вăйăм ăшăмра хускалчĕ,
Хăватăм çирĕплетрĕ ман сасса.

— Уяр çанталăк ĕçшĕн питĕ майлă.
Канми вырасчĕ шăрăх кунсенче,—
Тесе сар тулă пучахне Михайлов
Сиктерчĕ алтупанĕ çийĕнче.

Урам сас-чӳсĕр пушă. Пĕтĕм халăх
Хирте тара ӳксе ĕçленипе
Савса чупас пекех утать Михайлов,
Пырса кĕрет колхоз правленине.

Курать унта пуçне чиксе пĕчченçĕ
Ларан Ковалева,—Симук пичче,—
Тесе ăна хисеплесе чĕнеççĕ
Ватти те, çамрăкки те ял çинче.

Яка хура костюм, çап-çут атти те
Пĕрре те ватă кăтартмасть сăнне.
Сырса çӳренĕ, халĕ ĕнтĕ çитĕ
Мухтав теме чăваш çăпатине.

Камит сынсем пĕтсе çитмен чăвашăн,
Ырлаççĕ çĕтĕк-çатăк лăстанка.
Хăтланкалать çăпатана мухтасшăн
«Венера» колхозри Ильин Лукка.

Вĕр-çĕнĕ çăпата сырса каппайчăк
Пырса ларать район пуххисене,
Юри кăтартмалла иккен сасартăк
Тăсса хурать вара урисене.

Çăпатана мухтав юрри шăратнă
Шупашкарти мăнтарăн нăй-нăя
Пĕлетĕп эпĕ тахçанах. Мĕн ятлă?
Çырсан—сăмах тути каять сая.

Çырма чарса çăпан тухса пӳрлентĕр
Ун пек поэтăн пуç пӳрни çине!
Ман халăхăм хитре тумпа çӳретĕр
Хуласенче, хирте те ялсенче!

Симун пиччен ури пусмасăр юлнă
Пĕр шит тăпра та çук-тăр хирĕнче.
Митюк Макаровпа вĕсем хăюллăн
Пĕр таччăн пынă йывăр çул çинче.

— Пĕр кар тăрса ĕçлесчĕ, халăх!—тенĕ
Вĕсем, коммунистсем, малтан ялта,
Килтен-киле çӳренĕ, ӳкĕтленĕ,
Тимленĕ çирĕм саккăрмĕш çулта.

Уесĕнче ик паттăр çыннăн ячĕ
Тухма пултарнă ун чухне палла.
Вĕсен вĕри сăмахĕсен хăвачĕ
Хускатнă, чĕннĕ, йыхăрнă яла.

Ыйха манса канми-тăми çӳренĕ
Симун пичче Макаровпа пĕрле,
Пуçланă, кунсерен пăхса ӳстернĕ
Уесĕнчи пĕрремĕш артеле.

— Кунта ларса, ачам, тинке юлмарĕ,
Хăлха йăлтах янрарĕ шавсенче,—
Чăнах та тарăхса чунтан каларĕ,
Михайлов кĕрсенех, Симун пичче.

Куллен ян-ян туса тăрать правлени
Канма памасть пĕрре те телефон.
Аçта Михайлов халь? Тухса тарман-и?
Ялта пулма йăли те çук-и ун?

Сана çапла чĕнет пĕрре инструктор,
Райком, райисполком. Итле те лар!
— Ялта пушар пулсан та хăвăрт пытăр!
Ик-виç хутчен каларĕ секретарь.

Сана, ачам, ĕçрен тартма хăймарăм,
Выртартăр, терĕм, уярта тырра.
Темле сăлтав та тупрăм эп, мăнтарăн,
Суйма та пĕлтĕм хам ватта кура.

Хăйсем килте, пире пыма хушаççĕ
Вара чуптар унта е тух та ут!
Тырра чĕлхесемпе кăна выраççĕ,
Лараççĕ те куллен çыраççĕ хут.

Çанталăк шанкăрах уяр пулин те
Чĕнеççĕ паянах темле канашлăва.
Унта ура явса ларатпăр ĕнтĕ,
Ĕçлес чухне пуратпăр сас-шава.

Ун пек çĕрте ларса пĕверĕм писнĕ,
Каяр!—сиксе тăрать Çемун пичче.
Кӳмеллĕ тăрантас килсе те çитнĕ,
Тăра-парать правлени умĕнче.

Лаша, мăйне çири пĕкки пек авăк
Тытса, хум евĕр ярăннă чухне
Иван яштах сиксе анать сасартăк,
Татса илет пĕр тулă пучахне.

Чупса хуса çитсе ларать Михайлов,
Пучах йăваласа чылай пĕрче
Ковалева парать:—шăлпа çыртса пăх!
Мĕнле пек туйăнать, Симун пичче?

— Пĕрчи, ачам, шак хытнă,—терĕ лешĕ,—
Паян-и е ыран-и çил пулсан,
Тырра инкек-синкек пырса илешĕ,
Тип улăм çеç хăварĕ ăнсăртран,

Йĕпе чухне район пурне те чĕнтĕр!
Ĕçлесчĕ халĕ шăрăх кунсенче!—
Тесе шĕвик çеç шăхăрать шăл витĕр,
Тилхепине туртать Симун пичче.

9

Тахçан авал пуян сутуçă
Лартса хăварнă кирпĕч çурт.
Шалта нӳрелнĕ сывлăш уçă,
Вĕри те мар, янкар та çук.

Чӳречерен пăхсан, çăп-çăмăл
Туйса илетĕн эс хăвна.
Ыйха кайса тĕтресĕр Атăл
Выртать пĕр хумсăр шăп кăна.

Пĕр пысăк пӳлĕмре лăк халăх
Тăрса, ларса та тулнине
Курах каять Иван Михайлов,
Сисет йӳç тĕтĕм шăршине.

Ниçта пырса ларма çук вырăн,
Тăма та пуш кĕтес юлман.
Пĕри калать:—Малган эс çырăн,
Кайран вара выля, Иван!

Сĕтел çинче чăнах пур шахмат,
Выляççĕ шашкăлла тата.
Ĕç-хĕлсĕр чух çӳре те шахвăрт,
Пуçна пăртакçă ват кунта!

— Ăнман вăййи чуна кăларчĕ
Шутар-ха ферзине, Иван!—
Михайлова парса хăварчĕ
Çăка-касси çынни пукан.

Пур пирĕн ырă секретарĕн
Ялан хăйне кура йăла:
Ĕçрисене пĕрер-пĕрерĕн
Чĕнтермелле, калаçмалла.

Ĕнер вăл заводран чĕнтернĕ
Начальникре тăрансене,
Хăшне ятланă та çиленнĕ,
Тата мухтанă хăшпĕрне.

Колхозсенчен пур председатель
Паян çул тытнă райкома.
Яра кунах кĕтсе ларма пĕл—
Тивет чăнах та тарăхма.

Михайлова нумай кĕтме хĕн,
Вăййи каймарĕ кăмăлне.
Ыттисенчен малтан Кирюхин
Ăна чĕнтерчĕ хăй патне.

Вăрман хушши пек сулхăн, канлĕ
Чылай çеç пысăк кабинет.
Хуллен Кирюхин каллĕ-маллĕ
Кавир çинче утса çӳрет.

Аллисене хыçне вăл тытнă,
Пуçне лашт уснă йывăр пек.
Мĕн шухăша-ши тарăн путнă,
Е лекнĕ-ши ăна инкек?

Хăйне ытла та аслă майлă
Тытма тăрать-и секретарь?
Пĕрре те ăнланмасть Михайлов,
Ыйтса пĕлме те лайăх мар.

Кирюхин хыттăн алă пачĕ,
Анчах ямарĕ аллине,
Михайлова вăл лартрĕ тачă
Хăйпе пĕрле диван çине.

— Сума сусах каймастăн эсĕ,
Кĕрсе тухмастăн райкома.
Сана тытса илсе килес-и,
Çыхса лартас-и калаçма?..

Сана миçе хутчен кăна-ши
Чĕнтертĕм эп, анчах ялтан
Килмерĕ пĕр хыпар тавраш.
Пуçна ан каçăрт эс, Иван!

Куллен кунах ларатăп эпĕ,
Килсе кĕрсе каякансен
Кунта çук шучĕ те хисепĕ,
Темле те кăлтăк пур çынсен.

Канма та çук. Кунти хуралçă
Автанĕ виççĕ авăтсан
Ыйха каятăп эп пăртакçă
Кунти диван çинчех, Иван.

— Сăлтавăр çук-ха тарăхмалăх,
Эсир ан ятлăр-ха мана!—
Тесе пӳлсе хурать Михайлов
Калаçакан Кирюхина.—

Эрне ытла ялта пулмарăм,
Çĕрле эп уйăх айĕнче
Салтак пек çывăрма юратрăм
Тӳшек пекех çерем çинче.

Кабинета хупса хăварăр,
Хутсем çырма пăрахăр та
Курма та калаçма чуптарăр
Пĕр-икĕ кунлăх ман пата.

Тара ӳксе ĕçленĕ хыççăн
Ырман пек туйрăм хам ӳте.
Пылран та тутлă сывлăш уçă
Тăрать, Вадим Ильич, хирте.

Тăпра айне пытарнă турăх
Сире çитерĕп эп малтан.
Пуçелĕк пулĕ ешĕл курăк,
Тӳшек те—ешĕл курăкран.

Пĕрре те вăранми пĕр авăк
Вилес пек хытă çывăрсан,
Тул çутăлнă чухне сасартăк
Сиксе тăма питех аван.

Тӳпе хура, анчах ачашшăн
Епле хитре юрлать тăри.
Вадим Ильич, пĕрре тархасшăн
Пырса курсамăр-ха юри!

— Пырса тухма нумай сăлтавĕ,
Анчах машина ваннă-ха.
Пыма пултарĕ ун юсавĕ
Сахал тесен те уйăха.

«Улпут»,—тесе Иван шутларĕ,
Қаларĕ лăпкă сасăпа:
— Вадим Ильич, сире начар-и
Леш шăлтăр-шăлтăр урапа?

— Эс тусăм, питĕ тĕлĕнтертĕн,
Çӳренĕ ĕлĕкрех. Çитет!
Апла çӳренĕ секретарĕн
Пулать-и халь авторитет?

Çуран та танккаттарăн эсĕ
Секретаре ялтан яла.
Йытта харкаштарса иртес-и,
Туя тытас-и хам алла?

Райком çыннин авторитетчĕ
Мĕнле çӳрениниче те пур.
Çири тумтирĕпе сехечĕ,
Сăн-пичĕ пултăр ун матур.

Çитет ялта лармa сана та,
Ĕçлесчĕ, тусăм, сан кунта?
Инструктор пуласса шанатăп,
Халех чĕнетĕп хам пата.

Асту, Иван, çуран уттармăп,
Сана герой тесе чăнах
Çӳретĕп яланах шăп та шăп
Таса машинăпа анчах.

— Сире, Ильич, чи пысăк хапăл,
Анчах та пысăк вырăна
Ларма туртмасть-ха манăн кăмăл,
Ялта та вырăн пур мана.

Ялта тимпех ĕçлес-ха лайăх,
Пулас-ха халăх хушшинче
Хăна пек мар,—тесе Михайлов
Сиксе тăрать диван çинчен.

Леш пӳлĕмре çынсем шавлаççĕ
Тăрать йӳç тĕтĕмĕн шăрши.
Вадим Ильич çаплах калаçĕ,
Тул çутăлсан пушанĕ-ши?..

Ҫаç пулнă. Бакенсем йăл та йăл
Туса çунаççĕ инçетре.
Йăлтах иккен пытаннă Атăл
Ҫăра та шурă тĕтрере.

10

Виçĕ кун ларусенче
Пулчĕç иккĕн те пĕрле,
Иванпа Симун пичче
Чуптараççĕ килелле.

Акăшкӳлĕн утине
Тутанмаваскать лаша.
Ҫапăнмарĕ çурăмне
Тилхепе чупма хушса.

Ҫăпăшка çемçе тусан
Ларнă яп-яка çулпа
Шавласа пырать аван
Шăлтăр-шăлтăр урапа.

Ҫаяйманччĕ сухрăм та
Иванпа Ҫемен пичче:
Ушкăн хĕр те, арăм та
Хирĕç пулчĕ çул çинче.

Вĕсем пĕчĕк урапа
Сĕтĕреççĕ тăрăшса.
Ҫолхозра апла майпа
Сикнĕ-тухнă тамаша.

Ҫирĕм çын ытла чее
Куç хĕссе илеççĕ те:
Сутмалли нумай чие,—
Теççĕ пĕр саспа пурте.

Акăшкӳл колхозĕнчен
Çирĕм çын—хĕрпе инке—
Тăкăс ĕçлĕ кунсенче
Хусана каять иккен.

Ĕнсене те хыçмалли
Пушă вăхăт çук чухне
Чиепе хăмла çырли
Хĕретет аллисене.

Пасарта вĕсем сутса
Лăпкă ларнă чух апла
Кам пĕтерĕ-ши вырса
Шăкăрт типнĕ сар тулла?

Шăмарса Иван чĕри
Хытă тапнă тĕлсенче
Çухăрать сысна çури
Çӳлĕ ларкăч айĕнче.

— Кунĕн-çĕрĕн салăпа
Шурă çăкăр пултăр сан!—
Старике хаяр саспа
Каласа хурать Иван.

— Ан çилен, Иван, мана,—
Тархаслать Симун пичче,—
Зоотехник шуйттана
Пачĕ хăй кантурĕнчен.

Пилĕк уйăх фермăра
Çитерме, пăхма тивет.
Çитĕнсе çитсен вара
Хăй хуçи килсе илет.

Çĕр çăтманĕ çурине
Пăхмасан та юрамасть.
Ярса илнĕ аллине
Зоотехник пысăк влаç.

Виçĕм çул «Венерăри»
Председатель, леш Лукка,
Килсе лекрĕ районри
Акăш-макăш тамăка.

Зоотехник ыйтнине
Вăл туман пĕррехинче.
Лешĕ хăйĕн çиллине
Вăрттăн тытнă чĕринче.

Вăл ăратлă вăкăра
Чирлĕрех тесе ялтан
Илсе кайнă та вара,
Йăлăнсан та, тавăрман.

Колхозри хĕрарăмсем
Луккана пĕрре ирпе
Хупăрланă, çиленсен,
Хулăпа, кĕвентепе

Пилĕкрен те çурăмран
Ислетсе хĕнес чухне
Хăраса Лукка аран
Ӳкĕтленĕ çынсене.

— Карантинлă чирĕ пур,—
Зоотехник вăкăра
Тата тепĕр уйăх çур
Тытса тăнă районра.

Мур илесшĕ, чул чĕре
Хурлантарнă çынсене.
Тăрса юлнă хĕсĕре
Колхозра чылай ĕне.

Йĕксĕк çыншăн халь сысна
Ӳстерме тивет иккен.
Эпĕ, ватă тăмана,
Тупрăм хам валли инкек.

Манăн çакă нăрике
Çухăртса çӳретиччен
Кивĕ çĕтĕк кĕрĕке
Йăваласчĕ,—тет Симун.

— Зоотехник умĕнче
Тăпăр-тăпăр ташласа
Илĕн-ха, Симун пичче,—
Тет Михайлов йăл кулса.

Шупашкар енче тӳпе
Ҫăпăкланнă пек шап-шур
Витĕнет пĕлĕтсемпе
Ҫумăр килĕ—паллă пур.

Вăштăр-вăштăр сулхăн ҫил
Авкалать хирте тырра,
Ҫул ҫинчи тусан кĕҫҫи
Ҫĕкленсе илет вара.

Ерипен пыра-киле
Хĕррисем хуралнăҫем
Йăмăх хĕрлĕ хĕвеле
Хупăрлаҫҫĕ пĕлĕтсем.

Ковалев тилхепене
Хăвăрт-хăвăрт туртнипе
Талпăнса лаша килне
Вĕҫтерет-ха сиккипе.

Ҫиҫĕм йĕпписем ванса
Тирĕнеҫҫĕ пĕлĕте.
Халĕ ĕнтĕ тап-таса,
Сывлăш ҫăмăл уй-хирте.

Урапа ҫинчен сикет
Вăркăнса сысна ҫури.
Курăнать те вĕлтлетет
Тулăра кайри ури.

Хутаҫа асав шăлпа
Ҫурнă ларкăч айĕнче.
Лекрĕ ĕнтĕ асапа
Ҫул ҫинчех Симун пичче.

Хăямат нăрик-нăрик
Пусăра чупса ҫӳрет.
Макăрас пекех старик:
Чух-чух-чух!—тесе чĕнет.

Пăлхантарчĕ Ивана
Ҫакă пĕчĕк тамаша,
Пачĕ ҫилĕллĕ чуна
Ҫилĕ тепĕр хут хушса.

Пусăра пĕр-ик хăлаç
Вырса лартнă пĕр сурат.
Пĕр этем те курăнмасть.
Ванчăк жнейка çеç ларать.

Ак Михайлов сумкине
Çĕклесе пĕрре çапать,
Çиллипе, тӳсмен енне,
Кăшкăрса çапла калать:

— Пĕтĕм хир уярланса
Тăнă шăрăх вăхăтра
Калаçса та хут çырса
Выртăмăр иккен тырра.

Килчĕ ун Кирюхина
Акăш-макăш вăрçасси.
Илтĕнсе каять ăна
Ковалев старик сасси.

Ковалев иккен çӳрет
Сарă пусă варринче.
Аслати кĕр-кĕр кĕрлет
Унăн пуçĕ çийĕнче.

Урăм-сурăм çавраçил
Ахăрса килсе тухать—
Ентĕ лекрĕн, ĕнтĕ вил!—
Тенĕ пек тулла лăскать.

Типĕ хир тусанĕнчен
Çĕкленет хура юпа,
Хир çинче те çул çинче
Çаврăнать хаярланса.

Юмахри шуйттан йĕки
Кăлтăр-кăлтăр пынă пек,
Çавраçилĕн çук йĕрки
Пĕр инкек кăна, инкек.

Юпасем иккен нумай
Ашкăнса килеççĕ те,
Ах, лăскаççĕ урнă май
Ылтăн пек тулла хирте.

Çавраçил те, çумăр та
Çапса тăкнă тырпула
Юхтарса каять таçта,
Энĕше те Атăла.

Мăйăр евĕр шултăра
Сив пăрсем ăна ниçтан
Çапăнман пек, шухăшра
Пуç усса тăрать Иван.

Çумăр ĕнтĕ инçетре.
Юлчĕ ишлĕк тул пусси.
— Чух-чух-чух!—тесе тепре
Илтĕнет старик сасси.

Çаплипех Иван тăрать.
Йĕпенсе шăнсан та ун
Ӳт-тирне кăварлатать
Çиллипе хускалнă юн.

Çынсене чĕнме пĕлет
Леш Кирюхин райкомра,
Лӳпперле ларса çӳрет,
Савăнать машинăра.

Унăн пуçĕ çиййĕнче
Лăпкă пулмĕ-ха ялан,—
Ишлĕк тулă умĕнче
Шухăша каять Иван.

Пысăк вырăнти çынна
Хирсенче курас килет.
Халăх хушшинче кăна
Çĕкленет авторитет.

11

Фермăри ĕçчен кĕтӳçĕ
Паллă çын, Кирук пичче.
Тĕссĕрленнĕ хура çӳçĕ
Çу хута хĕвел çинче.

Мĕскĕн мар кĕтӳçĕ халĕ,
Ыттисем пекех матур.
Уявра çакма медалĕ
Килĕнче Кирукăн пур.

Хăй ятне вăл хисепленĕ,
Тытнă пысăк тивĕçре,
Çирĕм çул ытла ĕçленĕ
Колхозри кĕтӳçĕре.

Сăнарпа та вăл, тумпа та
Кĕнĕ ятлă çын шутне.
Çумăрта—ун сăран атă,
Путинкке уяр чухне.

Каçсерен тăм тивнĕ курăк
Шаниччен, кĕркуннеччен,
Çӳретет ĕне те сурăх
Кĕтӳне Кирук пичче.

Тутăх тимĕр пек хĕрелĕ
Вĕрене çулçи, вара
Курăк та хăрса вĕтелĕ,
Пушă пулĕ улăхра.

Ун чухне вара кĕтсе тăр—
Акăшкӳл енне пăхса
Пысăк вăкăр тапхăр-тапхăр
Мĕкĕрет çĕре чавса.

Выльăхсем валли карта та,
Витесем те пур кунта.
Фермăра ĕçлет бригада
Вĕççĕр-хĕрсĕр, çу хута.

Янракан хыртан пуранă
Виçĕ пӳлĕмлĕ пӳртре
Кирука та вырăн панă,—
Пурăнма таса, хитре.

Пĕлĕтре хĕвел йăлхахĕ
Карăнса хĕреличчен
Сывăрма çитмест йăлхавĕ—
Вăранать Кирук пичче.

Ыйхăран хĕрсем тăраççĕ,
Тăхăнаççĕ шур халат.
Матурсем ĕне сăваççĕ.
Ăшă сĕт шăрши тухать.

Пурлăх кĕввине çĕр чĕлĕх
Кĕрлесе каланăлла
Кĕпĕр-кĕпĕр выльăх-чĕрлĕх
Антăлать улăхалла.

Сывлăм ӳкнĕ курăк тутă,
Çавăнпа пулас юри
Ташласа чупать пăру та,
Çухăрать сысна çури.

Кĕтĕве çӳретнĕçемĕн
Улăх кайтăр ян та ян—
Шăхличне Кирук пиччемĕр
Тунă селĕм хăмăшран.

Туй кĕвви те юрă-çемĕ
Шăхличре кĕрленĕ чух
Лайăхрах пек çĕр илемĕ,
Савăнать пек пĕтĕм чун.

Туйăнать çынна пĕр харăс
Пур хаваслăх килнĕ пек.
Лайăх вăхăт! Тăрăс-тăрăс
Сиккелет кăтра путек.

Тин кăна хĕвел çĕкленнĕ,
Йывăçсен тăррисене
Шĕл-кăвар пекех хĕретнĕ,
Вут пăрахнă шыв çине.

Янкăр усă кун хăй тĕллĕн
Шунине сисме те çук.
Яланхи пек ĕçлĕ-хĕллĕ
Тимленсе çӳрет Кирук.

Хăш ĕнен пур йăптăх çăмĕ—
Хырчăкпа хыра-хыра
Пăрахма та алă çăмăл,
Çӳреме ансат ура.

Хир пыйти текен çумкурăк,
Куршанак-и сурăха
Çакланни ан пултăр урăх,
Пултăр çăм тени паха!

Кӑнтӑрла ытла та шӑрӑх,
Хӗрнӗ сывлӑш пӗҫерет.
Пӑчӑхса анранӑ выльӑх
Йывӑҫсен айне кӗрет.

Лапсӑркка ҫӑра турачӗ—
Хураман,—ун айӗнче
Тӑсӑлса канса выртатчӗ
Месерле Кирук пичче.

Анаслу килсе тӑратчӗ...
Улӑх варринчи ҫулпа
Кунталла килсе кустарчӗ
Шӑлтӑр-шӑлтӑр урапа.

Шӗлепки сап-сарӑ улӑм,
Вӗлкӗшен кӗпи шап-шур
Чӑннипех, атьсемӗр, унӑн
Пысӑк ҫын сӑнарӗ пур.

Тӑрантас ҫинчен ал-хапӑл
Васкаса сиксе ансан,
Кӑкарса ҫыхса хурать вӑл
Лашана пӗр туратран.

Сахӑр пек шур шӑлаварӗ,
Галстук ҫӗмӗрт пек хура.
Тӗрӗслесшӗн килнӗ мар-и?
Йӑнӑш ҫук-ши фермӑра?

Тӗпчени аван, ҫӳретӗр—
Сукмакпа килекене
Тӗл пулма Кирук пиччемӗр
Турткаларӗ кӗпине.

Аллине ачаш парасшӑн
Тӑрӑшать Кирук пичче,
Шӑлӑнать, тӑпра тавраш
Ҫук-ши алтупанӗнче...

Килнӗ ҫын алне памарӗ,
Паллашмарӗ хӑямат.
Тарӑхма Кирук начар-и?
Унӑн пур хисеплӗ ят.

Фермăри Ķирук кĕтӳçĕ
Умĕнче каппайланма
Лешĕн пур калкан пек çӳçĕ
Урăх ним çук мухтанма.

Хăвăртах Ķирук палларĕ
Зоотехник иккенне,
Ун çине пĕртте пăхмарĕ,
Тытрĕ кирлĕ пек хăйне.

— Ķовалев илсе килмер-и
Фермăна сысна çури?—
Терĕ леш, ларас темерĕ,
Ķансĕрлет тумтир шурри.

— Пĕр начальник парса янă
Пĕр çура Ķовалева.
Çул çинче çак выльăх тарнă,
Путнă çумăр чух шыва.

Леш начальник кăтартасшăн
Хăйĕн намăс çуккине.
Пултăр уншăн сысна ашĕ,
Килтĕр ун çатми çине!

Ķун пирки Иван каларĕ,
Пухура тустарчĕ-çке.
Мĕнешкел кăна хăртмарĕ
Ăçтиçук начальнике.

— Тĕрлĕ йĕксĕк, лĕнчĕр-лĕнчĕр
Пысăк кашăкпа çиме
Ķолхоза тек ан çӳреччĕр—
Намăс ун пек этеме!

Харама тăрантмĕ халăх
Тăрăшса ĕçле те пуй!—
Терĕ вăл, Иван Михайлов,
Ылтăн çăлтăрлă герой.

Партире тăмастăп эпĕ.
Ватă çын, анчах хама
Çăтă пыр шутне кĕртес-и?
Юрамасть апла пулма.

Коммунист тени вăл маншăн
Халăх чунĕ, аслă чыс,
Паллă ĕнтĕ, эс, юлташăм
Тахçанах-тăр коммунист?

— Унсăрăн епле çӳресшĕн
Эсĕ пысăк ĕçсенче.
Пĕлтĕр кĕтĕм,—терĕ лешĕ,
Тухрĕ халь сасси çинçе.

Килсенех сасси кĕрлетчĕ
Нӳхрепре калаçнă пек.
Фермăри кĕтӳç систерчĕ:
Лекмеллех ăна инкек.

— Хальхинче манран хăрарĕ,
Ватă çирĕк айĕнче
Вĕрентем,—тесе шутларĕ
Ăшĕнче Кирук пичче.

— Пĕлтĕр эс парса хăвартăн
Колхоза пăру пăхма.
Çиессӳ килет-мĕн санăн
Çу та, турăх та хăйма.

Çуркунне кăçал пăрушăн
Илсе кайрăн пĕр ĕне.
Эх, лекинччĕ манăн пушă,
Эх, сĕвинччĕ сан тирне!

Пĕлтĕр аллă чĕп хăвартăн
Фермăна, вара кайран
Аллă самăр чăх суйларăн,
Илсе кайрăн колхозран.

Эсĕ ан кулян тархасшăн—
Леш çура вилмен шывра.
Вăл курортник пек ачашшăн
Пурăнать «Венерăра».

Çук иккен çынна сасартăк
Пĕлесси, пĕрре пăхсах.
Кам-ха эсĕ? Аппаланчăк,
Шурă тумлă вăр-хурах.

Партире тăратăн эсĕ
Ахалех, суя чунпа.
Ман пĕрре пырса кĕрес-и,
Қалаçас-и райкомпа?

Партире тăма пĕлмерĕн.
Тăрăн эсĕ суд умне,—
Терĕ те Қирук силлерĕ
Вăрăм пушшăн аврине.

Вăл пĕрре шĕвик те хытă
Шăлĕ витĕр шăхăрсан,
Қустăрма хӳреллĕ йытă
Сикрĕ тухрĕ вăрмантан.

Çăмламас йытти хăрушă,
Хĕрлĕ ункă куçĕнче.
Яр шăвать çĕлен пек пушă
Ват кĕтӳçĕ хыçĕнчен.

12

Қолхоза машин ирпе
Çитрĕ, пĕр çынна хăварчĕ.
Ешĕл ял урамĕпе
Çакă çын хуллен уттарчĕ

Туйипе сулса илет.
Вĕçкĕнни таçтан та паллă
Пуçĕнче—кăвак берет,
Аттисем кĕске кунчаллă.

Пĕчĕк татăк мăйăхне
Шĕпĕн пек кăна хăварнă,
Пӳрнисен чĕрнисене
Хĕрлĕрех сăрпа сăрланă

Пĕр кача пӳрни вара
Вăрăм шĕвĕркке качаллă.
Хăш енче, хăш таврара
Мерекке этем çуралнă?

Вăл туйин кукрашкине
Чутласа йыт пуç ӳкернĕ.
Кунашкал пуканине
Кам пăхса апла ӳстернĕ?

Малтанах пăртак тăхтар,
Çырасси тата нумай-çке.
Вырăс та мар, чăваш мар,
Вăл хăйне «совсем незнайски».

Вăл, Ильин Лукка ачи,
Вăтăртан та иртнĕ каччă.
Паллă пулĕ ялĕнчи
Этемсем кăларнă ячĕ.

Ашшĕ-амĕш килĕнче
Ылтăн чун, пĕртен-пĕр ывăл,
Пулнă вăл—тӳшек çинче
Ачашлан та тутлă çывăр!

Вăл ялан канфет ыйтса
Амăшин чунне кăларнă,
Памасан, куççуль тăкса
Кĕтессе ларса юнтарнă.

Çинĕ чух вăл аллинчен
Кашăкне юри ӳкернĕ,
Амăшне урайĕнчен
Темиçе хутчен илтернĕ.

Вăл сăлтавсăр макăрса
Кĕпине сасартăк çурнă,
Минтерне те вăркăтса
Сирпĕнтернĕ пуçĕ урлă.

Ӳснĕçем пыра-киле
Амăшне куллен йĕртернĕ.
Яланхи чипер киле
Инкексем илсе çитернĕ.

Ялĕнче тăвата класс
Вăл аран-аран пĕтернĕ.
Малалла мĕскер тăвас?
Йытсене куллен хӳтернĕ.

Хăй вăйне яман сая,
Яланах ялта танкканă,
Шĕшкĕрен хитре туя
Каснă та яка чутланă.

Итлемен çын сӑмахне,
Утнӑ вӗçкӗн каçӑр пуçлӑ,
Автансен урисене
Тӳрӗ пенӗ те шарт хуçнӑ.

Каччӑ çитнӗ вунçичче,
Пӗр мӑскал хӑйне пухман ӑс.
Ашшӗ ун, Лукка пичче,
Илнӗ ун валли хуткупӑс.

Вӑл калануӑ купӑсне,
Вӑйӑ халӑхне ташлатнӑ.
Ир енне пахчасене
Пытанса кӗрсе çаратнӑ.

Çакӑ сапӑр чун хӗвне
Кишӗрпе хӑяр тултарнӑ,
Йӑранра юлнисене
Урипе ирсе хӑварнӑ.

Вӑл çӗрле апла-капла
Ашкӑнса кӑна çӳренӗ,
Ыйхӑ тупнӑ кӑнтӑрла,
Лӑпкӑ çывӑрма вӗреннӗ.

Ёçлесе курман пирки
Каччӑ ӳснӗ лӑнчӑр-ленчӗр
Ашшӗ-амӑшӗ тинки
Тухиччен ёçре тертленччӗр.

Яланах нумай пылак
Çинӗрен тесе калаççӗ,
Шӑлӗсем иккен муртак,
Шӑкӑртах ӳкме пуçлаççӗ.

Шӑлӗсем малти пурте
Ылтӑн пулччӑр, йӑлтӑртатчӑр—
Укçине тупма килте
Ашшӗ-амӗш чупкалаччӑр!

Ывӑлне Ильин Лукка
Хӗрхенсе пӑхма юратнӑ,
Икӗ сурӑх, пӗр така
Сутнӑ та шӑлсем ларттарнӑ.

Анăçман ачаш ачи
Çирĕмрен те ĕнтĕ иртнĕ.
Пĕринче вырма çинчи
Шăрăх сывлăш хытă хĕртнĕ.

Кăчăрт-кăчăрт çурлапа
Ĕçлесе çынсем тарланă,
Килсене ачапчапа
Ват çынна кăна хăварнă.

Ачасем ларман ахаль,
Шурă хут çĕлен вĕçтернĕ.
Каччă çын—хайхи кахал
Ялĕнче лӳппер çӳренĕ.

Вăл ытла кичем пирки
Шăкăр-макăр чул пуçтарнă,
Пенĕ майăн хум унки
Пĕвери шывра кăларнă.

Вăл кĕпер таврашĕнче
Шапана курса киленнĕ.
Тăрă авăр тĕпĕнче
Лешĕ ларнă, мекĕрленнĕ.

Пусăран килсе çынсем
Кĕперпе иртсе çӳренĕ,
Çурласен те сенĕксен
Мĕлкисем шывра чӳхеннĕ.

Сарă тырăллă хиртен
Таврăнса хĕрсем кĕрленĕ,
Ыйтса пĕлнĕ Васлейрен:
— Мĕн шыратăн эсĕ?—тенĕ.

— Ха, шапа!—тесе кахал
Пӳрнипе тăсса кăтартнă.
Çакăн хыççăн пĕтĕм ял
Çĕнĕ ят туртса кăларнă.

Çĕнĕ ят малтан кӳрше
Култарса чылай çӳренĕ,
Каярах ял виртлешсе:
— Хашапа Васлейĕ,—тенĕ.

Хашапа тăкман тарне,
Çăкăр çеç чыхма пултарнă,
Вут çуртарнă ашшĕне,
Аттине те тасаттарнă.

Ваттисем:—Ачаш ача
Вăр тăвать,—тесе каланă.
Хашапа вĕри мунча
Килĕнче хутма шутланă.

Ĕçлемесĕрех телей
Çĕр çинче ансат тупасшăн
Шухăшлать иккен Васлей—
Ĕнсе хыçтăр ырă ашшĕ!

Ашшĕ хăйсен ялĕнче
Лавккара сутуçă пулнă.
Укçине пĕррехинче
Арчана чиксе вăл хунă.

Лешĕ çăрине çĕрле
Вăтăрса ватса кăларнă,
Кăмăл туртнă еннелле
Систермесĕр тухса тарнă.

Ывăл чăн та мунчине
Хутнă та, шартлатнă чулĕ:
Çунă ашшĕ-амăшне
Сĕлтĕ мар, хăйсен куççулĕ.

Пулнă тахăш çĕрсенче—
Ташкентра-и, Çĕпĕрте-и?
Вун çулталăк хăй çинчен
Пĕлтермен Лукка Васлейĕ.

Пулнă вăл чылай çĕрте,
Вăрласа та леккеленĕ,
Халĕ парикмахерте
Пăрахут çинче ĕçленĕ.

Вăл туя сулса утать.
Хăйĕн ялĕ, кур та савăн!
Унăн ĕнтĕ урăх ят,
Çĕнĕ ят—Базиль Красавин.

Хирелле кайма Лукка
Васкаса çисе ларатчĕ.
Уçрĕ-хупрĕ алăка
Каçăр пуçлă вĕçкĕн каччă.

— Папа, папочка, привет!—
Тет Базиль, анчах та ашшĕн
Чĕринче çилли килет
Ĕнсерен пĕрре парасшăн.

— Пĕр юпа та юлмиччен
Тĕп тăвасшăн килтĕн эсĕ!—
Тет Лукка. Сĕтел çинче
Тăр чĕтрет уйран чĕресĕ.

Тăр чĕтрет Ильин Лукккан
Аллипе пĕрле сухалĕ;
Чĕтресе ларать пукан,
Умĕнчи сĕтел те халĕ.

— Папа, прошлое забудь!—
Ашшĕн чĕрине халь савăл
Çапнă пек пĕр-икĕ хут
Каласа хурать Красавин.

Тĕпелте тӳссе тăма
Инкене ытла та йывăр,
Лăпкă пурнăçа пăсма
Килнĕ йĕксĕк, килнĕ ывăл.

— Аçупа та чăвашла
Калаçмастăн мар-и эсĕ?
Вĕрентес тесе алла
Турчăка ярса илес-и?

Кăкăр ĕмĕртрĕм сана,
Сăпкара сиктертĕм эпĕ.
Кайрĕ çил çине кăна
Ашшĕ-амăшĕн хисепĕ.

Хам сĕтпе пĕрле чĕлхе
Эп сана савса парсаччĕ.
Эс ăна ĕмĕрлĕхе
Мантăн-и, анра мулкачă?

Виçĕ пус укçа çумран
Ӳкнĕ пек, тăван чĕлхемĕр,
Халăхăн чĕлхи, паян
Ӳксе юлчĕ-и, атьсемĕр?

Чăвашран кулма кăна,
Чăвашла манса кайма та
Илтĕн-и эс, тăмана,
Кĕп-кĕске кунчаллă ată?

Ată тупнă, ăс пухман,
Намăсу таçта çухалнă.
Паянах çухал куçран!
Эп сана тахçан ылханнă.

Халăха эс ан тирке!
Ун куçне ан сур, каппайчăк!—
Тарăхса калать инке,
Макăрса ярать сасартăк.

— Не понятно. Все забыл!—
Терĕ лешĕ, пăлханмарĕ,
Çинĕ тейĕн тутлă пыл,
Чĕлхипе кăна çуларĕ.

Кӳтсе çитнĕ çиллине
Ашшĕ ĕнтĕ тӳсеймерĕ,
Шурă сĕтлĕ кашăкне
Хăй умне тытса силлерĕ.

Вăл тарларĕ, çиллесле
Пăхса илчĕ, уткаларĕ,
Сĕтелли çинчи чĕлле
Кăтартса хаяр каларĕ:

— Эс çакна ăста çиме,
Чăвашла ун пур-и ячĕ?
Эй, кала!—тесе пеме
Ашшĕ кашăкпа хăмсарчĕ,—

Эсĕ маннă. Эй-эй-эй!
Çăкăра та маннă, йĕксĕк!
Çамкунтан пама, Васлей,
Пур ман судам, пур ман ирĕк!

— Ме!—тесе Лукка пичче
Қашӑкпа пӗрре тыттарчӗ
Кашӑкки урайӗнче
Чӗлпӗр-чӗлпӗр сапаланчӗ.

Аллинче аври кӑна
Юлнӑ ун—чышма юратчӗ
Тариччен Красавина
Ҫухӑртса илме пулатчӗ.

Хӗнеймен пирки Лукка
Тарӑхса кайса лач сурчӗ.
Пурччӗ кукӑр турчӑка,
Йӗтӗрпе ухват та пурччӗ.

Алӑка уҫса тарма
Памасан, аван пулатчӗ,
Ӗмӗр тӑршшӗ асӑнма
Ывӑлне Лукка паратчӗ.

Чи малтан ӗнерсӗре
Ураран ӳкермеллеччӗ,
Утланса ларса пӗрре
Питӗ хытӑ хӗртмеллеччӗ.

Йывӑҫ кашӑк тытиччен
Йӑтмалла уйран чӗресӗ...
Мӗншӗн-ха, Лукка пичче,
Маларах пӗлмерӗн эсӗ?

Хӗнесси килет Лукҡан,
Ҫавӑнпа татах кулянчӗ,
Хӑй сисмерӗ, ӑнсӑртран
Ик чышки те чӑмӑртанчӗ.

13

Ҫӗр кӗске пулать ҫулла
Вылямa та савӑнма.
Ҫамрӑк-кӗрӗм вӑй-кулла
Тухнӑ аслӑ урама.

Ирхине ирех тӑрса
Ӗҫлеме кайма тивет.
Иртӗ юрӑ юрласа
Хӑвӑртах ик-виҫ сехет.

Вӑйӑ хыҫҫӑн урамра
Савнӑ каччӑпа хӗре
Ҫӳресе калаҫура
Савӑнма ҫӗрле хитре.

Ҫӗр кӗске. Ыталаса
Калаҫса тӑрас чухне
Ҫӗнӗ кун кӑвакарса
Ҫутатать ял урамне.

«Вӑштӑр-вӑштӑр ӑшӑ ҫил
Вӗркелет»—тесе юрра
Вӑйӑ тӑснӑ чух Базиль
Пӑхкалать йӗри-тавра.

Вӑл итленӗ май шырать
Чи чипер сасса кӑна,
Чӑннипех хайхи тупать
Ытарми Ваҫлиссана.

Ваҫлисса тесен ялта
Ҫамрӑк каччӑн юн тапать,—
Калаҫсан—унпа тата
Калаҫас килсе тӑрать.

Ҫамрӑк хӗр сӑнар енчен
Туртнӑ паттӑр Митюка—
Акӑшкӳл хӗрӗсенчен
Пуринчен те яштака.

Вӑйӑ ҫаврӑннӑ чухне
Хӗр ҫумне Базиль тӑрать.
Унӑн хытӑ аллине
Вӑл тытать те чӑмӑртать.

Ашшӗ кашӑкпа ҫапса
Лартнӑ пысӑк мӑкӑльне
Пытарма вӑл антарса
Пусса лартнӑ беретне.

Уйӑх аннӑ. Тӗттӗмре
Хуралса ларать пур кил.
Ҫулӑхать чипер хӗре,
Ӑсатма шутлать Базиль.

Нумаях та аякка
Каяйманччӗ—Васлисса
Питӗнчен ăçтиçука
Тыттарать çатлаттарса.

— Я люблю,—тесе калать
Каччă ял та илтмелле.
Хӗр кулать те хӗр тарать
Хăвăрт-хăвăрт килнелле.

Ашшӗ кашăкпа çапать,
Хӗр—сулмаклă аллипе.
Пуç усса утать Базиль
Акăшкӳл урамӗпе.

Вăл хăрать килне кайма,
Халӗ пыр та кӗр кăна—
Ашшӗ лартӗ асăнма
Тепӗр мăкăль çамкана.

Шавсăр ялăн урамне
Каллӗ-маллӗ темиçе
Хутласан, çăлкуç шывне
Пăхрӗ вăл чылай ӗçсе.

Тарăхни иртмест шывпа,
Кăкăра çаплах касать,
Кам пулин те, «Хашапа»
Ят парас пек туйăнать.

— Ман çире ӗлккен çи-пуç,
Пăсăк мар сăнарăм та.
Эпӗ мӗншӗн-ха пӗр тус
Тупаймарăм ик ялта?..

Мăшкăл çеç курма капла
Хăнана нихçан ан кил!—
Чăннипе мăнтарăнла
Каласа хурать Базиль.

Тухайса çитмен хӗвел,
Çутă сапнă тӳпене.
Кӗпӗрленнӗ кӗтӗве
Йышлă сурăх та ӗне.

Урамра хура тусан,
Хӳхӗм тумлӑ этеме
Ҫансӗр кун пек вӑхӑтра
Ҫаллӗ-маллӗ ҫӳреме.

Ҫовалев колхоз ҫуртне
Ҫилнине курсан, Базиль
Пӗр канса ларма хӑйне
Тупрӗ вырӑн, тупрӗ кил.

Ун ҫинчен те кун ҫинчен
Иккӗш ларчӗҫ калаҫса.
Вӑл пӗрре те хальхинче
Ҫаламарӗ чун уҫса.

Хӑй Лукка ачи тесе
Пӗлтермерӗ, Хусантан
Ҫилнӗ, имӗш, вӗҫтерсе,
Ҫанма, имӗш, ял аван.

Ашшӗ, имӗш, ун якут,
Ҫӗпӗрти ҫӗрме пуян.
Ашшӗн икӗ хутлӑ ҫурт,
Икҫӗр аллӑ пуҫ пӑлан.

— Ҫолхоза кӗмен-и-ха?—
Тишкӗрет Симун пичче.
— Пӗр пӗччен хуҫалӑха
Лайӑх пирӗн ҫӗрсенче.

Ҫӑвӗн-хӗлӗн шурӑ юр,
Ҫӑвӗн-хӗлӗн сивӗ ҫил,—
Пӗр суйман пекех матур
Ҫалаҫма чухлать Базиль.

Ӗненмест старик, анчах
Мӗншӗн пӳлӗн вӗҫкӗне?..
Ҫӑмӑл ӑслӑ ҫын суйсах
Ҫантарма пӗлет чунне.

Нимӗн те кышламасан,
Шӑл ӳсет—шӑши вилет,—
Тесе йӑнӑш каламан,
Халӑх ӑслӑ. Вӑл пӗлет.

Суяканăн та пулать
Чун апачĕ суйăинче,—
Шухăша кайса ларать
Ковалев, Симун пичче.

Килнĕ çын сиксе тăрать,
Пĕчĕк çеç чăматанне
Васкаса пырса лартать
Кĕтесри сĕтел çине.

Чăннипех те пултарать,
Акă тепĕр самантран
Вăл тытать те шутарать
Ковалев умне пукан.

Вăл утать, вĕтеленет,
Хатĕрлет ăна-кăна.
— Ырă çыннăм, лар-ха,—тет,—
Чиперлетĕп сухална.

Пилĕк паллă министра,
Çирĕм виç начальнике
Эпĕ хырнă. Мускавра
Ман ăсталăх паллă-çке.

Юратса касман пирки
Сухалу сухал та мар.
Кивĕ кантăр лăстанки.
Кăвакарнă. Чăп-чăпар.

Курака йăва тума
Кас та пар! Анчах унтан
Тăвăп эпĕ савăнма
Чăн сухал пĕр минутран.

Пулăн эс вара, пичче,
Как культурный человек,
Çӳрĕн халăх хушшинче
Абессин королĕ пек.

Вĕçкĕн çын калаçнăçем
Кăчăрт-кăчăрт тутарать,
Хĕрхенсе тăмасть çӳçе,
Çинчĕк улăм пек тăкать.

Ун хаччи тăнлав çинчен
Пуç тӳпи çине куçать.
Хăраса Симун пиччен
Çурăм тăрăх тар тухать.

Ку шуйттан темле король
Сăнлă тăвăп, терĕ те,
Мăшкăла кăларчĕ пуль,
Пăсрĕ пуль сăнпа пите...

Хăй çине пăхса илме
Куçкĕски çук умĕнче.
Мĕншĕн кун пек этеме
Шанчĕ-ха Симун пичче?..

Акă ĕнтĕ бритва та
Ĕнсене те янаха
Якатать—Базиль кунта
Хăй чапне кăтартĕ-ха.

Сухала мулкач хӳри
Чухлĕ пĕчĕк хăварсан,
Алăка чăри-чари
Çухăртса кĕрет Иван.

Чип-чипер Ковалевран
Пулса тухнă меракке;
Лĕпкинче кăна аран
Юлнă çӳçĕ те кĕске.

Çаплипех ĕçлет Базиль,
Пăхкалать Иван çине:
— Эпĕ тупрăм çĕнĕ стиль.
Куртăн ĕнтĕ хитрине.

Мăн сухаллăччĕ мучи
Картинри пек пулчĕ халь.
Пĕлекен этем хаччи
Касрĕ-лартрĕ çĕн сухал.

Абессин королĕ пек
Курăнса ларать старик,
Ватă мар. Çӳре хĕрпе!
Вăйăра ташла та сик!

Ун ҫине Иван хаяррăн
Шăнарса пăхса илет:
— Кив тĕнче ҫўппи, мăнтарăн,
Мухтанни сана ҫитет!

Эс, пахча мĕлки пек каччă,
Ĕҫлессӳ килменнипе
Тытнă кăчăрт-кăчăрт хачă
Ҫинҫешке пӳрнӳсемпе.

Халиччен ялта аванччĕ,
Ҫукчĕ шав, анчах паян
Йытăсем вĕрни пуҫланчĕ
Ирхине, тул ҫутăлсан.

Сан аҫу Ильин Лукка
Шыраса ҫӳрет сана.
Тух та шăвăн аякка,
Упрама пĕл эс хăвна!

Сурăх куҫĕ пек медаль
Ҫамкуна тата тепре
Лартиччен—тармашкăн халь
Ҫул яка та ҫул пĕрре.

Темĕнле король ятне
Илтсе мăшкăл куриччен
Хальтерех пытан килне
Эсĕ те, Симун пичче!

Ял ҫинче хыпар-хăнар
Тухиччен тӳрлет сăнна.
Ывăлна чĕнсе хыртар
Сухална та мăйăхна.

Сар сăран чăматанне
Тытнă та Базиль утать,
Ку енне те леш енне
Шикленсе пăхса пырать.

Чăркăш ашшĕ ăнсăртран
Курасран хăранипе
Лĕпкипе ури таран
Пĕвĕ-сийĕ ун йĕпе.

Шурă шăкăр-макăр чул
Сарнă аслă çул çине
Вăл васкавлăн тухнă чух
Лăпкă пек туять хăйне.

Икĕ çухрăм та çуран
Каяйманччĕ вăл—çулпа
Килсе тухрĕ хыçалтан
Шăлтăр-шăлтăр урапа.

Шĕлепкеллĕ çын ларать,
Чĕнпе сӳс тилхепине
Хăвăрт карт туртса чарать
Айăра Базиль умне.

— Акăшкӳл енчен-и эс?—
Тăрантас хуçи тĕпчет.
— Манăн мĕншĕн пĕлтерес?
Эс камне пĕлес килет.

— Сик те лар! Пĕрле пире—
Лайăх пулĕ,—леш сĕнет,
Тилхепи вĕçпе пĕрре
Лашине тивсе илет.

Çул çинче пăртакçă çил
Кăларса чупать лаша.
Зоотехникпе Базиль
Кайрĕç хăвăрт туслашса.

Иккĕш килчĕç çул çинче
Пĕр кĕвве те пĕр шава,
Вăрçрĕç кăмăл туличчен
Ильинпа Михайлова.

14

Таврара тăрать сап-сарă
Тумтирпе кĕрхи тĕнче,
Кĕр-кĕрлет колхоз пасарĕ
Ялсенче, хуласенче.

Çуркунне хирсем илемлĕ—
Чечексем нумаййипе.
Савăнтарĕ кĕр сĕтелĕ
Пысăк кукăль ларнипе.

Самăр хурăн-кăвакалăн
Мамăкланнă тĕкĕнчен
Минтерсем тăваççĕ халĕ
Инкесем çак кунсенче.

Çав минтер çине хуратăп
Шухăш тулнă пуçăма,
Хут çине вара çыратăп
Кĕр пек мăнтăр юррăма.

Сарă тырăпа тултарнă
Тахçанах пӳлмесене.
Икеле кайма пуçтарнă
Халĕ шкул ачисене.

Грузовик ирех кĕрлерĕ,
Талпăнса вĕçет çулпа.
Йĕркипе пĕрер-пĕрерĕн
Вĕлтлетсе юлать юпа.

Грузовик нумай каймарĕ.
Çӳлĕ вырăнтан, сăртран,
Курăнса тăма пуçларĕ
Атăл леш енчи вăрман.

Пĕтĕмпе вăрман сархайнă,
Вĕрене çеç хĕрелсе,
Сӳнекен вучах пек ларнă
Çĕнĕ пăхăр пек тĕсе.

Пĕчĕк пăрахут хăвачĕ
Хашкаса сĕтĕрнипе,
Сарлака паром хускалчĕ
Кисренмесĕр ерипен.

Кĕр енне шăмарнă Атăл
Хӳтерсе килет хумне,
Тулхăрать те çăтăл-çатăл
Çапăнать паром çумне.

Шурă кăпăклă, çилхеллĕ
Чашкăрса хаяр хумсем
Каялла чакса çиллеслĕ
Тепĕр хут чупса килсен—

Пĕрчисем пиншер-пиншерĕн
Çӳлĕ сирпĕннĕ чухне
Пĕчĕк асамат кĕперĕ
Ҫарăнать паром хыçне.

Ҫаçсанах, шофёр хистерĕ
Васкатса машинăна.
Ҫыранпа паром кĕперĕ
Юлчĕ кĕр! туса кăна.

Чăштăр-чăштăр сарă çулçă
Хулăн ӳкнĕ çул çине.
Сывлăш тутлă, сывлăш уçă
Туйăнать ачасене.

Ушкăн-ушкăн, тĕрлĕ-тĕрлĕ
Йывăçсен хушшисенчен
Курăнаççĕ вут пек хĕрлĕ
Çырлисем шăлан çинче.

Çу хута ӳссе вăй-халĕ
Чакнă пек, ĕшеннĕ пек,
Кĕр вăрманĕ лăпкă халĕ,
Кăтăша каять, тӳлек.

Сивĕтет, анчах вăрманăн
Пур хăйне кура ăшши.
Сĕрĕшсе унта çăралнă
Асанне сарри шăрши.

... Яланах, кĕрхи вăрманăн
Ылтăн илемне курма
Тухсанах, ачалăх манăн
Курăнса килет ума.

Хуйăр вĕретсе пĕветнĕ
Пир кĕпеллĕ туссемпе
Эп нумай кайса çӳренĕ
Пĕчĕк шурлăх хĕррипе.

Çӳрессе çӳренĕ эпĕ
Улăхра, хирте, ялта—
Чăвашсен поэзи чапĕ
Тухнă ырă вырăнта.

Чăнкă ту çине хăпарнă.
Çул çинче ларать вăрман.
«Пĕчĕк шур»—тесе каланă
Пирĕн ял ăна тахçан.

Шуратма ĕçчен хĕрарăм
Çулсерен çерем çине
Йăрансем пек ярăм-ярăм
Кантăр сарнă кĕркунне.

Лерелле, «Ĕне масарĕ»
Тенĕ вырăн хĕррипе
Кайсанах, курма пултарăн
Силпие те пĕтĕмпе.

Иванов унта çӳренĕ,
Ырă ешĕл çуркунне
Ытарма та çук итленĕ
Шăхличи каланине.

Манăн çул ăçта пулмарĕ?
Куртăм эпĕ çур тĕнче.
Пĕр хĕрес асран каймарĕ
Манăн ĕмĕр тăршшĕнче.

Вилнине чĕррин хисепĕ,—
Тенĕ чух, пĕррехинче,
Çимĕкре тăраттăм эпĕ
Тĕмеске çерем çинче.

— Кĕçтенттин пиччӳн тăпри вăл,—
Терĕ хурлăхлăн атте.
Çавăн чух хускатрĕ тăвăл
Чĕрене, юна, ӳте.

— Шăллăм, сан ĕмрӳ пулмарĕ.
Лăпкă, канлĕ вырт!—тесе
Ман аттеçĕм ыталарĕ
Кивĕ йывăç хĕресе.

Эпĕ пĕчĕк халлĕн сисрĕм
Хамăн чун çӳçеннине.
Шăпăртатрĕ ман куççулĕм
Иванов тăпри çине.

Кĕҫтенттин пичче кăтартнă
Юрă ҫулĕпе утма
Чĕнтĕм эпĕ хам ҫунатлă
Каҥăҫусăр чунăма.

Пушкăрт хирĕнчи тиха пек
Шухă, пысăк телее
Чĕреме паратăп эпĕ
Халăха, поэзие.

Кутамас юман ӳстернĕ
Ҫăпанран чернил паха
Тунă эп, унпа типтерлĕн
Ҫырнă хаклă сăмаха.

Ленин!—тенĕ. Аслă Ленин
Чĕрене хускатнипе
Шухăшсем пуҫра кĕрленĕ
Сĕм юман вăрманĕ пек.

Чĕрере ӳстернĕҫемĕн
Пархатар икелсене
Акрăм эп чăваш поэзин
Анлă пысăк уй-хирне.

Ват юманăн пархатарлă
Ырă шывĕпе ҫырма
Эпĕ пĕчĕк чух пултарнă
Чи пĕрремĕш сăввăма...

Мăн вăрман ӳссе хăпарĕ,
Пулĕ хӳхĕм те ҫăра!..
Грузовик сасси янрарĕ
Сăрт ҫинчи юманлăхра.

Васкаса сиксе анаҫҫĕ
Ачасем машин ҫинчен.—
Икелсем пухма хутаҫĕ
Пур кашнин хăй ҫумĕнче.

15.

Тӳпе тăрать тăхлан пекех хăп-хăмăр,
Хĕвел ҫутти ӳкмест хирсем ҫине.
Иртсе кайма пĕлмерĕ сивĕ ҫумăр,
Ҫуса ҫĕре лӳшкетрĕ пĕр эрне.

Тӳпен пӗрре те ҫутӑ уҫӑ вырӑн
Пулмарӗ ҫакӑ чӑркӑш кунсенче.
Этемсене утса иртме те ыррӑн
Таса сукмак та ҫук урамсенче.

Ҫынна кичем килкартинчен пӗр утӑм
Пусмасӑр кунӗн-ҫӗрӗн ларнипе;
Вӑл выльӑх-чӗрлӗхе парать тип утӑ,
Сапать пӗр ӑскӑҫ сӗлӗ чӑх-чӗппе.

Хирте епле ем-ешӗл пулнӑ курӑк—
Аса илет те мӗкӗрет ӗне.
Кӑҫал тӑпра сӗткенӗ килмӗ ӳрӑх—
Ҫерем йӗс пек саратнӑ хӑй тумне.

Пӗрре ҫӗрле хӑрушӑ ҫил уларӗ,
Йӗпе хуралтӑсен тӑррисене
Сӳсе мӑрйесенче хаяр юрларӗ
Сехре хӑпартмӗш вӑрӑм юррине.

Қашларӗ ҫил, пӗлӗтсене тустарчӗ,
Хуса хӳтерчӗ кӑнтӑр еннелле.
Ҫуса тасатнӑ пек тӳпе ҫуталчӗ.
Сасартӑк ҫумӑр чарӑнчӗ ҫӗрле.

Сиккеленми пӑхать чӑп-чӑмӑр уйӑх.
Кӑвак ҫанталӑк сутрӗ ҫӑлтӑра.
Ырми-канми ӗҫлесшӗн кӑмӑл-туйӑм
Сиксе вӑранчӗ ӗнтӗ халӑхра.

Шик-шӑхӑрса ҫӳре, ӗҫле тархасшӑн,
Ирех тӑрса хаваслӑн вутӑ ҫур!
Қалча ҫине кӑвак ҫутпах тухасшӑн
Қартишӗнче киклатрӗ ушкӑн хур.

Шыва ҫат-ҫат ҫапма хиври ҫуначӗ
Кӗҫтет иккен—нартлатрӗ кӑвакал.
Қашта ҫинчи автан та сасӑ пачӗ.
Кӑмакасем хутса вӑранчӗ ял.

Епле таса та витӗр уҫӑ сывлӑш!
Вӑл халӗ лайӑх тарӑн сывлама.
Ирхи апат шӑрши те тӗтӗм хутӑш
Тухса саланнӑ сивӗ урама.

Йĕри-тавра калча кăна ем-ешĕл
Выртать кĕççе пек хулăн сарăлса.
Ана хĕле таса ӳтпе кĕртесшĕн
Хăварнă çумăр пĕтĕмпех çуса.

Хуралнă, çуллахи пекех чиперрĕн
Пĕр тăтăш тăсăлмасть кĕрхи вăрман.
Çаралнă йывăççем пĕрер-пĕрерĕн
Пĕчченнĕн курăнаççĕ аякран.

Пĕр кайăкăн сасси те чун уçмашкăн
Пырса кĕмест янравлă сывлăша.
Хура курак пулин те ушкăн-ушкăн
Вĕçсе ăсаннă кăнтăрти ăшша.

Шăна-ӳпре çукран шапа юнтармăш
Куçне хупса ларать иккен шывра.
Хăяхлăхран карма çăварлă карăш
Тухса çуран чуптарнă кăнтăра.

Пире илемсĕр мар кĕрхи çанталăк.
Çĕре кисрентерсе яка çулпа
Иртет кĕрлевлĕ грузовик сасартăк
Е тӳнкĕр-тӳнкĕр caслă урапа.

Леш сивĕ çумăр хирсене лӳшкетнĕ,
Ĕç-хĕлсĕр вăхăтра колхозниксем
Клубра «Нарспи» лартмашкăн хатĕрленнĕ—
Ахаль иртмен йĕпе-сапа кунсем.

Аваллăх асапне ăнланĕ халăх,
Ахлатĕ паттăр хĕршĕн хурланса.
Сетнер рольне вылять Иван Михайлов,
Нарспи рольне—çап-çамрăк Васлисса.

Пĕрре те Ковалев выляс темерĕ
Тăхтамана, анчах юри пырса килте
Иван—Симун пичче, тархасшăн!—терĕ,
Аран кĕртме пултарчĕ ӳкĕте.

Тухья, тевет те, шĕлкеме те сарă,
Тем те пĕр авалхи теттесене
Паян ăçта тупса пухма пултарăн—
Ялта юлман пĕрре те ку чухне.

Янратăр çăл пек шăнкăр-шăнкăр, лайăх
Силпи тевечĕ ял сцени çинче!—
Юри каять, илсе килет Михайлов
Шупашкарти чăваш театрĕнчен.

Юри тумланнă уяври пек халăх
Уттарчĕ шăкăл-шăкăл калаçса.
Шăнса шак хытнă çĕр. Уяр çанталăк
Çутатнă кĕмĕл сапнă пек каçа.

Клуба çапса хĕстернĕ пек тулаççĕ
Ватти те, вăтамми те, ачапча.
Пĕр харăс ал çупса кĕтсе лараççĕ
Силпи илемĕнчи хĕрпе качча.

Хуллен те лăпкă уçăлать чаршавĕ,
Малтан шăхлич сасси каять уя,
Унтан кĕрлет шур тумлă халăх шавĕ,
Тухаççĕ çамрăксем каçхи вăййа.

Çырма хĕрри. Çăра йăмралăх айĕ,
Пĕр сасă паллăрах ыттисенчен.
Хитре юрлаканни вăл Васлисса-и?
Янрать сасси яш халăх хушшинче.

Хĕр çыхнă пануլми çеçки пек тутăр,
Вăл çакнă шăнкăр-шăнкăр шĕлкеме.
Кун пек чипершĕн кам чĕри ан çунтăр,
Кам ан ăмсантăр кун пек илеме?...

Силпи валакĕ умĕнче Михайлов
Васлиссана тытса ыталасан,
Кӳлешесси хĕртсе илет вут майлăн,
Çӳрет яшсен чĕрисенче паян.

Ялпа сывпуллашса Нарспи мăнтарăн
Пĕркенчĕк айĕнче хӳхленине
Чунтан итленĕ май чылай хĕрарăм
Аса илет халь иртнĕ ĕмĕрне.

Вĕсен хĕр чух пулман çав ăраскалĕ,
Чи çамрăк вăхăт иртнĕ асапра.
Нарспишĕн кулянни-йĕрни те халĕ
Пĕр майăн илтĕнсе тăрать клубра.

Хисеплĕ шăпăрçи кала пуçларĕ,
Хускалчĕ ĕнтĕ ташă, юрă, çуй.
Вăр та вăр çаврăнса сиксе шавларĕ,
Кĕрлерĕ пысăк туй та, пăсăк туй.

Ташлаччăр туйĕнче! Туйне хăварнă
Нарспин чĕри çунать халь вут-хĕмле.
Пĕркенчĕк айĕнчен тухса вăл тарнă,
Çӳрет юратнă Сетнерпе пĕрле.

Çурхи вăрман. Чи-чи юрларĕ кайăк.
Хĕвел вылярĕ çулçăсем çинче.
Тухъялă Васлисса. Ăна Михайлов
Тытса чуптурĕ халăх умĕнчех.

Ачашшăн чуптуни ахаль иртмерĕ,
Хускатрĕ каччăсен чĕрисене.
Халь кам кăна савса выляс темерĕ
Колхоз сцени çинче Сетнер рольне?

Васлиссана нумайăшĕ юратнă.
Хĕр кăмăлне пĕри те килеймен.
Хăюллă хĕр кама савма шыранă—
Ăна никам та ялĕнче пĕлмен.

Клубра хăватлă аслати кĕрлетчĕ,
Çиçетчĕ çиçĕм сцена çийĕнче.
Тулти таса çанталăк тĕлĕнтерчĕ,
Тĕнче шуралнă халĕ пур енче.

Нумай ларса сисмен, тулта пуçланă
Пĕрремĕш те хаваслă юр çума,
Йăмра турачĕсем çине çакланнă,
Йăлтах шуратнă пĕтĕм урама.

## 16

Тĕкмесем çинче пас шап-шуррăн ларнă,
Ларнă пас пахча çатанĕсем çине.
Хĕл сивви шур шупăр тăхăнтарнă
Урамри çара йăмрасене.

Халĕ вăтăр пиллĕк-и е хĕрĕх
Градус чухлĕ çилсĕр сивĕре
Ял çынни пĕрмеллĕ сарă кĕрĕк
Тăхăнса хаваслане ĕçре.

Акăшкӳл çара çунин тупанĕ
Чăйлатса пырать çулсем çинче,—
Йывăç турттарма хĕрсе пуçланă
Халăх пăрлă Атăл леш енчен.

Пырĕ ĕç кăçал питех те вирлĕ,
Çĕнĕрен хуралтăсем лартма
Пĕрене те тимĕр шăвăç кирлĕ,
Кирлĕ кирпĕч, цемент та хăма.

Фермăсем туса пыма паян хĕн,
Питĕ йывăр пулĕ халлĕхе—
Сивĕ пĕлĕт айĕнче ӳстермĕн
Йышлă самăр выльăх-чĕрлĕхе.

Ĕмĕт вĕçнипе пĕрле вăй-хал та
Шăнăрта сиксе вылямалла,
Лартмалла кăçал нумай хуралтă,
Ăшă çурт та хăвăрт лартмалла.

Иксĕлми, чакми пуян хуçалăх
Кулленех, ялан кĕрлемелле!—
Шухăша кайса Иван Михайлов
Ыйхине сирсе ярать çĕрле.

Фермăра ĕне суса хĕрарăм
Витрине янратнă самантра
Пысăк мул кĕвви-юрри хастаррăн
Илтĕнсе тăринччĕ таврара.

Илтĕнтĕр сыснан нăрик-нăрикĕ,
Сурăх сиктĕр пысăк йышĕнче!
Хĕрелсе автанăн киккирикĕ
Çунтăр ушкăн чăх-чĕп хушшинче!

Хур киклеттĕр, кăвакал нартлаттăр,
Пулччăр мамăк тĕклĕ, йăлтăркка!
Кăлтăртаттăр та пĕсехине хăparттăр
Хӳхĕм тĕслĕ кaçăр пуç—кăркка!

Кунĕн-çĕрĕн хăвăрт мăнтăрланччăр!
Вĕсене пусма кĕр кунĕнче
Бюджетри укçа пекех янраччăр
Çивчĕ çĕçĕсем хăйра çинче!

Акăшкӳлĕн пур ӳсме хăвачĕ,
Мелĕ пур та, тăрăшни сахал.
Темиçе гектар пахча тăвасчĕ
Энĕш шывĕ хĕрринче кăçал.

Виç-тăвата метр çӳлĕш Атăл
Çĕкленсе тухать те, çуркунне
Хăйĕн вăйлă таппипе хуплать вăл
Энĕш хĕрринчи çырансене.

Шыв чакса сăра çĕпри пек юшкăн
Хăварать унта вăрахлăха—
Тĕрлĕ хаклă çимĕç ăнтармашкăн
Çакă вырăн ылтăн пек паха.

Халăх хăйĕн çĕрĕнче йĕркеллĕн
Тăрăшса ĕçлес пулсан ăста,
Çитмĕл çичĕ çулçăллă-кĕпеллĕ
Ашкăрма пултарĕ купăста.

Кишĕр, чĕкĕнтĕр, сухан та çарăк,
Помидор, хăяр ӳстер—тие!
Вăрăм йăрансем çинчен пуçтарăн
Кĕркунне çак пысăк телее.

Юшкăнлă тăпра йӳçсе хăпарнă,
Çулсерен тутланнă тислĕкре—
Вăл арбуз лартма та пархатарлă,
Шампăлти лартма та вăл хитре.

Тупăш илĕ пахчаран хуçалăх—
Халĕ хĕрсемпе инкесене
Кружокра хăех Иван Михайлов
Вĕрентсе пырать пахча ĕçне.

Иртенпе çырса ларни ыртарчĕ,
Çавăнпа та хăйĕн шухăшне
Пĕлтерме тесе Иван уттарчĕ
Ковалев Симун старик патне.

Кĕленче пекех тӳпе яр уçă.
Юр çинче хĕвел вылянипе
Ыратса каять Михайлов куçĕ,
Пуçĕ те ăна хĕстернĕ пек.

Вăл тăкăрлăкран тухса пыратчĕ,
Ватă почтальон сукмак çинче
Тĕлпулса конверт туртса кăларчĕ
Çумĕнчи сăран кушелĕнчен.

— Хĕр алли, ачам! Мускав пичечĕ.
Эпĕ кĕтĕп сирĕн туйăра.—
Терĕ те сухалĕнчен ўкерчĕ
Аллипе хуллен шăлса пăра.

Урампа хуллен çеç утнă майăн,
Çул çинчех Людмила çыруне
Вуласа пырса, Иван Михайлов
Хускатать ыратнă пек чунне.

«Телейпе хаваслану кĕтесĕ,
Ырă вырăн, ху валли йăва
Тупрăн та килсе тухмастăн эсĕ
Пĕр самант пулин те Мускава.

Тепĕр каччă ăшшипе пултарĕ
Ирĕлме пăрланнă ман чĕрем.
Санăн кăмăлун ачаш кăварĕ
Хĕртессе кĕтетĕп кунсерен.

Калаçса иргесчĕ пирĕн иккĕн
Хĕллехи сип-сивĕ урампа.
Тусăм, тусăм, эс кайран ан ўкĕн,
Ан тавлаш юратнă çыннупа!

Ир те каç ялан сана кĕтетĕп,
Лăпкă çурçĕр тĕлĕнче ыйха
Сирнĕçем килте утса çўретĕп—
Сир, тăванăм, манăн хурлăха!»

Çакăн пек кĕскен кăна хаяррăн
Хĕр çырать ытла ўпкелешсе.
Мускава кайсан, кама хăварăн
Колхозри ĕç-хĕллĕ тĕркĕше?

Тархаслать ăна Людмила ашшĕ:
Чăвашсем çинчен кĕнекине
Хатĕрленĕ чух ыйтса пĕлесшĕн
Таврари улт-çичĕ ял ятне.

— Старике çырас,—тесе Михайлов
Утнă майăн шухăш тĕтринче
Çĕкленет тискер хаяр аваллăх
Хумлă аслă Атăл хĕрринче.

Чăвашсем сехĕрленсе хăранă
Пупсенчен, чее тиексенчен,
Патшаран, вĕсем ялан шыранă
Хӳтлĕхсем хура вăрмансенче.

Вăрмансем çилпе каш-каш кашланă,
Пĕлеймен ытти саспа шава.
Мĕскĕнсем унта тупма шутланă
Пытанма хăйсем валли йăва.

Пĕккĕн шăнкăр-шăнкăр шăнкăравĕ
Янраса иртмен çĕрте авал
Вăхăтлăх кăна телей тăрлавĕ
Тупнă та хуллен хунанă ял.

Ирĕкри хурт-хăмăр пыл пуçтарнă
Ватă çĕрĕк йывăç хăвăлне,—
Чăвашсем пыл татнă та тултарнă
Кĕркунне çăка чĕрессене.

Пылçырми,—тесе вĕсем ят панă
Сивĕ çăл таврашĕнчи ялне.
Сарă ăвăспа пусса сапланă
Çурăк хăмпă кантăкăн куçне.

Кĕркунне палан пиçсе хĕрелнĕ
Вырăна пырса Паланкасси
Ялĕ ларнă, питĕ килентернĕ
Тутлă пысăк кукăль çыртасси.

Ӳплере хаяр упа ĕрленĕ
Вырăнти ĕçчен çынсен сасси
Пуртă сассипе пĕрле кĕрленĕ—
Ӳссе ларнă ял—Упакасси.

Атăл хĕрринче тахçан аваллăх
Ят парса хăварнă ял нумай:
Хурăнвар, Шапаçырми, Çăкалăх,
Пакăшвар, Хăвалăх, Юманай.

Хӳтлеймен тӑван ҫӗршыв вӑрманӗ
Чӑваша ҫӑра ҫулҫисемпе.
Хуҫасем килсе ҫите пуҫланӑ
Тилӗсен ҫинҫе сукмакӗпе.

Халӑха тиек тавраш хӗстернӗ,
Ултавсем сарма урапапа
Турттарса вӗсем кунта ҫитернӗ
Сарӑ ылтӑн ризӑллӑ пупа.

Кӳлӗре илемлӗ акӑш ларнӑ.
Ан хӗрхен ӑна, тӗлле те пер!
Боярсем валли пухса тутарнӑ
Тӗкӗнчен ҫемҫе тӳшек-минтер.

Сухара чӑваш ҫынни тарланӑ,
Ӗшенсе ҫитсен ҫӗрле вара
Ҫывӑрма минтер пек курӑк сарнӑ,
Хунӑ пуҫ айне купа тӑпра.

Ҫӗтӗк-ҫатӑк кивӗ пир пӑртакҫӑ,
Шӑлапир сӑхман ҫитменнипе
Витӗнейнӗ апӑрша сухаҫӑ
Йывӑҫсен парка ҫулҫисемпе.

Вӑл кунта ӳпне выртса кантарнӑ
Ирӗк уҫӑ сывлӑшра ӳтне.
Ун хӑлхи илтмен чӗнрен явтарнӑ
Ҫичӗ вӗҫлӗ саламат сасне.

Уйӑхран ҫап-ҫутӑ кӗмӗл ҫунӑ
Вӑхӑтра ҫерем кӗҫҫи ҫинче
Илеме юратакан ун чунӗ
Ачашланнӑ шӑпчӑк юрринче.

Хуҫасем шаршанлатса кастарнӑ—
Пуртӑсем ҫуллен кӗрленипе
Вӑрмансем сайралнӑҫем сайралнӑ,
Кашламан хӑватлӑ шавӗпе.

Чунилли усал кантур таврашӗ
Хырӑҫ-марӑҫ пуҫтарма тухсан,
Пытанса ларма юлман чӑвашӑн
Ялӗ патӗнчи хура вӑрман.

Атăл кĕрлевне чансем хупланă.
Пуп сасси те чан сасси,—тесе
Ĕнсине хыçса чăваш юрланă,
Ĕсĕкленĕ хытă эрленсе.

Хир çара. Ăнман ыраш та тулă,
Ĕнсе ларнă шăрăхра калча.
Хур кĕтме те ĕнтĕ вăрăм хулă
Тупайман мăнтарăн ачапча.

Юманай тесе яла ят панă,
Çумĕнче юман тăрса юлман.
Хурăнвар хура хирте хурланнă,
Пылкассин те пылĕ пулайман.

Авалтан ялсем хуллен ĕрченĕ
Варсенче, çырма-çатрасенче
Малашне хăват ăнса çĕкленĕ
Пĕрлешӳллĕ пысăк çул çинче.

Пĕр колхоз вăтам пӳрне пулсассăн,
Юнашар колхоз—кача пӳрне.
Çирĕп чăмăра кĕрсе кăна хавассăн
Пӳрнесем тăваççĕ хăй ĕçне.

Вĕсенчен тĕреклĕ пĕр хуçалăх
Тăвасси сиксе тухать ума,—
Утнă май чăйлаттарать Михайлов
Кăчăрт-кăчăрт юрлă урама.

Ĕмĕр-ĕмĕр кăпăш кĕл те тислĕк
Çăраланнă ял урамĕнче
Ашкăрса ӳсет тем те пĕр тĕслĕ
Вĕлтĕрен, хупах та пур енче.

Чăркăш куршанакĕ-тикенекĕ
Çыпçăнать утса иртмессерен.
Çатанпа хӳме çумне инкекĕн
Йăпшăнма вĕреннĕ тилпĕрен.

Курасси килсе каять Иванăн
Янкăр уçă ешĕл çуркунне
Пĕтĕмпе садсем витсе хупланă
Çеçкесен шăршиллĕ ялсене.



Ирпе каç турат çинче саркайăк,
Шăпчăк та шăраттăр юррине!—
Ĕмĕтне тытас пекех Михайлов
Хыттăн чăмăртать аллисене.

Килсерен сапакĕсем пилешĕн
Чӳрече умне хĕретнипе
Савăнса вăл пĕр утса иртесшĕн
Хăйĕн Акăшкӳл урамĕпе.



# ИККЁМЁШ ПАЙЁ

1.

Вăрçăччен Иван вĕреннĕ
Виçĕ çул Шупашкарта.
Халь пырса кĕрем-ха, тенĕ,
Тепĕр хут института.

Агроном пулма пĕр тапхăр
Вĕренни ăна ялта
Парса пынă чарăнмасăр
Ĕçлеме вăйпа пайта.

Çарансем сахал пулин те,
Акăшкӳл юлман кая,
Выльăх-чĕрлĕх çитнĕ ĕнтĕ
Вăрçă умĕнхи шая.

Вăрçă чух ĕçленĕ халăх,
Вăй çитмен пирки çĕре
Пăхайман—кĕртет Михайлов
Тĕрĕс пусă уй-хире.

Тырă-пулă пархатарлă
Анса пултăр тенĕ май
Уй-хире кăçал кăларнă
Тислĕк те имçам нумай.

Тырă ак, анчах хуçалăх
Урăх май та ӳсмелле!—
Шухăша кайса Михайлов
Лăпланман кăçал хĕлле.

Çутçанталăк ырă мулĕ
Усă патăрччĕ ялта.
Хуратул чечекĕн пылĕ
Кĕтĕр пирĕн бюджета!

Çут тĕнчен ырри сахал-и?
Пур çĕрте шыра, тĕпче!
Авăртсан акшар та халĕ
Ашкăртать тырра, пĕрче!

Çăмарта епле, тăванăм,
Лайăх-и çатма çинче?
Инкесем шапа хуранĕ
Пухнă Атăл хĕрринче.

Авăртса ăна параççĕ
Апатпа пĕрле, вара
Нумайрах маття тăваççĕ
Чăхсем ăшă йăвара.

Ялхуçалăх институчĕн
Юлашки курсне кăçал
Пĕтерме Михайлов хучĕ
Хĕлĕпе нумай вăй-хал.

Маннине каллех астурĕ,
Юратса вуланипе
Туйăнать агрокультура
Каçсерен поэзи пек.

Агроном пулма экзамен
Тытмалли хаваслăхпа
Тухса кайрĕ вăл май умĕн
Малтанхи пăрахутпа.

Шыв тапса кĕрсе путарнă
Улăха, вăрмансене,
Лапсăркки таран хăварнă
Тирексен тăррисене.

Майне ярт тăсса вĕçеççĕ
Шыв çипе кăвакалсем,
Сывлăша касса шилеççĕ
Çатăлти çунаттисем.

Çырансем çине хавассăн
Тинкерсе пăхсан кăна
Пăрахут шуни пĕр майăн
Сисĕнсе тăрать çынна.

Пăрахут çине çу кунĕ
Чи малтан ларакана
Пăхтарать телейлĕ чунĕ
Пĕтĕм ешĕл таврана.

Вашават çынна сасартăк
Тупнă ырă вăхăтра
Сисĕнмесĕр иртнĕ талăк—
Пакăлтат, калаç вара!

— Танкистсем тупам-ха,—терĕ,
Çавăнпа Иван кунта
Шыраса чылай çӳрерĕ
Тăрăхла та, урлă та.

Уткалать танкист хăй майлă
Ерипен—асту та виç!
Чухласа часах Михайлов
Чăн та тупрĕ пĕр танкист.

Иккĕш те иккен çӳренĕ
Пĕр енче, унтан тата
Прохор станцинче кĕрешнĕ
Хĕрĕх виççĕмĕш çулта.

Нимĕç танкĕ, самолечĕ
Пинĕпе кĕрленипе
Кун хураччĕ, курăнмастчĕ
Çуллахи кăвак тӳпе.

Танк танка пырса утланчĕ,
Хурçă çапăнчĕ хурçа.
Халиччен этем курманччĕ
Ун пекех хаяр вăрçа.

Иккӗшне татти-сыпписӗр
Ҫалаҫни йӑлӑхтармасть.
Ҫилнӗ вӑштӑр-вӑштӑр ҫилсӗр
Янкӑр уҫӑ лӑпкӑ каҫ.

Пӑрахут кӑларнӑ тӗтӗм
Ҫайӑк пек тӑрать ҫӳлте.
Ун мӗлки хура та тӗттӗм
Ҫарӑнса выртать хирте.

Ирхине тӗтре ҫӗкленчӗ,
Йӑсӑрланчӗ таврара.
Пӑрахут лартса ҫитерчӗ
Ивана Шупашкара.

Ҫын кӑкри таран тӑратчӗ
Шур тӗтре урамсенче.
Иртнӗ майӑн хӑваратчӗ
Шывлӑ йӗр чулсем ҫинче.

Хулара ялан ларса-мӗн
Пӗр эрне шӑпах иртет.
Кулленех пӗрер экзамен
Тӑрӑшса пама тивет.

Агроном ятне туяннӑ
Сӑлтавпа ӑна утма
Шухӑшсем таҫта васкатнӑ,
Кӗртнӗ тӗркӗш урама.

Трестсене кӗрсе шав турӗ.
Акӑшкӳлӗн пулмалла
Тепӗр ҫул паха культура—
Йӗтӗн-кантӑр та хӑмла!

Хӑвӑртрах килне ҫитесчӗ,—
Хырӑнас пулать кунта!
Васкаса Иван кӗретчӗ
Кӗтесри лутра ҫурта.

Сассӑр анлӑ ҫӑмӑл алӑк
Уҫӑлнӑ уҫӑлманах,
Илтӗнсе каять сасартӑк
Французла темле сӑмах.

— Героя хырма мухтавăм!
Манăн çеç. Михайлов, кил!—
Кăшкăрса калать Красавин,
Леш Ильин ачи, Базиль.

Ун алли, шап-шурă ала
Бритва тытнă самантра
Пăрахут сасси хăватлă
Янратать Шупашкара.

2

Пристаньтен Иван танккарĕ
Çуранах, курма кăна,
Каласма кĕме шутларĕ
Кўршĕри «Венерăна».

Колхоза капла «Венера»
Ят парса хуни çинчен
Сăмахсем илтме пултарăн
Халь те халăх хушшинче.

Вăтăрмĕш çулта ку ялăн
Шкулĕнче вĕрентекен
Пулнă, тет, Григорий Малин,
Çамрăк вĕçкĕн çын иккен.

Сăвăсем çырма юратнă,
Çавăнпа пĕррехинче
Акăш-макăш хушаматлă
Пулса кайнă ялĕнче.

«Пушкинран та иртĕп» тенĕ,
Пуплеве кĕскетнĕ те
«Пуширеп» тесе çўренĕ,
Ала пуснă пур çĕрте.

Шухăша кайман, çўренĕ,
Ят тупсан—ăна телей.
Вăл хĕрне те Рифма тенĕ,
Ывăл ачине—Хорей.

«Пуширеп» текен мухтанчăк
Перегиб пекки чухне
Пынă-ларнă, тет, сасартăк
Председатель вырăнне.

Колхоза çапла ят панă,
Çавăнтах ăнман поэт
Хулана кайса тутарнă
Юриех çавра пичет.

Куркалатăп халь те эпĕ
Хушăран учителе.
Хăмлалла вĕçес хисепĕ
Чакнă ун пыра-киле.

Çырнипе иртмен пулин те,
Пушкинран чылай мала
Ĕмĕр çулĕ кайнă ĕнтĕ,
Çитнĕ аллă çулалла.

«Пуширеп» тени пăртакçă,
Лайăх мар, анчах ялта
Халĕ те çапла çыраççĕ,—
Ячĕ кĕнĕ паспорта.

Унăн хĕрĕ Рима ятлă.
Рифма мар, тахçан качча
Кайнă та, унта çуратнă
Савăнма ача-пăча.

Ывăлĕ—хайхи Хорейĕ
Харитон ятпа çӳрет,
Унăн пур хăйне телейĕ,
Летчик пулнă та вĕçет.

Пуширеп поэт мăнтарăн
Председатель пулнине
Пĕлтерсе пĕр ят—«Венера»
Юлнă, кĕнĕ çĕр актне.

Çав колхоз хăй майăн шунă,
Ытлашши кайра пыман,
Чи вăтам планета пулнă
Пирĕн районра ялан.

— Ерипен утса пыма пĕл.
Васкакан каять вакка,—
Шухăшланă председатель,
Лăпкă çын, Ильин Лукка.

Уй хапхи хуçи—хуралçă
Хирĕç пулчĕ Ивана.
Вата аллисем уçаççĕ
Çăмăл вĕрлĕк хапхана.

— Халĕ çеç Лукка кунтаччĕ,
Кайрĕ тимĕрçе кĕрсе,—
Терĕ вăл, хапхи сас пачĕ
Хупăнса чĕриклетсе.

Урамра хăпарнă курăк
Ешĕл те лутра, çăра.
Чăх-чĕпсемсĕр ним те урăх
Курăнмасть малтан умра.

Лимонсем выртаççĕ—тейĕн—
Сар чĕпсем кунта нумай.
Вĕсене пăхма телейлĕ
Кинемей те кукамай.

Хуллăн пĕр вĕçне кив тутăр
Çакнă та лараççĕ халь.
Вĕсене хĕвеллĕ пултăр
Çуркунне çеремлĕ ял!

Тăм лаçра сунтал янратчĕ,
Сассине итле-итле
Карăнса Иван утатчĕ
Хăйĕн мĕлкипе пĕрле.

Хăмпă пек тĕкне хăпартнă
Сехремет аçа кăркка
Килнипе Иван хăранă,
Тапрĕ-сикрĕ аякка.

Пĕр инкек иртсе каймарĕ,
Тарнă чух ăна унта
Хирĕçле хĕртме пуçларĕ
Пысăк ушкăн хур тата.

Самăр хур аçи сасартăк
Çыртрĕ ată кунчинчен.
Пăр та пар вĕçет тĕк-мамăк
Çапакан çунаттинчен.

Хашкаса чупать. Ҫам тӳсӗ
Хур аҫи хӗненине?..
Ҫавракa танкист карттусӗ
Вӑркӑнать ҫерем ҫине.

Атӑ кунчинчен пӗр татӑк
Вӑтӑрса кӑларчӗ хур.
Ҫӳҫ ҫине те лекнӗ мамӑк,
Тум ҫинче те мамӑк пур.

Вӑрҫӑра нумай хӑранӑ,
Хӑраман кун пек Иван.
Пӗвӗ-сийӗ ун тарланӑ
Урипе лӗпки таран.

— Эй те эй! Ӑрьях! Ҫаймарӗ
Халь те ҫӑткӑн хурчӑка!—
Кӑшкӑрса алне суллaрӗ
Лаҫӗ умӗнче Лукка.

— Хурчӑка сана. Атака
Пычӗ халь.—Иван хӗр пек
Вӑтанса тӗке вак-ваккӑн
Чӗпӗтет пӳрнисемпе.

— Фермӑра ҫаплах нумай-и
Ҫайӑк-кӗшӗк, тӗрлӗ чун?—
Ҫаласа хурать Михайлов
Ҫи-пуҫне тасатнӑ чух.

— Ҫолхозра кашни хресченӗн
Ҫӑвакал, кӑркка та хур
Чылаях кӑҫал ӗрченӗ,
Кӗркунне, килех те кур!

Кӗрлесе хирти хӗрӳ ӗҫ
Иртсенех, Иван сана
Килсерен савса хӑналӗҫ
Ҫулӑ хуплупа кӑна.

Пӗтӗмпе те ҫитмӗл килӗ.
Пирӗн пӗчӗк тӑп-тӑп ял.
Чӑх-чӗп ферми мӗншӗн кирлӗ?
Ӗҫлеме ҫынсем сахал.

Ҫаласса ларса пăртакçă
Чей ĕçер пĕр-ик курка,—
Терĕ вăл.
Пĕрле утаççĕ
Иванпа Ильин Лукка.

Председатель юраттарнă
Халăха таса пулма,
Хулă шăпăрпа шăлтарнă
Пур енче те урама.

Хăй те вăл таса çӳренĕ,
Утюгпа якатнипе
Курăнса тăрать вĕр-çĕннĕн
Ҫийĕнчи ахаль кĕпе.

Пилĕкне чипер хĕстернĕ
Ярапаллă пиçиххи,
Ҫивелмен, çаплах типтерлĕ
Юлнă каччă чухнехи.

Сăнарна сыхла, ан ватăл,—
Тенĕ пек, Лукка хăйне
Тыткалать, кассах тăрать вăл
Хăйĕн хӳхĕм сухалне.

Вăл çӳçне яка туранă,
Ҫăтралатнă хĕррине,
Хăпчăкпа туртса кăларнă
Ҫăвакрах пĕрчисене.

Ҫалама та çук тирпейлĕ—
Пурăнать Лукка пичче.
Вăл çуртне епле илемлĕ
Лартнă ялăн варринче.

Пӳрт çине хăма виттернĕ,
Тăррине автан сăнне
Йывăçрен касса ӳкернĕ,
Тĕрĕ тытнă карнисне.

Хапханне те ункăн-ункăн
Тĕрĕ çапнă тăррине.
Ҫăвакарчăн ушкăн-ушкăн
Ларнă ешĕл картишне

Пӳрчӗн ӑшӗ те типтерлӗ,
Илӗртет тулашӗ пек.
Чӳлмексем ҫинче ӳстернӗ
Тӗрлӗрен чечен чечек.

Пӗчӗкҫӗ кӑна минтерӗ
Пур иккен пукан ҫинче.
— Лар та, кан-ха, тусӑм!—терӗ
Ивана Лукка пичче.

— МТС тени, пӑхса тар,
Тинкене илет кӑҫал.
Телефон патне директор
Чӗнтермен кунсем сахал.

Ман хирте ака тӑвасшӑн,
Тракторсем мана сӗнет.
Кирлӗ мар мана тархасшӑн!
Хамӑн та лаша ҫитет.

Урӑх ялсенче шавлатӑр.
Кирлӗ мар мана пӗртте.
Сухаланӑ майӑн трактор
Ҫулсене пӑсать хирте.

Кӗрӗс-мерӗс вӑйӗ-халӗ
Кунӗпе кӗрленипе
Тӑрисен юрри те халӗ
Илтӗнмест кӑвак ирпе.

Вӑрманпа уй-хирӗн ҫепӗҫ
Илемне сума сума
Ачаран вӗреннӗ эпӗ,
Хӑнӑхтарнӑ та хама.

Кирлӗ-ҫке колхоз утарӗ!
Сарӑ хӗвелпе пӗрле
Хурт вӑранӗ, пыл пуҫтарӗ,
Тулӗ пылӗпе вӗлле.

Ман колхоз тата пӑртакҫӑ
Пысӑк пулнӑ хушӑра
Эпӗ пулӑттӑм утарҫӑ,
Ҫӳрӗттӗм уҫланкӑра.

— Тумалла!—тесе Михайлов
Каласан, Лукка куçне
Чакăртса ярать хаваслăх,
Çутă сăн кĕрет питне.

— Колхозра эхер хурт-хăмăр
Ĕрчетсе ярас пулсан,
Ăстисем пулатпăр хамăр,
Ĕмĕт çитрĕ ман, Иван!

Ил хама! Сиксех пыратăп,
Пыл-хурта кăна пăхма
Утара кайса лартатăп
Хамăн килĕм-çуртăма.

Луккапа калаçнă хыççăн
Çул çинче Михайлова
Пысăк ĕмĕтпе çунуçăн
Ярăнса утма аван.

— Пирĕн артельпе «Венера»
Пĕр артель пулсан, Лукка
Утара лартма пултарĕ
Уçă ешĕл уçланка.

Трактор шавĕпе тусанĕ
Килĕшмест иккен ăна.
Сывласа ларма туянĕ
Тутлă пыл шăрши кăна.

Председательте хастарсăр,
Юратмасăр лариччен
Чăннипе чипер утарçă
Пулмалла Лукка пичче.

Çакă шухăш килнĕ майăн
Шăрăхра кĕске çулне
Пĕр сисми çитет Михайлов
Виçĕ çухрăмри ялне.

Ывăлне кĕтсе-тĕр ларнă
Амĕш килĕ умĕнче
Вăрçăччен ларма тутарнă
Тăрăхла тенкел çинче.

— Эпĕ çук чухне кичем-и,
Ăшă мар-и пӳрт, анне?
— Эс килсен те, çурт илемĕ
Хутшăнмарĕ ку чухне.

Эсĕ шăнкăрча пăхса тăр:
Çамрăк арăм пуррипе,
Куртăн-и, епле вăл паттăр
Хĕпĕртет юррисемпе.

Эсĕ пур—ялан пĕччен çĕ
Хулара, ялта, хирте.
Ырă мăшăрпа çӳреççĕ
Тантăш-тусусем пурте.

Килĕмре тăван йăпанчăк
Пепкене лăпка-лăпка
Сиктересшĕн эпĕ—карчăк,
Килĕшет мана сăпка.

Çӳлелле пăхать Михайлов:
Чăн та хăй йăви çине
Ларнă та хаваслă кайăк
Шăрататъ кĕввисене.

Амăшĕ: «Ватта юлатăн»
Тенĕ пек, хĕрхеннипе,
Хăй ачи çине хăяккăн
Пăхрĕ мĕскĕн куçĕпе.

3

Ачаран хаçат Йăванĕ
Пулнă пит нумай ĕçре...
Кивелсе анма пуçланă
Кăмака правленире.

Ватă çын Йăван çӳренĕ
Таврара пĕррехинче,
Лайăх тăм тупса тĕпченĕ
Пурăшвар уй-хирĕнче.

Пурăшвар,—тесе калаççĕ
Кӳршĕри чăваш ялне.
Пурăш мĕн?—ăна чухлаççĕ
Ваттисем çеç кучухне.

Тӳперен хӗвел те çутӑ
Кӗртеймен хура вӑрман
Сӗм авал кашланӑ хытӑ,
Никама та пӑхӑнман.

Мӑйӑрпа икел пуçтарнӑ
Самӑр пурӑш шӑтӑкне.
Чӑвашсем çиме юратнӑ
Çулӑ пурӑш какайне.

Капитал çыртса кышланӑ,
Каснӑ-хирнӗ вӑрмана,
Пурӑшран асра хӑварнӑ
Пурӑшвар ятне кӑна.

Пур ӑста çынсем мухтаççӗ
Çакӑ вырӑнти тӑма,
Лавӗпе илсе каяççӗ
Кӑмака купалама.

Авалхи çынсен тавраш
Тупӑнать нумай кунта,
Çавӑнпа Людмила ашшӗ
Илнӗ ку тӗле шута.

Çынсене кунта пытарнӑ
Питӗ ӗлӗк—ун çинчен
Вӑл тӗпчев статьи кӑларнӑ
Институт журналӗнче.

Çакӑнтан чавса кӑларнӑ
Чӳлмеке, çӗççе, пуртта
Палӑрмалӑх вырӑн панӑ
Музейре, Шупашкарта.

Хаçат Йӑванне Тухтаров,
Председатель хӑй унта:
— Шаг назад!—тесе хаяррӑн
Вӑрçнӑ та, юнанӑ та.

— Ватӑ супнӑ Ковалевӑн
Сухалне касса леçме
Килтӗр-и эсир лав-лавӑн
Ман саккунлӑ çӗрӗме?

Сирĕн пур унта Михайлов.
Героя манран хисеп!
Хăй ачи те асăнмалăх
Сăсăлне вĕçтерĕп эп.

Эпĕ хам пулма пултарнă
Кавалери полкĕнче!—
Тенĕ вăл, хуса кăларнă
Йăвана хăй хирĕнчен.

Хăй йăлттам лаша утланнă,
Мухтанмасть иккен ахаль:
Кăкăрне çакса тултарнă
Орденсем, нумай медаль.

Ку камит пирки каланă
Ихĕрсе Йăван ялта.
Ковалев мучи тăнланă,
Кулнă та, шăмарнă та.

— Ун патне кайма хастарăм
Çитеймест, кăвак пĕрче
Сухалран çăлма пултарĕ,—
Тенĕ вăл, Симун пичче.

Ковалев кăштах именнĕ
Кÿршĕри Тухтаровран.
Ун çинчен вăл илткеленĕ
Ик-виç хут та Луккаран.

Пĕлтĕрхи çулла «Венера»
Колхозри Ильин Лукка
Ун пирки пĕрре мăнтарăн
Персе ÿкнĕ пылчăка.

Çумăрта Ильин çÿренĕ,
Кĕнĕ ун патне канма.
Сăмавар пăш-паш вĕренĕ,
Ларнă сахăрпа хăйма.

Сисĕнмесĕр вăхăт иртнĕ
Хăрăм пек хура çĕр çитнĕ,
Иккĕшин калаçура.
Çĕр те, пĕлĕт те хура.

Кайнă чух Тухтаров панă
Çул çинче туртма тапак.
Лашине Лукка утланнă.
Çумăр пĕрĕхнĕ пăртак.

Вăл утне хуллен юрттарнă,
Хушăран канса ĕмме
Тапака пусса тултарнă
Пăхăр пуçлă чĕлĕме.

Ывăçра тивертнĕ шăрпăк
Чĕлĕмне лексен, çап-çут
Пашкăрса тухать сасартăк
Çĕлĕкрен те пысăк вут.

Тар хушса Тухтаров панă
Луккана туртма парне.
Çак тапак пĕрре хаплатнă
Вăркăнтарнă чĕлĕмне.

Ĕрĕхсе кайса хартлатнă
Тĕттĕмре лаши, Лукка
Пуç хĕрлех ӳксе çатлатнă
Тарăн шĕвĕ пылчăка.

Çавăнпа Лукка юлташăн
Пăхăр чĕлĕм çук, тата
Вăл Тухтаровпа ачашшăн
Калаçмасть ку яхăнта.

4

Юмахри мăн кайăк майлă
Çиларман çунаттине
Курсанах, тухать Михайлов
«Шурăмпуç» колхоз хирне.

Çул çинче васкас темерĕ,
Юриех хуллен утса
Тинкерсе пăхса тĕпчерĕ
Умĕнчи çăра пусса.

Кĕркунне акса хăварнă
Тулă лайăх темелле.
Фосфорит та сапкаланă,
Юр та, тытнă пуль хĕлле.

Чухлакан этем ăнланĕ
Пусăра ăна-кăна.
Хăш çĕрте чавка пытанĕ,
Хăш çĕрте çерçи кăна.

Хăш çĕрте çитмелĕх таран,
Ашăк акнă хăш çĕрте.
Пăхайман иккен Тухтаров,
Вĕрентмен этемсене.

Шăплăхра выртать умри сăрт.
Юс хӳри пекех хура.
Авăнмасăр, хуçăлмасăр
Ансăр çул каять уйра.

Пăшатан пек çул тӳп-тӳрĕ
Хире витĕр шăтарса
Кĕнĕ хыççăн кукăр турĕ,
Кĕчĕ-кайрĕ колхоза.

Уй хапхи курмасть Михайлов,
Çук юпи те асăнма.
Чĕм-чĕм курăк витсе кайнă
Анлă вăрăм урама.

Сисĕнмест тирпей таврашĕ,
Икĕ пысăк ытама
Кĕрейми мăн хыр кĕрешĕ
Урлă выртнă урама.

Вăкăрсем кӳлсе турттарнă,
Паллă ĕнтĕ, аякран.
Çĕркеленĕ, кăвакарнă,
Вырăнтан вăл хускалман.

Хулăм хуйăрне кахаллăн
Хыркаланă çиелтен,
Нихăçан та тивĕç алă,
Çивчĕ пуртă тĕртĕнмен.

Ачасем çеç пулкаланă,
Шухă шухăш килнипе
Ун çине çырса тултарнă
Кĕленче теттисемпе.

— Эпĕ хам та питĕ лайăх.
Хамăн кӳршĕсем патне
Урана пусман,—Михайлов
Хăтарса пырать хăйне.

Урампа утса иртетчĕ.
Пур çырни хăма çинче,
Ĕлĕкех лавкка кĕлечĕ
Пулнă çуртăн умĕнче.

«Шурăмпуç» колхоз
правлени»—
Тенĕ саспаллисене
Çумăр çинĕ, çил силленĕ,
Хăварман хăшне-пĕрне.

Алăкне уçса пăрахнă,
Пӳлĕме кĕрсе тухма
Чутласа иккен тутарнă
Тинтерех хăма пусма.

Анкарти теме пултарăн
Пӳлĕмне пăхса илсен.
Кантăк умĕнче Тухтаров
Пĕшкĕнсе ларать пĕччен.

Мăйăр катнă пек шăт-шатăн
Шут шăрçи кусса вылять.
Йăпшăнса Иван ал-хапăл
Сисĕнми пырса тăрать.

— Сан чипер хиртен хитре тăм
Тиесе каяс пирки
Айăпа кĕрсе хăтлантăм—
Тыттарсам хăлха чикки!

Эсĕ ху пырса манмаслăх
Акăш-макăш хĕнессе
Кĕтрĕм эп—танкист Михайлов.
Шаплаттар! Кĕçтет ĕнсе.

Хĕнессе кĕтетĕп,—терĕ,
Çав самант Иван вара,
Хăй тусне тытса çĕклерĕ
Чăмăртарĕ ытамра.

Чĕнеймест, тăрать Тухтаров,
Хĕрлĕ сăн кĕрет питне,
Вăтанни çӳрет ӳт тăрăх,
Тар тухать çамки çине.

Пытарать пуçне мăнтарăн,
Лайăх мар иккен ăна.
Вăтанма кун пек пултарĕ
Салтакран салтак кăна.

Юрататъ кăтра кубанкăн
Кавалеринчи чапне,
Лартнă вăл ăна хăяккăн
Сулахай тăнлав çине.

Кӳршĕри Тухтаров лайăх,
Кун пекех хитри çинчен
Халиччен пĕлмен Михайлов,
Шутламан та халиччен.

Чăкăлтăшсăр ăшă чунĕ
Ӳкнĕ çырă куç çине,
Тăп тытать тумтирĕ унăн
Яштака кĕлеткине.

Гимнастеркине пăхма та
Юрататъ, тытать яка,
Кĕскерех кунчаллă атă
Куçкĕски пек йăлтăркка.

— Халĕ иккĕн юнашаррăн
Калаçма хирте пире
Аванрах,—тесе Тухтаров
Тухрĕ час правленирен.

Тĕлпулу, ватти каларĕш,
Пуçланать калаçупа.
Хирелле ута пуçларĕç
Иккĕш ешĕл урампа.

— Ман чуна пăртакçă тарăн
Анланса пĕлес тесен,
Эс, Иван, итле,—Тухтаров
Сăмахне пуçлать хуллен.

— Эпĕ çулăм çитнипе
Пĕр сар ылтăн кĕркунне
Лекрĕм хам юратнипе
Утлă çар дивизине.

Ачаран лашасене
Юрататтăм эп ялта,
Куртăм унăн илемне,
Паттăр юртнине çарта.

Вăрçă хирĕнче, Иван,
Намăса кĕмерĕм эп.
Ман ята килсе тухман
Санăнни пекех хисеп.

Вăрçăра пуçа чикмен,
Пулнă эпĕ те матур.
Ун çинчен пĕлтерекен
Орденсем вунвиççĕ пур.

Çапăçу çинчен сана
Каласа пани кунта
Кулачран пуян çынна
Панă пек кулач тата.

Сакăр çул хушши çапла
Утлă çар дивизине
Вăя патăм, хам яла
Килтĕм пĕлтĕр кĕркунне.

Эпĕ сакăр çул хушши
Сӳремен, акман, вырман.
Ĕçлеме çитейĕ-ши
Хăнăху, пĕлӳ те ман?

«Шурăмпуç» колхозĕнче
Председатель кам пулман?
Ячĕсем хутсем çинче
Юлнă та пайти юлман.

Юлашки вара ĕçке
Ернипе, колхоз мулне
Кунсерен салатнă-çке
Пĕтĕм çитмĕл çич енне.

Председатель, чăн-чăн мур,
Мĕн кăна-ши вăрламан!
Алă айĕнче мĕн пур,—
Ярса тытнă, хăварман.

Вăтăрса илет çĕрле
Алăкăн йĕс хăлăпне,
Тыттарать пĕр черкелле
Кўршĕ ялăн çыннине.

— Эсĕ пулнă капитан,
Хамăр çын,—тесе мана
Килнĕ хыççăн уйăхран
Лартрĕç пысăк вырăна.

Вăйлатас хуçалăха!—
Терĕм эпĕ, каçсерен
Сиртĕм хамăн ыйăха
Шухăшпа сĕмленнĕрен.

Вăрçă чухнехи суран
Чĕрĕлсе хускалнипе
Алăра тăмарĕ ман
Çирĕп тытнă тилхепе.

Виçĕ уйăх шăп хĕлле
Хулари больницăра
Выртнă хыççăн хам киле
Çитрĕм йывăр вăхăтра.

Витесем çинчен шăлса
Антараççĕ улăма.
Пыркалать тăвар сапса
Выльăха апат пама.

Ырханкка лашасене
Çĕклесе тăратмалла.
Тарăхатăп—хăш чухне
Ĕç пырса каймасть алла.

Мĕн калаççĕ-ши çынсем?
Намăс та хама, инкек.
Туйăнаççĕ орденсем
Тутăхма пуçланă пек.

Кӳршӗри колхозсенчен
Пулăшу ыйтас пулсан,
Илесси пулмасть кивçен—
Ӗлӗк илнӗ те паман.

«Кăмака çинчи икел
Кашласа хăпариччен
Пуясси пулмасть иккен
«Шурăмпуç» колхозӗнчен».

Çавăн пек усал сăмах
Халӗ те илтме пулать
Хăшпӗр ялсенче, анчах
Çитӗ пирӗн ырă ят.

Эпӗ кайрăм райкома,
Ман ыйту лартас пулать.
Колхоза ураланма
Парти пачӗ вăй-хăват.

Пулăшу парсан, вара
Ӗç каймарӗ сулăнка.
Иртрӗ пирӗн колхозра
Йӗркеллех çурхи ака.

Мыскара кăларакан
Аслă мар этем шутне
Кӗтӗм-кайрăм ăнсăртран
Эпӗ пӗлтӗр кӗркунне.

Эпӗ хам пек салтака
Суймăп ӗнтӗ, тупата.
Чăн, пӗрре Ильин Лукка
Пырса тухрӗ ман пата.

Эпӗ пулнă вăрманта,
Тин çеç килнӗ сунартан,
Тытнă ик мулкач, тата
Асансем те пурччӗ ман.

Сунарта тӗрмешнипе
Тем те чикнӗ кӗсъене,
Хунă пуль сисменнипе
Капсюле, пăшал тарне.

Районра мана пĕрре
Хытă пачĕ секретарь:
— Халь те санăн кĕсъере
Пур-и леш хăватлă тар?

Секретарь вăрçать мана,
Ал памасть Ильин Лукка.
Эп юри паман ăна
Ун пек пăсăк тапака.

Таврари мĕнпур çĕртен
«Шурăмпуç» колхоз хирне
Тăм илме килмессерен
Пăсрĕç тырă пуссине.

Çиллĕм ман хăш чух кĕске,
Çиллĕме чарман чухне
Ытларах ятларăм-çке
Эпĕ сирĕн çынсене.

Пилĕк-ултă çул хушши
Имшерленнĕ колхоза
Юсама вăй пулмĕ-ши,
Кĕртмĕн-ши мана ăса?

Шухăш пур санран ыйтма—
Вăйсăр пирĕн пĕчĕк ял.
Наступленине кайма
Çын та, пурлăх та сахал.

Пĕр пĕччен ларса çитет,
Акăшкӳл дивизине
Ман илсе пырас килет
Хамăн Пурăшвар полкне.

Эс мана, Иван, ĕçре
Хапăл ту, ĕнен те шан!
Пулăп эп кĕрешӳре
Вăрçări пек капитан.

5

Мăнкĕрӳ каларĕшле,
Эпĕ мар кăна калап.
Районта килтен киле
Çавăн пек çӳрет халап.

Трактăра савман чире
Ернĕ те Ильин Лукка
Кĕрлекен индустрирен
Пăрăнасшăн аякка.

Халĕ тимĕр-тăмăртан
Тунă пур япалана
Тиркеме ним мел çукран
Туянать хăшне кăна.

Яланах çуран утма
Килĕшмен пирки илет
Икĕ çăмăл кустăрма
Кустарма велосипед.

Вăл чунтан савать иккен
Ăшĕ типнĕ самантра
Лăкăр-лăкăр вĕрекен
Пĕчĕк йĕс сăмавара.

Кăмăллать тата Лукка
Сисĕнми кăна ачаш
Сарă мăйăхне яка
Илекен чипер хачча.

Вăл тытма пĕлет хăйне
Çамрăк çын пекех матур:
Шурă çӳç пĕрчисене
Кăларма пĕр хăпчăк пур.

Килĕнче индустрирен
Пур тата Ильин Луккан
Апат-çимĕç кунсерен
Пĕçерме чугун хуран.

Алăк хăлăпне, йĕппе,
Люшкана, вак-тĕвеке
Йĕркешерĕн пĕтĕмпе
Асăнма эп маннă-çке.

Кашăк-тирĕк йывăçран,
Шăвăççи пĕрре те çук.
Сиксе юлнă ăнсăртан
Кирлĕрен кирли—утюг.

Вăл пĕччен тытать хăйне,
Районра тĕрте-тĕрте
Тусĕсем каланине
Хăлхана чикмест пĕртте.

Ўкĕте кĕртме тăвар
Пĕр кило çитерĕр те
Унтан ыйтăр—пархатар
Пур-и трактăрăн хирте?

— Хамăрăн та вăй çитет,—
Тенĕ пĕр сăлтавĕпе
Вăл ялан чĕрре кĕрет,
Килĕшмест ыттисемпе.

Çакă пăсăк шухăшне
Пăрахман пирки кăна
Чарса пычĕ çуркунне
Вăл çапла «Венерăна».

Пĕтĕмпе кăçал уя
Тракторсăр сухаласа
Районта колхоз кая
Юлчĕ пĕр-пĕччен тăрса.

Акă халь, хĕвеллĕ кун,
Ĕç сахал правленире.
Хавасланнă чунĕ ун
Туртрĕ ешĕл уй-хире.

Юратать Лукка пичче
Такăр çулăн тусанне
Хускатса кăна пĕччен
Хурçă тусĕ чупнине.

Грузовик-и, трактор-и
Хирĕç пулнă чух кăна
Тăр-тăр-тăр тăвать ури,
Хăратса илет ăна.

Вунă çул хушши кивве
Тухайман велосипед
Кăлтăр-кăлтăр пĕр кĕвве
Кĕнĕ те чипер вĕçет.

Икĕ çăмăл кустăрмин
Йĕпписем хĕвел çинче
Пĕр-пĕрерĕн палăрми
Ялтăраççĕ ик енче.

Трактор чавнă вырăнтан
Кансĕр иртнĕ вăхăтра
Çĕкленет çилли Луккан,
Ятласси килет вара.

Кисренет велосипед,
Çăмăл мар пыма ăна.
Турттарса пыма тивет
Халĕ унăн ик çынна.

Чи кая кĕске хăма
Хунă ларкăч вырăнне.
Ун çинче ларса пыма
Питĕ йывăр инкене.

Иккĕш—пиччепе инке—
Каçченех вăрахлăха
Савăнма каяççĕ-çке
Аслă уçă улăха.

Канмалла тӳлек çĕрте
Юмахри пек ырлăхра,
Хăварман вĕсем килте
Хуранпа сăмавара.

Пултăран яшки унта
Пĕçерме шутланă май,
Илнĕ йӳçĕ турăх та,
Пăрăç та тăвар, какай.

Чашăк-тирĕк хăш чухне
Ланкашкаллă çĕрсенче
Шăлтăр-шăлтăр тунине
Итлесе пырать пичче.

Савăнса пырать Лукка,
Çавăнпа та «айра-ра»
Текелет те аякка
Янратса ярать юрра.

Чӑннипе юрлать теме
Юрамасть-тĕр, ма тесен
Кĕввине тытма пĕлме
Çук асра сӑмахĕсем.

Хĕпĕртет, анчах та çул
Акӑшкўл хирне çитсен,
Тарӑхса вĕри куççуль
Кĕç тухатчĕ куçĕнчен.

Путене кĕми çăра,
Çумсӑр-курӑксӑр таса
Акӑшкўл тырри уйра
Хумханать хавасланса.

Тинтерех папкисенчен
Тухнӑ пучахсем кунта
Луккасен колхозринчен
Паркарах та, вӑрӑм та.

Кун пек ешĕл тинĕсе,
Пысӑк пурлӑха курсан,
Тем пек хытӑ кĕвĕçсе
Ыратать чĕри Луккан.

— Эх, аван!—тесе инке
Каласа хуни вара
Луккана ўкерчĕ-çке
Ӑнсӑртран сивлек тара.

— Çитĕ, карчӑк, ан лӑрка!—
Тесшĕн пулчĕ, ӑнсӑртран:
— Пирĕн тырӑ начаркка,—
Тет инке, хыçри шуйттан.

Тўсеймест Лукка çилле,
Вӑл çĕклерĕ аллине,
Çил вĕрсен те ўкмесле
Пусса лартрĕ карттусне.

Тулӑ пуссинчен тарса
Хӑтӑлма кирлех ӑна—
Тӑр-тӑр-тӑр тĕрлеттерсе
Сиктерет машинӑна.

Утмăлти ал-урара
Пур иккен вăйпа тĕрек—
Вăл пырать тавлашура
Финиша васканă пек.

Сулахай енне çакса
Янă леш чугун хуран
Ласканса, çапкаланса
Каллĕ-маллĕ пынăран

Панклатать леке-леке
Чăркăш арăм урине.
— Сапăр пул!—тесе инке
Тархасларĕ мăшăрне.

Чаплă тулă уйĕнчен
Иртсе кайнă каясса,
Пурпĕр халь те чĕринче
Кĕвĕçни тăрать касса.

Мĕн тесен те ан калаç,
Ан та хутшăн шăв-шава—
Хўтерсе çитсе пулмасть
Героя, Михайлова.

Ăслипе тавлашакан
Пулнă ял кулли,—тесе
Ваттисем мĕн авалтан
Ўкĕтленĕ вĕрентсе.

Ваттисем тесен, Лукка
Килĕшмест, пуçне сулать,
Çамрăксем чаппа хака
Тухнине асра тытать.

Ватă çын—тăватă çын—
Тенĕ ĕлĕкрех, анчах
Халĕ ун пек каланин
Йăнăш енĕ пур-пурах.

Тытăнать Лукка пичче
Ăшĕнче калаçăва:
— Тĕслĕхрен, пĕлес енчен,
Илмелле Михайлова.

Эпĕ утмăл çулсенче.
Вăл мĕскер, ача кăна.
Эпĕ унăн çумĕнче
Тăрăп-и тăват çынна?..

Ăс валеçнĕ вăхăтра
Çăпата туса килте
Юлтăм-ши ухмахлăхра,
Лекрĕм-и сехремете?

Икĕ çул вĕрентĕм те,
Тилмĕртĕм тата кайма.
Йывăр калăппа атте
Ислентерчĕ çурăма.

Эпĕ, вунпĕрти ача,
Çăпата сутма вара
Кайкалаттăм Карача,
Кĕрлĕ-шавлă пасара.

Çăпата суткаласа
Тупрăм-и нумай пайта—
Шăлсăр йытă пек супса
Эпĕ пурăнтăм ялта.

Ленин самани тухсан
Вĕренме пĕлмерĕм-çке,
Юлтăм эп çаплах айван,
Ăнсăр-тăнсăр мĕштĕркке.

— Мĕштĕркке!—тесе хăйне
Вăл вăрçса çиленнипе
Васкатать машинине
Энĕш шывĕ хĕррипе.

Чарăнать Лукка канма
Пĕр уçланкă хĕррине—
Икĕ пысăк ытама
Кĕрейми юман айне.

Машини çумне çыхса
Хунă пĕчĕкçĕ пуртта
Вăл илет малтан салтса—
Ĕçлесси нумай кунта.

Вăл иртет нумай турат.
Икĕ типĕ хăваран
Пĕр хуран çакма лартать
Путăк вырăнта такан.

Вутă-шанкă, хыт-хура
Пуçтарать, унтан тата
Çаврăнать уçланкăра
Пултăран тата-тата.

Шăнкăр-шăнкăр юхакан
Пăр пек сив çăл кусĕнчен
Ăснă шывĕ тăрăран
Тутанса пăхать пичче.

Хăвăрт вăл чĕртсе ярать
Акă ĕнтĕ вучаха.
Тĕтĕм шăрши саланать
Ерипен тавралăха.

Сулхăнра ĕçе пĕлми
Çўремен инке ахаль,
Хатĕрленĕ çĕрулми,
Какая та çунă халь.

— Пултăр ывăннă çынна
Çăмăл, тутлă канасси!—
Илтĕнсе каять ăна
Харăс икĕ çын сасси.

Ăвă вучĕ ун ўтне
Лекнĕ, тейĕн—çăмăлкка
Туйăнса ура çине
Яшт сиксе тăрать Лукка.

Иванпа хайхи Тимаç
Таврăнаççĕ пулăран.
Темшĕн кăмăлне каймасть
Йĕкĕтсем килни паян.

Иккĕшин те кусĕнче
Ырă шухăш чăп тулли.
Иккĕшин те хул çинче
Силленет вăлта хулли.

— Виçĕ колхозран пĕрре
Пулнине Лукка пичче,
Куртăн пулĕ тĕлĕкре
Çеп-çемçе çерем çинче?—

Тет Тимаç—ялан витлес,
Йĕкĕлтес текен йĕрке
Сисĕнмест, анчах та леш
Çиллине тӳсмерĕ-çке.

— Лĕкĕрти, мана ăса
Вĕрентме хăтланиччен
Сан курасчĕ çумласа
Пусăра пĕрре пиçен!

Вăтăрмĕш çулхи пекех
Сирĕн шухăш—çĕрĕк çип
Тăсăлать-и тек-текех,
Тумалла-и перегиб?

Иксĕре те тепĕр хут
Гигантсем туса хума
Парăп, халĕ ăслă хут
Çырăп эпĕ райкома.

— Ырă пул-ха, ан лăрка!—
Тет хăрана пек инке,
Вăл сиресшĕн аякка
Кун пек чăркăш инкеке.

Упăшки çаплах тытать
Питĕ харсăр пек хăйне,
Пĕр çĕклет те пĕр çапать
Карттусне çерем çине:

— Тăм ура гигантăра
Эпĕ хумăп ним хака,—
Терĕ питĕ паттăра
Тухнă пек Ильин Лукка.

Лукkана Иван кунта
Хирĕç чĕнчĕ:
— Чим-ха, чим!
Эсĕ пĕчĕк хуранта
Пăтă тутлă тесшĕн-им?

Сирӗн пӗчӗк колхозри
Ӗҫченсем, Лукка пичче,
Пысӑк ҫулсӑр юлччӑр-и
Ҫип-ҫинҫе сукмак ҫинче?

Машинсем кӗрле-кӗрле
Тӑракан хуҫалӑха
Пирӗн халӗ чӗнмелле,
Ырӑ тусӑм, халӑха!

Пӑхкалать Лукка кӑн-кан,
Шухӑшлать, калать вара:
— Чӑкӑлтӑш пекки, Иван,
Пулмӗ пирӗн хушӑра.

Тиркесе пуҫна ан ус,
Яланах пӗрле утма
Чӑмӑрта эс, шӑллӑм-тус,
Манӑн вата аллӑма.

Чӑмӑртать, анчах Иван
Чӑрр пӑхать Лукка ҫине:
— Эсӗ мӗншӗн Тимаҫран
Хытӑ писнӗ ку чухне?

Виҫӗ пуслӑх чӗлӗме
Астуса пыма ӗҫре,
Ҫунӗн-ҫӗрӗн кӳренме
Кирлӗ марччӗ иксӗре.

— Алӑ пар, Лукка пичче,
Килӗшетпӗр,—тет Тимаҫ,—
Пирӗн пысӑк ҫул ҫинче
Ҫун пек чӑркӑш юрамасть.

— Эй, ҫитет, сире, Лукка,
Хирӗҫ-марӑҫ пуплени!
Туссене кӗтет яшка!—
Илтӗнет инке чӗнни.

— Хуранна, инке, пушат,
Кил-ха пулӑ ӑшалас!
Аллипе чӗнсе калать
Уҫӑ сасӑллӑ Тимаҫ.



Халĕ хăйĕн карттусне
Пĕшкĕнсе илсе пичче
Лăпкăн лартрĕ пуç çине
Икĕ тусĕ умĕнче.

6

Атăл хĕрринчи çăра çаран
Çавасен янравĕнче çаралчĕ.
Кунсерен нумай-нумай капан
Капланса унта-кунта хăпарчĕ.

Аслă улăх халь те илĕртет,
Кăмăла кĕрхи кунччен вăл кайĕ.
Ыйхине манса ире кĕтет,
Шăрататть юрра хавасlă кайăк.

Ешĕл те кăтра çӳçне хырсан та, ун
Пĕтеймен илемĕпе чеченĕ.
Сиплĕ çумăр чашкăртса пĕр-икĕ кун
Лӳшкетсе кайсан, каю çĕкленĕ.

Сĕр-сĕрлет пыл хурчĕ çеçкесем çинче,
Пыл пухма шăнтсан кăна пăрахĕ,
Каçсерен çыран хĕррисенче
Мăкăрланĕ пулăçсен вучахĕ.

Пĕр самант та чухăн мар çаран,
Иксĕлмест нихçан та ун сĕткенĕ,
Унăн сиплĕ пурлăхĕ ялан
Ёнесен çиллисенче сĕтленĕ.

Сарлака çаранăн çийĕпе
Çӳреме пире ансат та лайăх.
Карăш юрринче чĕтренĕ пек
Туйăнать хӳме пекех хăяхлăх.

Типĕ утă капана кĕрсен,
Лăплансан çаван çинçе янравĕ,
Аслă Атăл хĕрринче çуллен
Халăхăн пулса иртет уявĕ.

Çамрăкки, ватти те чи паха
Костюмпа кĕпе, пушмак та атă
Тăхăнса утаççĕ шавлă улăха
Çак куна кĕтеççĕ пур ялта та.

Лавсемпе машинăсем çинче
Çамрăксем юрла-юрла пыраççĕ.
Марисем те Атăл леш енчен
Пирĕн аслă улăха каçаççĕ.

Ирĕкре çӳре те ан тарла,
Тĕркĕш халăх хушшинче ан тарăх!
Уçăлма инçе вăрманалла
Утрĕç Иванпа Тимаç, Тухтаров.

Пур çёрте те халăх савăнать,
Пур çёрте те юрă-ташă тупăн.
Пĕрĕнсе те карăнса калать
Ташă кĕввине нумай хуткупăс.

Çĕмĕртпе хăва таврашĕнче
Çĕр хитре, тата илемлĕ пултăр!
Вĕлкĕшет чипер хĕрсем çинче
Тĕрлĕ тĕслĕ хӳхĕм пурçăн тутăр.

Ватă пысăк хурама çине
Сĕрĕм пек кăвак тĕтĕм хăпарнă.
Çавăнта «Венера» сыннине—
Луккана—курма ик тус шутланă.

Васкаса Лукка вĕсем умне
Тухрĕ те:—Салам-аликкĕм!—терĕ
Çутă кăсăруклă карттусне
Хăвăрт хыврĕ те çӳле çĕклерĕ.

Пухăнар-ха хурама айне!
Тутанар!—тесе Лукка уттарчĕ,
Ункă-ункă чĕлĕм тĕтĕмне
Талпиçен çеçки çине хăварчĕ.

Çынсене кĕтсех инке паян
Тăрăшса шăрттан яшки пĕçернĕ.
Улăхри кĕрекене ларсан,
Пур апат та тутанма типтерлĕ.

Вăрăм кун, анчах та унăн çук
Ыртарни, ялан ун пур чиперлĕх.
Авăтать кана пĕлми куккук,
Явăнать шурсем çинче текерлĕк.

Анакан хĕвелĕн çук ăшши,
Сапаланă вăл хĕп-хĕрлĕ çутă.
Нӳрлĕ сывлăшра чечек шăрши
Сарнă капанти тип-типĕ утă.

Эп çыратăп çак йĕркесене
Мускаврα хĕлле, анчах та юррăм
Илĕртет çурхи çыран енне
Савнă хӳхĕм хĕр пекех матуррăн.

Хӑлхаран каймасть паян та ман
Кайӑксен юрри, ҫава янравӗ,
Каҫсерен чӗнет мана ялан
Пулӑҫсен вучахӗ те калавӗ.

Ҫырнӑ чух куҫа хупатӑп та,
Тарӑн шухӑша кайса ларуҫӑн
Асамат кӗперӗ Атӑлран
Шыв ӗҫет. Ҫанталӑк янкӑр уҫӑ.

Манӑн пӳлӗме пырса кӗрет
Атӑл шывӗ, улӑхӗ, вӑрманӗ.
Ман хӑват вара тапса сикет
Ҫырӑнать хаваслӑ сӑввӑм манӑн.

... Улӑх тӑрӑх инкепе Лукка,
Иванпа Тимаҫ хуллен утаҫҫӗ:
Мӗлкисем пурин те сарлака
Ӳкнӗ сӑрт ҫине, шуса пыраҫҫӗ.

Пилӗк-ултӑ ҫын ҫыран енчен
Килнине Иван курса палларӗ:
Курӑнать ҫак халӑх хушшинче
Пысӑк ҫын—обкомӑн секретарӗ.

— Сирӗн райкома ӗҫе килет
Акӑ ҫӗнӗ секретарь. Паллашӑр.
Агроном, ӗҫе аван пӗлет.
Килӗшмен чухне унпа тавлашӑр.

Пурсӑр та эсир паян хастар—
Ёлӗкрех Ильин тулашаканччӗ,—
Терӗ те хаваслӑ секретарь
Йӗркипе пурне те алӑ пачӗ.

Ҫӗнӗ секретарь ватах та мар,
Хӗрӗхе ҫитмен-тӗр, кӑвакарнӑ.
Алӑ панӑ чух: Туссем пулар!—
Терӗ салтакла, татса, чунварлӑн.

— Ахалех эп ҫыртӑм обкома.
Перегиб пулман. Ман чун ӑнланчӗ,—
Пӗр сӑмах та урӑх калама
Тупайман Лукка пичче вӑтанчӗ.

— Тракторсем «Венера» хирĕнче
Кĕрлесен, мĕнле, Ильин юлташăм?—
Куçхарши вăрманĕ айĕнчен
Секретарь пăхса илет ачашшăн.

Çĕнĕ секретарь уксах пăртак.
Вăл утать Михайловпа пĕрле.
Паллă ĕнтĕ: халĕ ик салтак
Пĕр-пĕрне чиперрĕн пĕлмелле.

Каччăсем юман катка çине
Сăранлатнă вăкăр тирĕ карнă,
Кантăрлах юри патаксене
Тăрăшса чутланă та якатнă.

Икĕ каччă ташă кĕввине
Çакă анлă тир çинче калаççĕ,
Пĕтĕм улăх тăрăх инçене
Сывлăша вĕсем ян-ян яраççĕ.

Шывлă каткана çапа-çапа
Иккĕн харăс тӳнклеттернĕ майăн,
Тавлашаççĕ пысăк сасăпа
Çинçерех хуткупăссем нумайăн.

Секретарь те, ыттисем пурте
Вăйă хушшине пырса тăраççĕ,
Халăхпа пĕрле утаççĕ те
Халăхпа пĕрле вĕсем юрлаççĕ.

Вăйă тăп тăрать те, тавлашса
Пилĕк ултă мăшăр хĕр те каччă
Тытăнаççĕ тăпăрти ташша—
Пур вĕсен тапса тăран хăвачĕ.

Пĕр каччи обком секретарьне
Вăйă варрине чĕнсе ташларĕ,
Тытăнать Иван та ташшине,
Йыхравран Тимаç та пăрăнмарĕ.

Секретарь ларать ури çине,
Лапчăнать, сиксе тăрать çăп-çăмăл.
Сарлака çамки çинчен çӳçне
Аллипе сире-сире пырать вăл.

Луккана чӗнмен, анчах та ун
Туссенчен юлма ури имшер-и,
Ӳтӗнче сахал-и шухӑ юн,—
Вӑл вӑййа пӑхса утса ҫӳрерӗ.

Ҫук тӑватӑ ҫил ҫерем ҫинче,
Ҫилсӗр лӑпкӑ каҫхине вӑш та вӑш
Вӗҫтерсе килеҫҫӗ ик енчен
Лапчӑнса та ярӑнса тӑваттӑш.

Хире-хирӗҫ пулчӗҫ те вӗсем
Каялла сиккипеле каяҫҫӗ.
Ёлкӗрес тесе хуткупӑссем
Хӑвӑрт пӗрӗнеҫҫӗ, тӑсӑлаҫҫӗ.

7.

Никам вырман ыраш шӑрши
Ҫилпе хумханнӑ варкӑшса.
— Атака халь пуҫланӗ-ши?—
Михайлов кайнӑ шухӑша.

Ун танкӗ ларнӑ вӑрманта
Пер шурӑ хурӑн айӗнче.
Хӗлле лаштра вӑрман кунта
Ахлатнӑ вӑрҫӑ вутӗнче.

Вӗри тӑхлан чӗре-чӗре
Хӑварнӑ йывӑҫ вуллине
Туратсенчен куҫҫуль ҫӗре
Тумланӑ пулӗ ҫуркунне.

Хӑп-хӑрӑк тӑнӑ усӑнса
Хуҫса пӑрахнӑ пӗр турат.
Ҫулҫисене калаҫтарса
Пуҫтарнӑ хурӑн вӑй-хӑват.

Хаяр тупӑсемпе пӗрле
Минометсем кӗрленипе
Тусан хӑпарнӑ ҫӳлелле,
Хуралнӑ кӑн-кӑвак тӳпе.

Ҫуна пуҫланӑ вут-хӗмре
Ҫурла тивмен ыраш пусси.
— Мала!—янранӑ рацире
Мухтавлӑ генерал сасси.

— Мала!—тесе приказ кĕскен
Хушать хастар танкистсене.
Танксем вара сике-сике
Васкаççĕ Прохор станцине.

Кăвар та, тĕтĕм те çăра
Арпашăнса тăрать малта.
Урса хаплатнă таврара
Хăватлă бомба, мина та.

Михайлов хăй умне сăрта
Хăпарнă хăмăр танксене
Перископран сăнанă та
Танкне пытарнă çурт хыçне.

Усал чĕлхеллĕ хĕрлĕ вут
Алхаснă пĕчĕк станцире;
Пĕрре, тепре, хутран та хут
Хыпса çуланă çурт-йĕре.

Унта-кунта урамсенче
Шарт çурăлнă снаряд, вара
Чулсем тĕпреннĕ çуртсенче,
Çĕкленнĕ çӳлелле тăпра.

Хĕвел, мотор, тулти кăвар
Ытла хĕртсе çитернипе
Танкра ӳте хупланă тар,
Çамка та, çурăм та йĕпе.

Иван малти тăшман танкне
Лектернĕ—курăннă ăна
Фашист эсрелĕ вырăнне
Капан пек пысăк вут кăна.

Тăвата çынлă экипаж,
Пытанчăк çуртăн хӳттинче
Персе тăрса, кĕлпе чăш-паш
Хăварнă хăмăр танксенчен.

Михайлов тӳрĕ пенипе
Иртме паман нумай танка,
Вĕсем вут-çулăм хыпнипе
Ванса саланнă аякка.

Михайлов хĕрĕнсе тата та
Металл хыптарнă тăшманне.
Вара чака пĕлмен бригада
Çул уçнă Белгород енне.

Людмила Прохор станцине
Кĕрес чухне çерем çинче
Кантаркалать урисене
Уяр çанталăк ăшшинче.

Утма Воронеж хулинчен
Пуçланă вăл кăçал çулла,
Çуран танккана пĕр-пĕччен,
Çулне çитернĕ кунталла.

Иван Михайлов танкĕпе
Иртсе çӳренĕ çулсене
Çырса кĕртесшĕн пĕтĕмпе
Людмила хăйĕн романне.

Михайлов мар кĕнекере,
Малахов тенĕ героя,
Чуна канма паман ĕçре
Вăй хунă ĕнтĕ чылаях.

Михайлов Атăл хĕррине
Ача чухне кайни çинчен
Пурне те çырнă романне
Хаваслă кăмăл туличчен.

Каç-каç вăл шавлă вăйăра
Хĕрпе пĕрле утни çинчен
Халь çырнă, çакă самантра
Кӳлешнĕ çамрăк чунĕнче.

Иван тӳлек çĕрле ялта
Чипер хĕре чупгунине
Пăртак çырса кăтартнă та
Куççуль тумланă хут çине.

Ӳкернĕ вăл Иван сăнне,
Ана юратнă—романа
Ялти хĕре кĕртмен чухне
Кичем пек туйăннă ăна.

Кичем те тӗрӗс мар, тесе
Шутланӑ та, кӳлешнипе,
Каллех вӑл ыйхине сирсе
Хӑех тертленнӗ ҫӗрӗпе.

Кӑвар та, тӗтӗм те металл
Сиксе ташланӑ ҫӗр ҫине
Пӑхса ларать Людмила халь
Яп-янкӑр уҫӑ ирхине.

Ҫӗре тӗпченӗ пек уҫать
Пӑртак саралнӑ курӑка.
Пӗр кӑткӑ сӗтӗрсе пырать
Пӗр хӑрӑк вилӗ шӑрчӑка.

Ҫӗре ӳкмест пӗр мӗлкӗ те
Таса тӳпе. Хӗртет хӗвел.
Сап-сарӑ хӑмӑллӑ хирте
Нумай сурат, нумай ҫӗмел.

Ҫухалнӑ окопсем хирте,
Сап-сарӑ хӑмӑл айӗнче.
Юлман хӗрес те, нимӗн те
Фашист масарӗсем ҫинче.

Килте ача-пӑча кӑна
Тупать те тутӑхнӑ хурҫа
Леҫсе парать магазина,
Тетрадь илме пухать укҫа.

Людмилӑн пур-ха каясси
Тата Ахтырка хулине.
Хайранӑ пуртӑсен сасси
Кӗрсе тӑрать ун хӑлхине.

Кунта, хӑрушӑ вӑрҫӑ-харҫӑ
Урса кӗрленӗ таврара,
Ҫӗчен ҫынсем паян лартаҫҫӗ
Кӗлленнӗ ҫӗр ҫинче пура.

8

Кӗрхи йӗпе-сапа ҫитес чухне
Хӗвеллӗ те тӳлек кунсем пулаҫҫӗ,
Эрешменсем хыт-хурасем ҫине
Китай ҫиппи пек картасем караҫҫӗ.

Ача-пӑча ҫарран чупать тулта.
Кунсем уяр. Каҫсем хаяр пӑртакҫӑ.
Кӗрхи кун пек илемлӗ вӑхӑта
Ҫӗлен эрни тесе пирте калаҫҫӗ.

Килес сивве сисет те—шӑтӑка
Кӗрсе выртма тивет иккен ҫӗленӗн.
Веҫет кикак хуркайӑк аякка;
Юррисене юратнӑ эп, итленӗ.

Вӗсен виҫшер кӗтеслӗ картисем
Чуна ҫунтарнӑ пек йӗрсе иртеҫҫӗ,
Ҫатан ҫине, ҫынсем ҫине вӗсен
Хуҫланчӑк вӑрӑм мӗлкисем ӳкеҫҫӗ.

Анчах та сисӗнмсет кӗрхи тӗнчен
Эрленнӗ сӑнӗпе сивлек кичемӗ.
Тӑрать вӑрмансенче, уй-хирсенче
Куҫран тухми, асран кайми илемӗ.

Тухса ҫӳре ҫулпа, сукмаксемпе,
Тинкер пӑхса, илем тени мӗнне пӗл!
Хирте выртать таджик кавирӗ пек,
Калча лӑс пек ҫӑра, парка, ем-ешӗл.

Вӑрман яшсен вӑййи пекех тумне
Тем тӗрлӗ чакӑр сӑрсемпе пӗветнӗ.
Яштак пӳ-силлӗ вӑрӑм вӗрене
Вӑтаннӑ ҫамрӑк хӗр пекех хӗрелнӗ.

Кӗрхи мулне пурне те ҫут тӗнче
Ҫынна пӳлме тулли хаваслӑх панӑ.
Пуралла сарлака нӳхрепсенче
Выртать хӑярӗ, кишӗрӗ, кӑшманӗ.

Каҫать халь Атӑл леш енне хӗрарӑм,
Вӑрмансенче шавлать, пӗлмест тухма;
Палан татма ҫӑка чӗресӗ тарӑн,
Хутаҫӗ пысӑк мӑк ҫырли пухма.

Хурсем вӗҫсе каҫаҫҫӗ сӑрт-тӑва,
Кӑркка кӑрӑлтатать, ытла ҫуланнӑ.
Вӗсем пурте ик хутлӑ хуплӑва
Кӗрсе писме, апат пулма ҫуралнӑ.

Çурхи ачаш каçпа çурхи ире
Мухтать, турат çинче ларса саркайăк,
Мухтав юрри шăрантарма пире
Кĕрхи пуянлăхра питех те лайăх.

Хисеплĕ шăпчăк çĕмĕрт садĕнче
Киленнĕ пек, эпир ун чух юрлатпăр,
Юмарт колхоз сĕтелĕ хушшинче
Кĕççе çинче ура явса ларатпăр.

Аçта кайсан та, халĕ сисĕнет
Кĕрхи тулли пуянлăхăн мухтавĕ.
Лавккасенче шăр-шаррăн чĕрĕлет
Яту костюм валли хула пуставĕ.

Ермиккере карусельсем çинче
Хаваслă çамрăк-кĕрĕм ырă куртăр,
Вучах пек çунтăр хӳхĕм хĕрсенче
Чие пек шерепеллĕ пурçăн тутăр!

Тахçан Михайлов кĕтнĕ пек, кăçал
Хăватлă ĕçсене туса пымалăх
Канашласа пĕрлешрĕ виçĕ ял—
Пулса тăрать тĕреклĕ пĕр хуçалăх.

Пĕрлешнĕ халăх хăмăллă хирте
Иван Михайлов докладне итлерĕ.
Пĕр харăс ал çупни кĕрлерĕ те
Çырансенче вăрах кумса çӳрерĕ.

Иван хĕрсе каланă вăхăтра
Çынсем умне тухса тăрать малашлăх:
Миллионер пулса хастарлăхра
Аталанса хунамалла хуçалăх.

Вăрман çĕкленĕ. Ырă уçланка
Колхоз çĕршер вĕлле лартма пултарĕ.
Кăна итленĕ чух Ильин Лукка
Хавасланса утса çӳре пуçларĕ.

Хĕп-хĕрлĕ çăварне карса ахаль
Çыран выртать—ăна таса шыв тулĕ,
Вара какалĕ хур та кăвакал,
Сĕрмессерен çакланĕ самăр пулă.

Таттисĕр ашкăрса çарансенче,
Çĕлен шуса тухми çĕкленĕ курăк,
Пулать вара колхоз фермисенче
Чара тулли хăйма та, çу та турăх.

Çĕн уйăх пек çурлан, юман тăпачăн
Кивелнĕ ĕмĕрĕ çырлахмалла—
Ăста та ăслă техникăн хăвачĕ
Пырса кĕрес пулать патвар алла!

Çулма, вырма, çапма та питĕ кирлĕ
Машинăсем—патшалăхран илме,
Кĕрлеттерме пире нумай май килĕ,
Хаваслантарĕ пирĕн этеме.

Шыва бетонлă вăрăм пăрăх çулĕ
Витесене кĕртсе юхтарĕ-ха,
Ăшши те, сивĕ шыв та хатĕр пулĕ,
Куллен шăварĕ мăнтăр выльăха.

Çăм илнĕ чух çыхса пăрахнă сурăх
Тарлатмĕ малашне хĕрарăма.
Çĕр вольтлă хачă парĕ пысăк ырлăх,
Анланнă пек пултарĕ çăм касма.

Ĕне сума чипер машина пулĕ,
Çăка çӳпçесĕрех уçланĕ çу.
Малта выртать колхозăн такăр çулĕ,
Телейлĕ, шанчăклă, илемлĕ çул.

Анчах та ĕмĕртен ĕçчен хĕрарăм
Килте лараймĕ ĕнсине хыçса,
Пăхса ӳстернĕ кантăр сарăм-сарăм
Чăнах та пулĕ улăхра хуçа.

Юмах юптарнине итленĕ евĕр
Хĕрарăмсем шанманнине сиссен:
— Пыра-киле пулман ĕçе вĕренĕр!—
Тесе хурать Иван каланăçем.

Укçи-тенки колхозăн пулмалла,
Ĕçчен çынсен кĕсйисенче янратăр!
Эппин бюджетшăн тăрăшса хăмла
Шерте тавра авкаланса хăпартăр!

Хăмла лартас тени Ковалева
Çап-çамрăк ĕмĕрне аса илтернĕ,
Мулпа укçи çитмен авланăва,
Вăл пĕр хăмла хуçи панче ĕçленĕ.

Чылай çӳренĕ те чипер хĕре
Парне пама туяннă пурçăн тутăр,
Анчах хаваслă таврăннă çĕре
Савни качча каять иккен—çĕр çăттăр!

Чипер хĕре çухатнă ун чухне,
Анчах та пур хăмла лартма ăсталăх...
Колхоз ĕçне ертсе пырассине
Питех пултарĕ çамрăк çын Михайлов.

Хисеплĕ ватă сын каланине
Итлерĕ халăх, хирĕç каламарĕ,
Колхоз правлени председательне
Михайлова сума суса суйларĕ.

Хире те ялсене хитре тума,
Тирпейлĕхе кĕртме шут тытрĕ халăх.
Колхоз ятне те—Акăшкӳл тума
Сĕнсе каларĕ пухура Михайлов.

Акăшкӳлпе пĕрлешнĕ кунтанпа
Çунатлă пек çӳрет Тимаç Тухтаров,
Хăйсен çара хирне бригадăпа
Гектар ытла юман лартма пуçларĕ.

Урамсенче мĕнпур кил-çурт умне
Пилеш, çăка та вĕрене ларттарнă,
Ялти ваттисемпе ачасене
Тăпра чавма кĕреçесем тыттарнă.

Хĕрсе ĕçленĕ хыççăн сунарта
Çӳрет куллен татти-сыпписĕр халĕ,
Хирте, çырансенче те вăрманта
Тĕтреллĕ сывлăша çурать пăшалĕ...

Ĕçченлĕхĕ çитет, тата çитет
Пĕлӳлĕхĕ, хастарлăхĕ, хăвачĕ.
Тухтаров персенех кайса ӳкет
Хура-чăпар каçанлă ӳр мулкачĕ.

Хирти вучах пекех вёлтёртетет
Хӳри ыраш кёлти пек сарӑ тиллён.
Тӑхлан ӑна та хӳтерсе ҫитет,
Кётсе тӑрать йӑлттам юса та вилём.

Ҫӳрет Тухтаров Атӑл хёрринче,
Выртать те хырӑмпа шӑвать сасартӑк.
Ӳкет ем-ешёл чӑрӑш тӑрринчен
Тарай тутри пек хӳхём тёклё карӑк.

Чӳречесем ҫине ӳксе каҫхи хёвел
Чие шывпе пёветнё пек хёретнё.
Утать Тухтаров тёрёс те тёкел,
Анчах вӑл темшён пёр лаша кӳлтернё.

Ун утнӑ майӑн хулпуҫҫи ҫинче
Ҫунать ӑсан аҫин хитре ҫуначё.
Выртать силленчёк урапа ҫинче
Кёрхи така пек пысӑк пёр мулкачё.

Ҫӑрттан выртать мулкачӑ ҫумёнче.
Вӑл икё пӑт таран туртма пултарё.
Иван Михайлов ҫурчё умёнче
Урапине чарать Тимаҫ Тухтаров.

9

Икё хутлӑ ҫурт лартма
Пысӑк шухӑш пур, анчах
Пёрене тата хӑма
Питё кирлё. Тупмаллах!

Ивана чылай пулма
Тиврё тёрлё ҫёрсенче.
Илчё вӑл вӑрман касма
Вырӑн Атӑл леш енче.

Ку хыпар яла ҫитсен,
Хӑвӑрт кайрё ёҫ вара.
— Вӑрмана, колхозниксем!—
Тет Тухтаров пухура.

Хатёр пӑчкӑ, пуртӑ та,
Вӑрманти хуҫалӑхра
Хӑйраса тӑма тата
Пулмалла ҫавра хӑйра.

Çӑмӑл мар вӑрман касни,
Тӑрмашса тинке тухать,
Çавӑнпа колхоз çынни
Çимелле вӗри апат.

Шартлама сивве хӗлле
Хӑнк тумасӑрах тӳсме
Мамӑк пиншакпа пӗрле
Кӗрӗк кирлӗ этеме.

Паслӑ шурӑ ирхине
Вӑрмана тухса кайма
Кӳлӗмри лашасене
Илсе тухнӑ урама.

Чи малти çуна çине
Иванпа Тимаç тусла
Иккӗш ларнӑ—тумтирне
Тӑхӑннӑ йӑлт салтакла.

Тепӗр хут вӑрçа хӗлле
Кайнӑ евӗр, иккӗш те
Туртса çыхнӑ шинеле
Хытӑ та, илемлӗ те.

Хӑлхана та тӑм инкек
Илесрен сыхлантарса
Иккӗш çӗлӗке пӗр пек
Тӑпӑл лартнӑ антарса.

Ковалев старик пырать
Çамрӑк халӑхпа пӗрле.
Сулӑсем тӑвас пулать
Хытӑ пӑр çинче хӗлле.

Каймалла!—тилхепине
Карт! туртса илет Тимаç.
Самӑр ут ухать пуçне,
Тилхепе сӗлтме хушмасть.

Яп-яка тупанӗпе
Шӑвӑнса ансат кӑна
Юр çинче юрланӑ пек
Чӑйлатса пырать çуна.

Хытă шăннă çĕр-тăпра
Лашасем таптанипе
Янраса тăрать уйра
Çурăк тăм чӳлмекĕ пек.

Тĕнĕрен мунча ăшши
Тухнă евĕр, çул çинче
Палкаса кашни лашин
Пăс тухать çăваренчен.

Шур сĕтел çитти çине
Кĕмĕл ӳкнĕ пек, хĕрсен
Янракан юррисене
Сапалаççĕ халь çилсем.

Лавсенчен юлса юри
Хытă чупнă вăхăтра
Çамрăксем пĕрне-пĕри
Чăмтараççĕ сив юра.

Ырă кулăш вăй парать
Пирĕн паттăр çамрăка.
Ха! Ха! Ха!—тени каять
Улăх тăрăх аякка.

Юрă, кулăш, сас та шав
Вăййинче пыра-киле
Тухрĕ пысăк ушкăн лав
Аслă Атăл çинелле.

Янкăр уçă кунсенче
Шурă пĕлĕтсем çӳхе
Тăнă евĕр, пăр çинче
Хăрпăк юр çеç халлĕхе.

Аслă Атăла хĕлле
Пĕлĕте пăхса выртма
Кантăк лартнă темелле—
Пăр тухса тăрать ума.

Атăл пĕр тĕлте сывлать,
Пăрланман, тĕтреленет.
Халăх ун пирки калать:
Атăл куçĕ уçă, тет.

Кӑн-кӑвак яка пӑра
Янратса лавсем каҫсан,
Леш енчи тавралӑхра
Тӑсӑлать хура вӑрман.

Ҫара вулӑллӑ хырсем
Тӳрӗ чанк лараҫҫӗ те,
Лапсӑркка калпакӗсем
Хупӑрлаҫҫӗ пӗлӗте.

Хушӑран улакатка
Хускатать-мӗн сывлӑша,
Е сасартӑк хӑрӑка
Ӳкерсе сикет пакша.

Кун тени хӗлле кӗске.
Чӑвашсем юррисене
Кӗрлетсе кӗреҫҫӗ-ҫке
Вӑрманти мари ялне.

Хваттерсем кашни килте
Халӗ хатӗр пулмалла.
Тепӗр кун ирех пурте
Ҫивчӗ пуртӑ тытмалла!

Марисем—туссем кунта.
Вӗсене кӗте-кӗте
Хатӗрленӗ ташӑ та,
Хӯхӗм юрӑ-кӗвӗ те.

Вӑрманти хастар ӗҫе
Килнӗ туслӑ халӑха
Кӗҫӗрех клуба чӗнсе
Пысӑк хапӑл тӑвӗҫ-ха.

10

Людмилӑна кӗтмен ҫӗртен
Лукка тӗл пулчӗ станцире,
Ӑна вӑл курнӑччӗ унччен
Тахҫан ҫулла хирте пӗрре.

Профессор ыйтрӗ утнӑ май
Киреметсем пулни ҫинчен,
Тата ытти пирки нумай—
Пурте юлман халь асӗнче.

Лукка профессорпа хĕрне
Хаваслăн чĕннĕ хăй патне.
Хăймаллă турăх тутанма
Вăл лартнă хăнасем умне.

Чăнах та мăшăрĕ пиччен
Юр-вар тума питех ăста.
Ун тутлă турăхĕ çинчен
Чипер сăмах çӳрет ялта.

Чĕлхи çинчен кайман пекех
Людмила та манман ăна:
— Лукка Ильич, тесе тӳрех
Ал пачĕ кăмăллă çынна.

Июль чийи пек кĕп-кĕрен
Сăн-питлĕ хĕр çине вара
Лукка Ильич пăхмассерен
Аса илет профессора.

Пальто та тилĕ тир çуха,
Шур бота килĕшет хĕре.
Анчах шăнма пултарĕ-ха
Çăра пас тытнă сивĕре.

— Қаятпăр пулĕ,—тет Лукка,
Çухаллă тăлăпа хывать,
Аллисемпе лăпка-лăпка
Хĕре хăех тăхăнтарать.

Хаваслă хĕллехи сăна
Юратнă Пушкин—халĕ те
Шуса пырать çара çуна
Шуратнă пир пекех хирте.

«На дровнях обновляет путь»—
Тени халь илтĕнет матур.
Ахах-мерченлĕ пек çап-çут
Выртать йĕри-тавра шур юр.

Людмила ялсенче хĕлле
Пулса курман; ăна кăçал
Қуллен-кунах хăй еннелле
Чĕне пуçланă лăпкă ял.

Питех те илĕртнĕ ăна
Михайлов янă çырусем,
Тата киленекен чуна
Хускатнă хĕллехи илем.

Мунча пек тăлăпăн ăшши
Хĕртет хăрушă сивĕре.
Темле кăвасăк тир шăрши
Çапни те лайăх пек хĕре.

Пурне те халĕ курнине
Çырма Людмилан ĕмĕт пур.
Хаваслăн кĕтĕр романне
Вăрман та Атăл, шурă юр.

— Скачи, моряк!—тесе лавçи
Утне хистенине итлет,
Пăртакçă ыррăн кулянçи
Килсе каять, тĕпчес килет.

— Лукка Ильич, колхозăрта
Лашасемпе калаçмалли
Чĕлхесенчен малти шута
Кĕрет-и сирĕн вырăсли?

Е чăвашла та чухлакан
Утсем те пур-и витере?—
Тесе Людмила ян та ян
Кулни каять тӳлек хире.

Лукка та ихĕрсе илет,
Хăна лăпланнине кура
Йĕркеллĕн, лăпкăн пĕлтерет
Иртсе çухалнă хыпара:

— Пире туртан лашамăра
«Мортира» ятлă пĕр кĕсре
Хăмланă хамăр колхозра
Вуникĕ çул-тăр ĕлĕкрех.

Ун ашшĕн пулнă ят,—
«Мажор»—
Аратлă ăйăрччĕ—ăна
Пустарнă зоотехник-мур
Сăран пиншак тума кăна.

Пиншак çĕлетрĕ те тата
Вăл илчĕ «Моряка» темме,
Ана вĕрентрĕ вăл унта
«Скачи!» тени мĕнне пĕлме.

Михайлов тавра́нсан çартан,
Мура вĕрентрĕ вăл ăса.
«Моряк» тин килчĕ районтан
Хăй ӳснĕ хамăр колхоза.

Михайлов питĕ пултарать—
Хăйне мăн кăмăллă тытмасть,
Пире ĕçре тытса пырать,
Ĕçлет вăл хăй те ир те каç.

Қашни çынна хурать хака,
Пĕлет вăл унăн выранне...
Скачи, «Моряк!» тесе Лукка
Қарт-карт туртать тилхепине.

Унта, кунта та юр тытма
Тĕкме сахал лартман кăçал.
Яри тухса тăрать ума
Юрпа хупланнă шурă ял.

— Қĕртсем хире хĕвни аван.
Қу пирĕн ĕç,—тесе Лукка
Қаларĕ, акă, ăнсăртран
Вăл курчĕ тарăн сулăнка.

Çара çуна вăштик иртет,
Юра тусан пек тустарса,
Çавраçилле пырса кĕрет
Тӳлек урамлă колхоза.

Лукка пĕр пысăк çурт умне
Утне чарать, сиксе анать,
Шерепеленнĕ сухалне
Алсасăр аллипе шăлать.

— Чăнах та ырă пултăм-ши?
Хĕре юрарăм-ши?—тесе
Пăхаççĕ пасlă куçхарши
Айне пытаннă куçĕсем.

Людмила васкаса ансан,
Каларĕ тӳп-тӳрех:—Мана,
Лукка Ильич, ерçӳ пулсан,
Леçсе хăварăр вăрмана.

– Пĕр кашăк тутлă пыл пулма
Эп хатĕр сирĕншĕн, ачам,—
Шансамăр ман сăмахăма.
Кайса çӳрем, хыпаланам.

Эсир правленире кăшт-кашт
Ларкалăр сывлăш çавăрса,—
Тесе калать Лукка чăваш,
Хăй вырăс пулнă пек таса.

Çап-çамрăк пек Лукка пичче
Сиксе тăрать çуни çине,
Шик! шăхăрса ура çинче
Пĕрре çаврать тилхепине.

Хывмасть Людмила тăлăпне.
Правление пырса кĕрет.
Унта хĕрелнĕ çуттине
Кай ен хĕвелĕ çӳретет.

Алла çитейнĕ-çитменçи
Хĕрарăм пур тĕпелĕнче.
Минтер тĕрри туса йĕпси
Хуллен вылять аллисенче.

Вут хыпнă пек сиксе тăрать:
— Аван-и!—тет вăл вырăсла,
Хĕре васкавлăн ал парать,
Пăхса илет ытармасла.

Михайлов амăшĕ—Укаç—
Калаçĕччĕ, анчах чĕлхе
Юмарт йĕркеллĕн усаймасть
Чĕре тулли чиперлĕхе.

Пĕрех сăмах ертет çичче.
Пĕрре калатăр вырăсла,
Ыттисене вăл чĕлхинче
Епле-ха тупĕ малалла?..

Каясшăн хĕрĕн кăмăлне,
Ачаш пăхасшăн вăл ăна.
Хывса силлерĕ тăлăпне,
Çакса та хучĕ пătана.

Пĕли-пĕлми темле мăк-мак
Айван ваклашмĕ, çавăнпа
Хăна çине хутран пăртак
Пăхать вăтанакан куçпа.

Укаç диван çине минтер
Хурсассăн, ырă шухăша
Ăнланнă хĕр, ĕшеннĕскер,
Выртсассăн кайрĕ кăтăша.

Иван вăрман касма кайсан,
Укаç пĕчченçĕ юлчĕ те,
Ытла кичем пек пулнăран,
Ларас-тăрас килмест килте.

Правлени йышĕ вармантa
Янравлă шăхăртать пăчка,
Хăварнă пĕр счетовода—
Ларать шăрçа шакка-шакка.

Хĕре сăваплă ыйхинчен
Вăратасран именнипе
Укаç пуш пÿлĕм варринче
Тăрать хуралçă йăлипе.

Сасартăках уçса хупать
Яка тăпсаллă алăка,
Ал-хапăлта кĕрсе тăрать
Сив сывлăшпа пĕрле Лукка.

Вăл илнĕ тепĕр тăлăп та,
Хулхушшинче кăçатă пур.
Çынна пăхма Лукка ăста,
Чĕлхи те йăпатма матур.

Людмила шăпчăк ыйхинчен
Сиксе тăрать, вĕтеленет:
— Лукка Ильич, унта каçчен
Çитме пулать-и пирĕн?—тет.

— Эп кӳлнӗ хӑлӗ «Урхамах»
Текен вут чунлӑ лашана.
Ҫил пек вӗҫсе пырать, анчах
Ҫитетпӗр тӗттӗмпе кӑна.

Тӑрать правлени умӗнче
Ҫӳрен лаша, юрӑ чавать,
Шап-шурӑ пӑс ҫилхи ҫинче
Мунча ӑшши пек хӑпарать.

Лаша тытать кӗвентелле
Хутламлӑ авӑнчӑк майне.
Лукка Людмилӑпа пӗрле
Ларать пасар ҫуни ҫине.

Сиксе тӑрать:—Эй-эй!—тесе
Хӑй пуҫӗ ҫиййӗнче хивре
Ҫаврать тилхепине сӗлтсе
Пӗрре хуллен, вӑр-вар тепре.

Ҫуна ҫухалчӗ тахҫанах.
Ҫӗкленнӗ юр та курӑнмасть.
Правлени умӗнче ҫаплах
Пуҫне чиксе тӑрать Укаҫ.

Чӑнах та ҫакӑ хӗр киле
Кӗрет-ши савнӑ кин пулса?
Хӑҫан Укаҫӑн кӗтмелле
Хавaслӑ туйӗ шавласса?

Хӑй кинӗпе хӑй ывӑлин
Тӗпренчӗкне арки ҫинче
Сиктересси килни халь тин
Пулман, вӗренӗ чӗринче.

Килес-пулас ача ҫинчен
Ялан шутлать Укаҫ инке.
Ун хатӗр тарӑн ҫӳпҫинче
Таса кӗпе те шур кипке.

Ух-уххӑм утьӑкка тума
Кӑтӑкланса тӑрать алли,
Ачашшӑн тутлӑ ҫывратма
Минтер тӗрлерӗ ун валли.

Тахçан ку шухăш килчĕ те
Пуçран каймарĕ ир те каç.
Ачан ачаш сасси пӳрте
Янратасса кĕтет Укаç.

Йăпанасси килет çĕрле
Сăпка юррилле кĕвĕре...
Тăрать вăл, тутăрне хĕрле
Çӳхе çыхсан та, сивĕре.

11

Лукка малтан каларĕшле,
Вут чунлă урхамахĕ
Çитерчĕ вĕсене çĕрле—
Çулсем хĕлле юртма хĕн.

Тата çитменнине кура
Тăман тухса шавларĕ,
Тавралăх пулчĕ хуп-хура,
Пăхса пыма памарĕ.

Черчен Людмила шăнасран
Сехри Лукккан хăпатчĕ,
Ăна юри вăл çунаран
Тыттарчĕ те чуптарчĕ.

Çапла Людмила чăм тара
Ӳксе килсен те, халĕ
Ырман пекех çан-çурăмра
Тапса тăрать вăй-халĕ!

Людмила Ивана кунта
Нумай та шырамарĕ.
Пуриншĕн паллă-çке ялта
Килен-çӳрен хыпарĕ.

Ак, иккĕш ĕнтĕ тĕл пулса
Йăва пек пĕчĕк ялăн
Урамĕпе хавасланса
Утаççĕ алла-аллăн.

Хирте тăман йĕри-тавра
Урса тăрать пулин те,
Çиле сисмест уçланкăра
Хырсен тăрри пĕрин те.

Хутран-ситрен чее тилле
Е кашкăра туйса-тăр
Чакак шавлать пĕлтермелле
Пĕр евĕр чăкăр-чакăр.

Е йытă ихĕрен ӳххе
Биссе вĕрет пĕр тапхăр.
Яштак хырсем тӳлеклĕхе
Пăсми тăраççĕ шавсăр.

Чӳречесем пурте хура,
Юлман ниçта та çутă.
Ёне те мĕкĕрмест—ăшра
Тулли кавлемлĕ утă.

Иван чĕнмен Людмилăна
Утма сасартăк чарчĕ:
— Тинкер пăхса илсем мана,
Ман савнă кăвакарчăн!

Паян темме шăнать чĕре,
Шăнать тата çан-çурăм,—
Вăлтса каларĕ вăл хĕре,
Сăмах тупмарĕ урăх.

Людмила хулпуççи çине
Аллисене хурать вăл.
Хускатрĕ халĕ ун юнне
Юратури çил-тăвăл.

— Тата тепре те эс мана
Пăхса илсен те юрĕ,—
Тесе Иван Людмилăна
Тата тепре чуптурĕ.

Пĕрне-пĕри ыталаса
Вĕсем вăрах тăраççĕ.
Пĕр харăс ик чĕре тапса
Хаяр сивве туймаççĕ.

Кӳлешнĕ пек вĕсем çине
Пăхса çап-çамрăк уйăх
Ишсе хăпарнă тӳпене,
Курмасть никам та урăх.

## 12

Вăрмана кăвак çутпа
Пĕр кар тухать бригада,
Йăнтăр-йăнтăр пăчкăпа
Ĕçлет унта, кунта та.

Ытама кĕмен хырсем
Ах-ахлатса ӳкеççĕ.
Çырансем, ахрат варсем
Вĕсен шавне итлеççĕ.

Тинĕс хумĕ чул-тăва
Çапса саланнă саслă
Аа-аах! текен шава
Илтме çынсем хавaслă.

Халь Людмила тăхăнман
Пальто, çакман çуха та:
Çемçе пиншак халь ун çинче,
Урисенче кăçатă.

Пăчкине ансат кăна
Тип-тикĕс, лăпкă, майлă
Çӳретме Людмилăна
Вĕренткелет Михайлов.

Пăчкă шăлĕ, йывăça
Чавса кĕме пĕлмесĕр,
Тăрăхла çӳрет куçса,
Анчах тимне тытать хĕр.

Çав самант Лукка таçтан
Килсе тухса каларĕ:
— Пилĕкне ватма, Иван,
Пĕрре те намăс мар-и?

Хамăр сулăсем çине
Çырма каяр, тăванăм!—
Терĕ вăл Мускав хĕрне
Хăй ашшĕ пек ăнланнăн.

Иванпа Тимаç вара
Тухса тăраççĕ харăс,
Пăчкине тавлашура
Хĕрсех туртма пуçларĕç.

Хирĕçле юхан шыва
Çурса ишет-и пулă—
Çавăн пек касса шăвать
Вĕсен пăчки хăюллă.

Малтанах пиншаксене
Уçса йўле яраççĕ,
Каярах турат çине
Хывса çакса хураççĕ.

Ăмăртса касас йĕрки
Вĕсен вăйне çĕкленĕ.
Чашкăрса çўрет пăчки
Юмахсенчи çĕленĕн.

Тарласан та вăй-халтан
Кайми вĕсем туртаççĕ.
Тимаçран юлмасть Иван,
Юлмасть унтан Тимаçĕ.

Ăмăртса та кĕрмешсе
Туссем—пĕри те лешĕ—
Тепĕр вăрăм кĕреше
Татса пĕренелесшĕн.

Иккĕш икĕ çĕлĕке
Турат çине çакаççĕ—
Тепĕр йывăç кирлĕ-çке—
Йĕри-тавра пăхаççĕ.

Паллă тунă хырсене
Пурне те-çке бригада
Йăлт пĕтернĕ ирхине
Касса та, вакласа та.

Йывăçа çуна çине
Тĕрев хурса тĕртеççĕ,
Кустараççĕ, юр ăшне
Çынсем путса кĕреççĕ.

— Хай пĕрре, ай-хай тепре!—
Тени хăватлă сассăн
Вăрманта çўре-çўре
Ян-ян каять хавассăн.

Курӑнать пӑр айӗнче
Ишсе ҫӳренӗ пулӑ.
Пӑр ҫинче Симун пичче
Тӑвать тӗреклӗ сулӑ.

Вӑл вӑрман кӗлемине
Кунта ҫапма тутарнӑ,
Пӗренен пӗрех пуҫне
Кайман сӑрпа сӑрланӑ.

Акӑшкул—тесе ҫырман,
Кӗскен кӑна—«ак» тенӗ.
Кӗлеме хурса паян
Людмила хӗпӗртенӗ.

Этемсем паян кунта
Уҫланкӑ ҫеҫ хӑварнӑ,
Иртнӗ ҫапӑ-турата
Купаласа пуҫтарнӑ.

Ҫил-тӑман ӗнер хаяр
Кӗрленӗччӗ пӗр талӑк.
Килсе ҫитнӗ сивӗ мар
Уяр кӑвак ҫанталӑк.

Ҫӗтӗк-ҫурӑк пир пекех
Сайра кӑна пӑртакҫӑ
Шурӑ пӗлӗтсем текех
Ыйха кайса тӑраҫҫӗ.

Виҫӗ ҫухрӑмри яла
Ҫуран та, лашапа та
Таврӑнать юрла-юрла
Ӗҫре ырман бригада.

Халӗ ҫӗнӗ хӑмачран
Ялав та хатӗрленӗ,
Клубӑн тӑррине паян
Ана юри ҫӗкленӗ.

Плакатсем те клуб умне
Ҫапса тухма васканӑ:
Пӗринче—«Чӑвашсене
Салам!»—тесе каланӑ.

«Сывă пултăр ĕмĕрех
Пĕр туслăхпа тăванлăх!»—
Тенине инçетренех
Курать Иван Михайлов.

Марилле те пур плакат,
Чылайĕш чăвашла та.
Чарăнса тăрса вулать
Хавасланса бригада.

Тăршшĕпе нумай сĕтел
Шалта лартса тултарнă,
Чечексем лартма та мел
Хĕллех тупса кăларнă.

Хывăнса ларма ăшши
Пӳртре паян сахал-и...
Какайпа кăмпа шăрши
Тулта та паллă халĕ.

Акăшкӳлсемпе пĕрле
Çынсем пĕр тачă ларнă,
Пурлăхне систермелле
Пурте таса тумланнă.

— Аслă Атăл урлă-çке
Эпир, туссем, тĕлме-тĕл
Яланах,—тесе черкке
Çĕклерĕ председатель.

— Пирĕн туслăх пултăрах
Ыран та, малалла та!—
Тенĕ хыççăн харăсах
Сиксе тăрать бригада.

Кĕреке кĕвви-юрри
Янраса тăрасшăн—
Марилле юрлать мари,
Хăй пек юрлать чăвашĕ.

Акă клуб сцени çине
Тухать тăват кĕслеçĕ,
Пӳрнисем хĕлĕхсене
Чĕрне вĕççĕн илеççĕ.

Урайне тапма ура
Кĕçте пуçларĕ ĕнтĕ—
Ташласси килет ара
Тимаçăн та, ыттин те.

Хĕрелсе хĕвел анса
Хырсем çине тĕреннĕ.
Лашасем ура тапса,
Юра чавса кĕçеннĕ.

— Тавтапуç пиртен сире,
Мерттес сире, ыр халăх!—
Тенĕ май савса пĕрре
Пуçне таять Михайлов.

Пуç ухса кĕслеçĕсем
Тата шепрех калаççĕ,
Вĕттĕн-вĕттĕн пӳрнисем
Вĕлтти-вĕлтти чупаççĕ.

13

Эпир кăрлач сивви тесе калатпăр.
Кун пек усал та шартлама сивве
Тӳссе тăма пултараймасть кăвак пăр,
Йăр-яррăн çуралать, ларать çĕвве.

Хĕртмен хĕвел унки сап-сар хăлхаллă.
Шумасть пĕр татăк пĕлĕт те. Пире
Ачаранах кун пек çанталăк паллă,
Чĕнет хура вăрмансене, хире.

Сив кун хуратутсем те кăлармасăр
Хĕре чиперлетет, тути çине
Хурать хăмла çырли пекех кĕрен сăр,
Кĕрхи пилеш пек хĕретет питне.

Юр хăрпăкĕн хăйне кура эрешĕ,
Хăйне кура мерчен тĕрри те пур.
Пас тытнă вăрмансем юрра кĕрешĕн
Лараççĕ çĕмĕрт сачĕ пек шап-шур.

Эп çепĕç шăпчăк мар, хаяр хĕлле те
Мухтас килет çуралнă çĕршыва,
Çуркуннехи пекех перо илетĕп,
Хĕлле те шăрататăп хам сăвва.

Утса пыруҫăн месерле выртатăп
Тӳшек пек кĕрт ҫине—хаваслăхра
Нихҫан та эпĕ пулмăп нишлĕ ватă,
Ларсан та хăрăм ҫӳҫĕм шап-шурра.

Ҫеҫке пек туйăнĕ мана ҫак шурă.
Пуҫа хисеп кӳрен ҫеҫкесенчен
Турат йăтми панулмисем пек юрă
Ҫуралĕ-ха чĕремĕн садĕнче.

Михайлов салтакра чухне юратнă,
Ырланă сĕлтĕ пек ҫемҫе юра,
Ирех ӳтне юрпа ҫуса тасатнă,
Питне кăларнă нар пек сăнара.

Кам Атăл ҫиййĕнче хĕлле ҫӳренĕ,
Ăна нихҫан та ĕмĕрте манмасть.
Урисене хаваслăн йĕлтĕрленĕ
Людмилăпа Иван тата Тимаҫ.

Хальхи тăмансенче юр тарăн ҫурĕ,
Ача чухне саксем ҫине кĕҫҫе
Сарса пăрахнă евĕр кăпăш юрĕ
Утма та ярăнса ишме ҫемҫе.

Ҫунат ӳстернĕ пек пыратăн ҫăмăл,
Ура та, алă та лăштах канать.
Аса килмест иртни, нимле ҫил-тăвăл,
Телей, телей кăна чуна лăпкать.

Нихҫан та вăрҫăра снаряд та мина
Пулман пек туйăнать Михайлова,
Хăлхи илтет ҫумра пыран Людмилăн
Туйи хускатнă пĕчĕкҫĕ шава.

Йĕлтĕр туйине алла
Виҫҫĕш харăс-харăс
Илчĕҫ те аначалла
Ыткăнас пек кайрĕҫ.

Йĕлме йĕлтĕр шăхăрса
Ҫăмăлтан та ҫăмăл
Пынипе юлать ванса
Чăштăр-чăштăр хăмăл.

Кукленсе пек чи малта
Талпăнать Тухтаров.
Майĕнчен саланнă та
Вĕлкĕшет çăм шарăх.

Ĕнтĕ Атăл хĕррине
Çывхарса пыратчĕ,
Сикрĕ-тухрĕ ун умне
Пĕр айван мулкачă.

Хыçалти ури ытла
Вăрăмран мăнтарăн
Чупаймасть анаталла—
Тавçăрать Тухтаров.

Пынă майăн пăшала
Çурăм хыçĕнчен вăл
Вĕçертсе илет алла
Салтакла çăп-çăмăл.

Нумаях кайма вăй-хал
Мулкачра пулмарĕ.
Сывлăша çурса пăшал
Пенĕ сас янрарĕ.

Паак!—тесе пĕрре сикет мулкачă,
Ӳкет çăмхан пĕтĕрĕнсе вара.
Çаплах çӳрет пăшал сассин хăвачĕ,
Кĕрлет пĕтмесĕр уçă сывлăшра.

Кĕрлет пăшал сасси, чăн-чăн поэтăн
Кăвар сăвви çынсен чĕрисенче
Усраннă пек... Юлать-и ман талантăм
Çинçе йĕрри пулин те çĕр çинче?

Тип хурхуххи çеçки пек манăн ятăм
Кăра çилсем çинче çухаласран
Именнипе çунатăп, хам çунатăм
Кару вĕçме пĕлмесĕр усăнсан.

Мăнтарăн пилĕк пус укçа хисепĕ
Çăра тусанлă пысăк çул çине
Ӳксе çухалнă пек, çухалмăп эпĕ—
Пытанмăп ĕмĕрти тусан айне.



Мĕншĕн тесен, чунра суйса тăмарăм,
Килте те вутлă вăрçă хирĕнче
Хам пуçăма чĕвен тытса юрларăм
Юратнă халăх паттăрри çинчен.

Хăй çурăмĕ хыçне Тимаç Тухтаров
Çакать така пек самăр мулкача.
Питех те килĕшет кун пек хастарлăх
Хура кăтра кубанкăллă качча!

Иван, эс мĕншĕн савăнма пĕлмесĕр
Çӳретĕн яланах кичем сăнпа?—
Тесе kалана пек ӳпкелешсе хĕр
Пăхать пас тытнă хăрпăклă куçпа.

Михайлов хăй чунне уçса кăтарттăр,
Çавна килчĕ Людмилăн курасси.
Хутран-ситрен этем кулма юраттăр,
Янратăр унăн кĕмĕл пек сасси!

Çамки тирне пĕрсе çӳрет Михайлов
Пĕр вĕççĕр шухăша пута-пута.
Çап-çамрăк çыннăн пулмалла кулмалăх,
Ташша ямалăх пушă вăхăт та.

Чуна касса пырать тăхлан пек темĕн,
Сĕлпер кайни те сисĕнет ӳтре.
Людмила сĕтĕрсе пырать кичеммĕн
Сасартăк йывăрланнă йĕлтĕре.

Нумай пулмасть яла чунтан вăл савнă,
Вăл халĕ сивĕ туйăнать ăна.
— Тархасшăн,—терĕ Ксения Петровна,
Вĕрентекен тăп чарчĕ Ивана.

Людмила çаврăнса пĕртте пăхмарĕ,
Йĕлтĕрсене кап тытрĕ аллине.
Çунма пуçларĕ кӳлешӳ кăварĕ
Ӳтре, питре те пĕтĕм чĕрере.

Романĕнче çырни тухать мĕн пурĕ.
Сап-сарă уйăха, юратăва
Людмила халĕ пĕтĕмпе астурĕ,
Кӳлешрĕ тепĕр хут Михайлова.

Çурхи çĕрле Иван хĕрпе утни те,
Ыталани те чуптуни умне
Тухса тăрса ыраттараççĕ питĕ,
Шари çураççĕ мĕскĕн чĕрене.

Пурне те шутласа хăех кăларнă,
Анчах çакна çырса кăтартнă май
Хăйне хăех Людмила тарăхтарнă,
Вĕри куççуль юхтарнă вăл нумай.

Паян сасартăк Ксения Петровна
Михайлова чарни сăлтав кăна,
Инкек пулса çапса хуçас пек авнă
Хăва пекех çинçе Людмилăна.

Ялти хĕр-врачăн килĕнче хваттерĕ.
Сăмах чĕнме никам та çук килте.
Чунне йĕп пек чикет кÿлешнĕ чирĕ,
Çаплах ыраттарать, иртмест пĕртте.

Михайловĕ туймарĕ, чухлаймарĕ
Кĕтсе тăран хĕрти ачашлăха:
— Людмила, шăнтăн-им?—тесе каларĕ,
Тупмарĕ кирлĕ ăшă сăмаха.

— Мана темле кичем те йывăр,—терĕ,
Татса каларĕ хĕр Михайлова.
Васкавлă пуйăс тепĕр ир кĕрлерĕ—
Людмила кайрĕ шавлă Мускава.

Кунта килсе çÿрÿ тата ан пултăр!—
Тесе пĕрре пулин те кантăкран
Савни пăхса илсе сĕлтмерĕ тутăр,
Йăлтах писсе çухалчĕ Иванран.

Иван тăрать. Ăш-чикĕ ĕнтĕркенĕ.
Йĕрес пекех пăхаççĕ куçĕсем.
Чĕлхÿ мăк-мак, чĕлхÿ пуклак,—тесе виртленĕн
Кусаççĕ вакунсен кустăрмисем.

14

Иртмест хула автомобилĕ,
Трамвай та çук урамсенче.
Шăп çурçĕр тĕлĕнче Людмила
Ларать сĕтелĕ хушшинче.

Паян килтен пĕртте тухмарĕ,
Тÿрлетрĕ, çырчĕ тепĕр хут.
Ана çилентере пуçларĕ
Кăвак чернил, шап-шурă хут.

Чунне ярса тытать романĕ,
Тытать те хытă чăмăртать.
Хирте выртан танкист суранĕ
Хăйне тивет, ыраттарать.

Пырса çитет, çӳрет хăрушă вăрçă
Германи çĕрĕнче,
Урал шăрантарса кăларнă хурçă
Кĕрлет çич ют çинче.

Хăватлă тупăсем хĕрсе кĕр те кĕр
Персе ухлатнипе,
Тĕке çыранлă, сарă шывлă Одер
Хупланнă тĕтĕмпе.

Хаппи çитмен, тăшман эшкерĕ тарнă
Кунти çыран çине.
Унта-кунта шинель хывса хăварнă,
Пăрахнă хутаçне.

Çилпе вĕçсе выртать тумтир-лăстанкă,
Минтер те—купипе.
Кĕрлеттерсе каçать Малахов танкĕ
Тин хывнă кĕперпе.

Тарма хăтланакан усал хурахăн
Ӳтне те шăммине
Çĕре чикес тесе Иван Малахов
Илсе пырать танкне.

Умри туппи те икĕ пулемечĕ
Пĕр харăс пенĕ май,
Ут çулнă евĕр экипаж ӳкерчĕ
Фашистсене нумай.

Çурхи çĕре çурса кĕрес пек тарăн
Алтса сиксе пырать,
Хăватлă танк кусанĕпе хаяррăн
Фашистсене таптать.

Малахов чĕринчи çиллес хăвачĕ
Чĕнсе хистенипе,
Тăшман туппи çĕре путса таптанчĕ
Салтакĕ-мĕнĕпех.

Чĕкеç пекех юмарт чĕлхеллĕ, лайăх
Ыр чунлă туссене
Пĕрерĕн астуса илет Малахов
Танк ӳхĕрнĕ чухне.

Ӳт-тир ҫӗрсен, хура та ҫыр, сап-сарӑ
Ҫӳҫсем ҫӗрмен ҫӗрте—
Юлташӗсен нумай тӑпри-масарӗ
Вӑрмансенче, хирте.

Юратнӑ тусӗсем пӗрле утатчӗҫ,
Вӗсен кӑвак, хура,
Сенкер ыр куҫӗсем пӑхатчӗҫ
Қалаҫнӑ хушӑра.

Паян чипер куҫсем тинкер пӑхмаҫҫӗ,
Тӑпра пулаҫҫӗ те,
Ҫурхи уяр кунра вӗсем курмаҫҫӗ
Шур ушкӑн пӗлӗте.

Юлташӗсем танкра ҫунса кӗлленнӗ,
Вара вӗсен кӗлне
Кӑра ҫилсем вӗрсе илсе вӗҫтернӗ
Ҫеҫенхирсем ҫине.

Ҫурхи шарлак шывсем кӗле шӑварнӑ,
Қайран нумай ҫеҫке
Кӑвак, сенкер тӗсе ларса хӑпарнӑ,
Куҫсем пек пулнӑ-ҫке.

Вутра нумай совет ҫынни—матурӗ
Ҫунса вилни ҫинчен
Уй-хирсенче ҫӳрет янравлӑ юрӑ,
Ҫӳрет вӑрмансенче.

Ҫӑвать ҫурхи хӗвеллӗ ҫутӑ ҫумӑр
Ачин тӑпри ҫине,
Илемлетет ӑна, анчах та йывӑр
Ҫуратнӑ амӑшне.

Қаччи килне чипер килме шантарнӑ—
Кӗтсе йӗре-йӗре
Юратнӑ хӗр куллен-кун кӑвакартнӑ
Ҫӳҫне вунҫиччӗре.

Ҫапӑҫура танкист ҫунса кӗлленнӗ,
Палли те ҫук, юлман.
— Атте!—тесе ачаш чӗнме вӗреннӗ
Килте ачи паян.

Хăюллă ашшĕне кĕтсе вăраххăн
Ачи куляннине
Хăй халĕ курнă пек, Иван Малахов
Таптать тăшмансене.

Çилли вĕрет, анчах тăшман снарячĕ
Лексе шартлатнипе
Хăватлă танк сиксе сасартăк ларчĕ,
Кисренчĕ пĕвĕпе.

Хулпуççинчи вĕри суранлă туйăм
Çунтарнă самантра
Хаплатрĕ те çĕкленчĕ пысăк çулăм
Вучах пекех танкра.

Вăл башньăран тухса анма тăратчĕ,
Тытатчĕ карлăкран,
Ăна сасартăк нимĕç автомачĕ
Ӳкерчĕ ураран.

Кăвак тӳпенелле пăхать Малахов,
Йĕпе тăпра çинчен
Тапаланса сиксе пĕрре тăмалăх
Вăй çук ӳт-тирĕнче.

Танкист вĕри куççуль тăкса шутларĕ:
— Халех вилетĕп-ши?..
Палканă сĕрĕм пек туха пуçларĕ
Тумтир ĕннин шăрши.

Кĕмсĕртетсе хăрушă вăрçă-харçă
Кĕрлет Германире.
Берлин патне пырса çитме пăртакçă,
Сахал юлать пире.

Танка тата тепре илсе каймалăх
Килинччĕ вăй-хăват...
Кăвак тӳпенелле пăхса Малахов
Хирте пĕччен выртать.

Тумтир ĕнет, ӳте тивет. Ăнланчĕ,
Анчах тăпра çинче
Çăмха пекех кусса кайма хăвачĕ
Çитмерĕ хальхинче.



Ахтырка хулинче вӑл курнӑ хурлӑх:
Ҫулла усал вута
Тумтирӗнчен сӳнтернӗччӗ Малахов
Кусса кайса унта.

Таҫтан инҫе-инҫе чӑваш ҫӗршывӗ,
Вӑрманӗ ун умне
Куҫса килсе тӑрать пек питӗ ҫывӑх,
Юрлать пек юррине.

Вăл чăвашла пупле-пупле ачашшăн
Аташнă вăхăтра
Йăтса кăларнă хăйĕн экипажĕ
Ăна хаяр вутран.

Çапла асрə тытса тăмалăх
Пулни çинчен кĕскен кăна
Кăтартнă каласа Михайлов
Пĕррехинче Людмилăна.

Ку сыпăка çырса пĕтернĕ,
Людмила тарăхнă ирччен,
Михайлова савса хĕрхеннĕ,
Шелленĕ пĕтĕм чунĕнчен.

— Ăна кая юлса юратрăм,
Аманнă, çуннă вăхăтра
Ман çамрăк ĕмĕрти сукмакăм
Мĕншĕн çӳренĕ аякра?..

Людмила ыйхăла пуçларĕ,
Пуçне сĕтел çине хурать.
Тулти ирхи тĕнче сăнарĕ
Чӳречене кăвакартать.

15

Хура курак вĕçсе килсе карларĕ,
Вăл çӳп те, çăм та, çапă та турат
Пуçтарнă чух çурхи тĕнчен хыпарĕ
Хирте хĕвеллĕ урипе утать.

Çурхи ăшша сиссе тухать шап-шурă
Калчи çĕрулмисен нӳхрепсенче.
Тымарсемпе ĕмсе илемлĕ хурăн
Сĕткенлĕ шыв пуçтарнă вуллинче.

Мĕнле кăна чуна илсен те, унăн
Кĕтсе илес килет çурхи шава.
Çăмартасем кăркка та, чăх та тунă,
Хурсем те тунă мамăклă йăва.

Пурин те пур хăйне кура хаваслăх.
Тусем-сăртсем хуллен хуралнине
Курса пуçне çĕклет путеклĕ сурăх,
Лаша кĕçенчĕ, мĕкĕрет ĕне.

Шурăмпуçне карса ирхи çанталăк
Килме тапраннă тĕксĕм сехетре
Кĕввисене тăсать ўркевсĕр кайăк—
Тăри пăтранчăк сивĕ тўпере.

Колхозниксем кăвак çутпа тухаççĕ,
Утаççĕ кăчăрт шăннă çĕр çинче,
Тулли ывçисемпе ăсса сапаççĕ
Суперфосфат çумри пураксенчен.

Лавпа турттарнă, купаланă тислĕк
Çĕпре пек йўçĕхсе выртать хирте.
Мана кунта кап тытĕ кутăн критик,
Чарса вăрçма пултарĕ ку тĕлте.

Материсĕр ўсмест чечек тымарĕ.
Кам тунă хĕрлĕ роза илемне?
Ăна çитернĕ ырлăх тислĕк мар-и?
Кĕмен-и тислĕк шăпчăк юррине?

Ахаль пулмасть, пĕрчи ўсет пучахăн
Имçам шăрши-маршиллĕ тăпрара.
Паха пĕрче çимесĕр выç çăварăн
Шăратмĕ шăпчăк садĕнче юрра.

Апла эппин, уй-хиршĕн тислĕк лайăх!
Купасене салатнă вăхăтра
Ирхи хĕвел хĕртсе хăпарнă майăн
Шĕвелнĕ пылчăкра путать ура.

Çул хыççăн çул тăпра пуянлăх панă,
Ача ўстернĕ пек çуллен тырра
Ўстернипе ырханланма пуçланă:
Сахал тăвар та, кали те уйра.

Ăна каллех çап-çамрăк вăй-хăвачĕ
Пухма çынсем параççĕ чĕр эмел.
Пăри пăтти пекех пиçет апачĕ,
Йўçсе тăма хĕртсе пăхать хĕвел.

Хĕвел пĕçернĕçем вăрман ешернĕ.
Хура пусса чи лайăх вăхăтра
Сухалама бригада хатĕрленĕ,
Бензин тултарнă ушкăн трактăра.

Тăпра чăмаккине илсе çапатăн—
Типпе пула тĕпренчĕ чăкăт пек.
Апла иккен, хирте ĕçчен бригада
Кĕрлемелле татти-сыпписĕр, тек!

Çăпан пекех сиенлĕ сĕтлĕ курăк,
Писçен те хух, мăян та йытпырши
Кассем айне юлаççĕ—пулмĕ урăх
Вĕсен тымарĕ те вĕсен шăрши!

Сителĕклĕ пырать-и касă тарăн—
Висçет Михайлов темисçе çĕрте.
Хăлхасене кĕмест тăри хастаррăн
Кĕввисене шăрантарни хирте.

Тӳпе тăрать таса та кăн-кăвакăн,
Пытаннă хир çăра тусан айне.
Кăпшанкă пухакан хура куракăн
Çуначĕ те çухатнă хăй тĕсне.

Трактористсем чăваш, тутар е вырăс—
Паллас та çук ĕçленĕ чух уйра.
Халь тинĕс хĕрринчи курортлă вырăн
Пĕçернĕ пек вĕсем пурте хура.

Шăлсем шап-шур, таса куçсем çунаççĕ,
Пăшатанла пăхаççĕ çын çине.
Вĕсем хăватлă бензинпа çăваççĕ
Кӳсек пек тӳсĕмлĕ аллисене.

Тахçан паллашнă пек тату юлташлăн
Иван чунтан калаçрĕ вĕсемпе.
Пумайăш вăрçăра хĕлле юр ашнă,
Лӳшкетнĕ вĕсене кĕрхи йĕпе.

Хĕрӳ вучах тавра çапла юлташлăн
Чуна йӳле ярса ларма хитре!
Бензин шăршиллĕ çынсене çыртасшăн
Вĕтеленмест те явăнмасть ӳпре.

Трактористсем кĕреш пекех тӳп-тӳрĕ
Выртаççĕ тăсăлса, пыра-киле
Ыйха каяççĕ—тутлă ыйхă çӳрĕ
Ĕшеннĕ паттăр ӳтсенче çĕрле!

Кивви иртет, килет вĕр-çĕнĕ талăк.
Сап-сарă уйăха та çăлтăра
Вĕрсе сӳнтернĕ пек ирхи çанталăк
Кармашăнать чаршав кара-кара.

Уй-хир шăпланаймасть иккен ниçта та,
Каймасть пĕрре те ырă кăтăша.
Кĕрлеттерет-çке çĕрлехи бригада
Бензин шăршиллĕ тĕттĕм сывлăша.

Тĕк пек çемçе утта чышса тултарнă
Тӳшек çинче те ватă шăм-шакка
Кантарайми пĕлмен пек пархатарлă
Ыйха каймасть утарĕнче Лукка.

Хĕвел ыраш капанĕ пек сап-саррăн
Тухса хуллен сăрлать пĕлĕтсене.
Лукка анаслаcа карма çăварăн
Каркаланса хускатрĕ ӳт-тирне.

Лукка сиксе тăрса вăрах итлерĕ
Шава, сиресшĕн пулчĕ ыйхине,
Аптрарĕ, пĕр витре шыва çĕклерĕ,
Ана ӳпне тӳнтерчĕ хăй çине.

16

Утнă чух урасене
Сивĕ сывлăм йĕпетет.
Машлатса тухать ĕне,
Ушкăн сурăх та çӳрет.

Ĕнесем мĕкĕрнипе
Сурăхсен мекек сасси
Кайнипе кĕрлет ирпе
Ялăн пур енчи касси.

Выльăх-чĕрлĕх кĕтĕве
Кайнă тĕркĕш вăхăтра
Пур сассем те пĕр кĕвве
Пухăнаççĕ сывлăшра.

Салтакра ирех тăма
Хăнăхни Михайлова
Илсе тухрĕ урама,
Уçă сывлăша, шава.

Ялёнчен кётӳ хире
Кайнă хыççăн таврана
Хускатса илет пĕрре
Чăпăркка çапни кăна.

Сĕт хăйми пекех шап-шур
Сад-пахчи çинче тĕтре.
Халĕ ушкăн шăпчăк пур,
Илеме кĕртет ире.

Шăпчăкпа пĕрле кунта
Амăртса, тавлашура
Шăхăрать саркайăк та,
Хĕрлĕ-мăй тáсать юрра.

Пĕлтĕр лартнă çамрăк сад
Пăхнăçем тĕлĕнмелле
Хунава кайса пырать,
Ашкăрать çӳлтен çӳле.

Садăн варринче пĕве
Тытнă пĕлтĕр кĕркунне.
Шыв çине пăхать хĕвел
Янкăр уçă ирхине.

Ярăнаççĕ кӳлĕре
Хурсемпе кăвакалсен
Чечексем пекех хитре
Сарă тĕклĕ чĕпписем.

Акăшкӳл çыранĕпе
Уçăлса утма Иван
Яланах таса ирпе
Килĕштернĕ ачаран.

Энĕш шывĕ еннелле
Утнă чух сукмак çинче
Çуралса пырать темле
Шухăш унăн пуçĕнче.

Умлăн-хыçлăн пĕр ĕрет
Хурама, çӳçе, хăва
Ларнăран аса илет
Вăл кунта Макарова.

Тăмлă тарăн çырантан
Ерипен хăпарчĕ те
Малалла утать Иван
Сăртлăрах сĕвек хирте.

Çакă сăрт çинче Митюк
Кулленех çӳренĕ,
Аслă вăрçă пынă чух
Ĕмĕтне ӳстернĕ.

Вăл унта çĕршер икел
Тăрăшса ларттарнă,
Хăйĕн ĕмĕтне иккен
Халăхра хăварнă.

Кăн-кăвак тӳпенелле
Антăлса юманлăх
Тикĕс ларнă çĕрелле
Уттарать Михайлов.

Хĕрринче иккен унта
Паттăра пытарнă,
Ун тавра хăма карта
Чутласа тыттарнă.

Ун юпи çинче юрлать
Халĕ пĕчĕк кайăк.
Иртнĕ майăн пуç таять
Митюка Михайлов.

Лутрашка юманлăха
Шалалла кĕрес чухне
Уйăрса илет хăлха
Хурт вĕçсе сĕрленине.

Пĕтĕмпе те çĕр вĕлле
Халлĕхе кунта ларать.
Малашне, пыра-киле,
Ĕрчетсех пырас пулать.

Утарта кăçаллăха
Лартнă пӳрчĕ умĕнче
Çӳлелле пăха-пăха
Уткалать Лукка пиччĕ.

— Эсĕ пăхăр чĕлĕме
Çухатман-и ку чухне?—
Тет Иван сăмах чĕнме,
Калама пĕлмен енне.

— Çерçисем эшкерĕпе
Ҫилкелеççĕ те кунта
Ҫĕп-кĕске сăмсисемпе
Çаклатаççĕ ман хурта.

Халĕ уçнă «ресторан»
Çерçисем. Вĕсен телей!
Тĕрĕс ят вăрланăран
Вырăс панă:—Воробей...

Пĕр иленнĕ кайăка
Сивĕтес темле майпа,—
Ҫаласа хурать Лукка
Пăшăрханнă шухăшпа.

Çамрăк йывăç хӳттинче
Ҫалаçма, канса ларма
Ик юпа çине пичче
Çапса хунă пĕр хăма.

— Пирĕн ĕнтĕ лартмалла
Малашне нумай çăка,—
Пӳрнипе шутла-шутла
Каласа парать Лукка.

— Тĕрлĕ ырă курăк та
Ӳстĕр тутлă шăршипе.
Тăрантас пулать хурта
Хуратул чечекĕпе.

Утă çулнă вăхăтра
Вĕллесем хуçалăха
Хунама пĕрер çура
Парасса кĕтетĕп-ха.

Çерçисем каллех вăрра
Килчĕç уçă сывлăша.
— Çитĕр сирĕн пуçăра
Хурчăка! Ҫăшша! Ҫăшша!

Пĕр шерте вĕçне çакать
Пиншакне, вара Лукка
Кăшкăрать те янратать
Пĕтĕм ешĕл уçланка:

— Пур иккен пытанасси
Халĕ йывăç айĕнче.
Кăш-кăшша!—текен сасси
Илтĕнет леш вĕçĕнче.

Ялалла утать Михайлов,
Ал тупанĕ çиййĕнче
Выртнă пек, ем-ешĕл айлăм
Тăсăлать инçе-инçе.

Хĕвелтен витсе тăрасшăн
Куçхарши çумне алла
Тытнă чух курать ачашшăн
Выртнă çутă Атăла.

Хĕрсенех шывпа шăварнă
Хурçă евĕр, кăн-кăвак
Курăнать ĕлккен сăнарлă
Леш енчи вăрман пăртак.

Пур çĕрте те хĕлĕх карнă,
Купăс çакнă пек, хирте
Кайăксен юрри хăпарнă,
Тăхтама пĕлмест пĕртте.

Лăпкă ăшă çу илемĕ
Питĕ тулăх çиçнипе
Утасси килет этемĕн
Çулсемпе, сукмаксемпе.

Таврари хирсем ем-ешĕл
Кĕççеленнĕ вăхăтра
Пур этем те кĕвĕлесшĕн
Хăй поэт пулса юрра.

Акăшкӳл тени пулсанччĕ
Юрăра, вара ăна
Юрласа Иван пыратчĕ,
Янтрататчĕ таврана.

Васкамасăр утнă майăн
Хăй ялне кĕрес чухне
Савăнса пăхать Михайлов
Чалăшрах юпасене.

Ковалев старик ларттарнă
Ял вĕçне кăçал хăмла.
Аврисем ўссе хăпарнă
Аршăн çурăран ытла.

Хăмлана типме хуралтă—
Уйрăм вырăн, кирлĕрен
Ялăн вĕçĕнче бригада
Кирпĕчсем хурать иккен.

Урама Михайлов кĕчĕ
Хушăран унта-кунта
Ачапча та карчăк-кĕрчĕк
Курăнса каять ялта.

Сисĕнсе тăрать çанталăк
Шăрăха куçса кайни.
Илтĕнмест хапха та алăк
Уçăлни те хупăнни.

Пур килте те халĕ пушă.
Хĕрсемпе хĕрарăма
Ĕçлеме çанталăк ăшă,
Вăхăт халь çум çумлама.

Пĕр тĕлте те курăнмарĕç
Вăйпитти çынсем куçа.
Турттарма ĕнер пуçларĕç
Пĕлтĕр каснă йывăçа.

Ватă çын Хаçат Йăванĕ
Колхозра килтен киле
Çўреме хул урлă янă
Кивĕ сарă кушеле.

Ку çынна курсан, Михайлов
Шухăша кайса пырать.
Кинори ўкерчĕк майлă
Акăшкўл умне тухать.

Халăх пулнă питĕ юрлă,
Тыр-пулли çитменнипе
Перекет çăмахĕ юрнă
Пĕчĕк кашăк виçепе.

Хăйсемех вĕсем çĕленĕ
Йĕм те, шупăр та кĕпе,
Яланах вара çӳренĕ
Хăрăк йывăç тӳмепе.

Чăн тӳме укçа шакканă.
Çуклăх чарнă тӳлеме.
Кĕрĕке кăна ларттарнă
Пӳкнĕ сарă тир тӳме.

Халăх хурлăх тӳснĕ ĕлĕк,
Малалла телей çинчен
Шутласа илемлĕ тĕлĕк
Курнă хытă сак çинче.

Мĕн çинчен каланă тĕлĕк?
Каччă пулнă çынсене
Курăннă хăлхаллă çĕлĕк,
Пурçăн тутăр—хĕрсене.

Курăннă таканлă атă
Петĕркке текен çынна.
Курнă тет вăл курасса та
Ĕмĕрте пĕрре кăна.

Чухăн çын аташнă, курнă
Аслă çимĕк эрнинче.
Анкă-минкĕ ӳсĕр пулнă,
Выртнă, тет, нӳхреп çинче.

Кун пек чаплă атă урăх
Кам пулин тата тепре
Курнă-и—асра тытмалăх
Сыхланман историре.

Акăшкӳл мухтавсăр ларнă
Кĕнекесĕр пулнă ял.
Пуп кăна илме пултарнă
Çырусем, хаçат-журнал.

Вăрçă чух кăна çӳренĕ
Çырусем хутран-ситрен,
Салтаксем яла пĕлтернĕ
Вилĕмпе суран çинчен.

Леш сăран кушел çĕленĕ
Ватă çын, Йăван пичче
Çамрăк чух вĕренкеленĕ,
Паллă пулнă ялĕнче.

Вăл пĕрре иле пуçланă
Хусантан «Хыпар» хаçат,
Çавăнпа Хаçат Йăванĕ
Тенĕ халăх, панă ят.

Темшĕн вăл утма пикенчĕ
Кăнтăрлах килтен киле,—
Яланах тухса çӳретчĕ
Тĕттĕм пулнă тĕлелле.

Ачапча е ватă карчăк
Çуккисен килкартине
Хаçатсем чиксе хăварчĕ
Тĕрлĕ çурăк хушшине.

— Шăллăм, сывă-и, аван-и!
Эпĕ питĕ сывă-ха,—
Ал парать Хаçат Йăванĕ
Çул çинче Михайлова.

Манăн ватă супнă пуçăм
Халĕ питĕ савăнать.
Эс пĕлетĕн ĕнтĕ, тусăм:
Васлисса качча каять.

Пурăшвар каччи Тухтаров
Пирĕн ял хĕрне илет.
Ку хыпар халь ял-ял тăрăх
Çунатланнă та çӳрет.

Хĕрачин туйне курмарĕ
Хăй Митюк. Шутла-ха, туй!
Халăхпа пĕрле тăвар-и
Аслă туй та чаплă туй?

Эх, ыран, Иван тăванăм,
Пирĕн-çке ташламалла!—
Терĕ те Хаçат Йăванĕ
Хăвăрт утрĕ малалла.

17

Икĕ хут автан ялта
Авăтма пуçланă.
Витресен сасси кунта
Сывлăша хускатнă.

Энĕш шывĕ хĕрринче
Ковалев çӳренĕ,
Вăкăра çерем çинче
Кăкарса çитернĕ.

Ват çынсем кунта ĕçе
Çамрăк пек пултарнă,
Хăйраса нумай çĕççе
Харăс юрлаттарнă.

Ковалев, Симун пичче,
Хăй çӳçне кăларнă,
Пĕр çĕççи çине пĕрче
Сĕрнĕ те кастарнă.

Пыршисем таса пулма
Сивĕ шыв ĕçтернĕ,—
Вăкăра çапла пусма
Пур иккен типтерлĕх.

Ун кайри урисене
Вĕренпе кăкарнă,
Тыгнă та çерем çине
Якăлт йăвантарнă.

Пĕр мучи кăхах сĕрсен,
Чĕр юна тултармĕш
Тутарма чипер кинсем
Пĕр витре тултарнă.

Виç турат çине тирне
Çыхнă та турттарнă,
Вата хурама айне
Типĕтме хăварнă.

Вучахсем чĕлхеленсе
Çулăмне çĕклеççĕ.
Такансем çинче хĕрсе
Хурансем вĕреççĕ.

Сикмелле шӳрпе кунта,
Пиçмелле хăватлă—
Ĕнерех шаршан вутта
Лавĕпе пушатнă.

Илĕртет хĕвел ăшши.
Кунĕ янкăр уçă.
Улăха кукар шăрши
Сарнă вăкăр пуçĕ.

Килекен хăнасене
Йĕркипе лармалăх
Сарнă халь çерем çине
Темиçе шăналăк.

Çитнĕ ĕнтĕ вун сехет.
Халăх хыççăн халăх
Колхозран хăпса килет
Шавлă та хаваслă.

Халăх пусă хĕррипе
Курăна пуçларĕ,
Çĕнĕ хӳхĕм тумĕпе
Уй-хире сăрларĕ.

Ватă çынсене хушса
Килсерен пĕлтернĕ,
Сарăлса килме лаша
Юриех кӳлтернĕ.

Грузовик çине кĕрсе
Ваçлисса хăй ларнă.
Ун çумпе тăрса хĕрсем
Янратса юрланă.

Акă туй та çакă туй,
Пирĕн туй начар-и!..—
Тенипе хумханчĕ уй,
Улăх та шавларĕ.

Виçĕ ут килет матур,
Виççĕш те йĕнерлĕ;
Васнецов художник пур,
Вăл çапла ӳкернĕ.

Ковалевĕ варринче,
Сылтăмра Тухтаров,
Тепĕр хӳхĕм ут çинче
Хăй Иван Михайлов.

Виççĕш те юрттарнă май
Йăлтăр-йăлтăр халĕ
Ялтăрать вĕсен нумай
Орденпе медалĕ.

Туй хыпарĕ таврари
Пур яла та çитнĕ.
Утартан Лукка юри
Капăр тумлă килнĕ.

Ташласа, кĕрле-кĕрле
Шавлă туй тумалăх
Ерипен пыра-киле
Çитрĕ кĕтнĕ халăх.

Уçă пĕлĕтре çĕршер
Тăрисем юрлаççĕ.
Куккуксем пурте чипер
Харăс авăтаççĕ.

— Пулмĕ уйрăм чĕнесси.
Ларăр ĕнтĕ, ларăр!—
Ковалев старик сасси
Илтĕнет пĕр тапхăр.

Улăхри кĕрекере
Пур этем те курĕ:
Варринче ларать пĕрре,
Пĕр сĕтел мĕн пурĕ.

Чап сĕтелĕ хушшинче
Кам ларма пултарĕ?
Яштака Тимаç çумне
Ваçлисса хăй ларĕ.

Чи малтан вĕсем çумне
Лармала хĕр амĕш.
Вилнĕ паттăр ашшĕне
Асăнми хăвармĕç.

Ковалев Симун пичче
Пулчĕ кĕрекеçĕ.
Ват çынна колхозĕнче
Питĕ хисеплеççĕ.

— Савнă çамрăк мăшăра
Ырлăх пултăр!—терĕ,
Ковалев старик вара
Куркине çĕклерĕ.

Икĕ çамрăк тус килте,
Халăхра ыр курччăр,
Выртччăр ăшшăн иккĕш те
Виççĕн сиксе тăччăр!

Эпĕ мар, колхоз кăна
Тавтуса каларĕ,—
Тенĕ хыççăн таврана
Ковалев пăхмарĕ.

— Тавăсйе!—тесе курка
Тепĕр хут çĕклерĕ.
Халăх шавĕ аякка
Сарăлса кĕрлерĕ.

— Çамрăк мăшăра урра!—
Тенисем пĕр харăс
Энĕш тăрăх улăхра
Лăпланса тăмарĕç.

Авалхи йăласене
Пĕлекен Татик аппа
Пăслă вăкăр какайне
Лартрĕ йывăç ывăспа.

— Эсĕ, ватă çын, хуçа,—
Вăл темле яка сăвва
Каласа çурма пуçа
Тыттарать Ковалева.

— Эсĕ çамрăк, çавăнпа
Калаçма пĕлес пулать,—
Тенĕ май Татик аппа
Ивана чĕлхе парать.

Пĕркеленнĕ пит-куçне
Куллипе пушшех пĕрсе
Луккапа Тухтаровне
Чавсаран илет тĕртсе.

— Вăкăр çи те, тап та сик
Эс те, ку та ташăра!—
Иккĕшне чее Татик
Хăварать пĕрер ура...

Çĕнĕ çынсене тата
Пĕрершер ура—çапла
Ташласа яма кунта
Ĕнтĕ хатĕр лармалла.

Халăх ĕçнĕ-çинĕ май
Калаçса ларма ăста.
— Тавăсйе!—тени нумай
Илтĕнет унта-кунта.

Çамрăк халăхăн чĕри
Туртăнать ташша кĕме—
Туйĕ туй пек пултăр-и!—
Кисретеççĕ çереме.

Хускалаççĕ-çке пăртак
Ватăлма пуçланисем.
Тăпăр-тăпăр тăпăртăк
Сикесси килет вĕсен.

Улăхри хаваслăхра
Кар тарса пĕр харăс
Ташлама чĕнсе юрра
Шăрататъ хуткупăс.

— Тимаçа! Тухтарова
Çăмăл пултăр ташласси!—
Илтĕнет ытти шава
Хупласа Татик сасси.

Хӳхӗм ҫӗлӗкне Тухтаров
Кап пусса лартать,
Аттине ҫапать хастаррӑн
Ҫӑтӑк-ҫӑтӑл-ҫат!

Пӗшкӗнсе пӗрре вӑл ларчӗ,
Тепӗр вӑйӑинче
Ҫаврӑнса илсе хӑтланчӗ
Пӗр ура ҫинче.

Туйӗнче асра юлмалӑх
Ҫил пекех Тимаҫ
Вӗҫнӗ чух Иван Михайлов
Тусӗнчен юлмасть.

Ваҫлисса тавра вӑр та вӑр
Ташлама кунта
Икӗ каччӑ питӗ харсӑр,
Иккӗш те ӑста.

Астӑвать кукар ура
Ҫинине Лукка,
Илтерет хаваслӑхра
Чӑвашла «Линкка».

Капӑр тумлӑ халӑх ҫӑмӑл
Тытӑнать ташша,
Каллӗ-маллӗ ҫӳретет вӑл
Уҫӑ сывлӑша.

Кӑвӑл-кӑвӑл кӑвакарчӑн
Хушшинче чавка
Курӑнман пекех, пытанчӗ
Лутрарах Лукка.

Ташласа Тимаҫ Тухтаров
Сикнӗ тӗлсенче
Курӑнса каять вӑл халӑх
Пуҫӗ ҫийӗнче.



## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ

1

Хаçатсем концерт çинчен
Пĕлтермен, анчах хыпар
Çуртсенче, урамсенче
Сарăлма хăватсăр мар.

Пысăк çурт çавра залне
Пĕр сехет ытла малтан
Килсе çитнĕ каçхине
Халăх пĕтĕм хуларан.

Иккĕн те ларма тивет
Пĕр пукан çине, тата
Кĕрессе кĕтсе кĕрлет
Ушкăн-ушкăн çын тулта.

Алăк патĕнче хăйне
Вырăн тупнă Генри Рун,
Хĕсĕкре аллисене
Хускатма çук майĕ ун.

Вăл курман-ха халиччен
Харсăр Робсон тухнине,

Нумай илтнĕ ун çинчен
Тусĕсем каланине.

Робсон ак утса тухать.
Харăс ал çупа-çупа
Халăх кар сиксе тăрать
Ытарми хаваслăхпа.

Çамрăк мар, анчах та ун
Сарлака кӳлепине
Панă-мĕн хăватлă юн
Ватăлма пĕлми вăйне.

Ун юрри-сăвви çӳрет,
Ярăнать Мускав çинче,
Пĕтĕм тĕнчере кĕрлет
Ялсемпе хуласенче.

Хулăн та таса сасса
Сывлăш хумĕ хăш чухне
Çитерет янраттарса
Миллион хуçи килне.

Леш ерет çиленнипе
Çивĕ тарлă чĕтренке,
Пĕркеленчĕк аллипе
Пăркалать приемнике.

Ылтăн доллар янравне
Итлеме вĕреннипе
Килĕшмест хуçасене
Робсон тĕрĕс юррипе.

Паттăр юрăçа курма
Ĕмĕтленнĕ Генри Рун.
Çитнĕ халĕ савăнма
Уншăн пысăк паллă кун:

«Широка страна моя»—
Текен юрă вырăсла
Сарăлса кая-кая
Янратса тăрать зала.

Аслă халăх çыракан
Пуплекен хитре чĕлхе
Тухнă уçă кантăкран
Çуллахи тĕтрелĕхе.

Миссисипи шывĕнчен
Хăпарса тăран тĕтре
Вăйлă юрă кĕввинче
Хумханать чĕтре-чĕтре.

«Вольно дышит человек»—
Тенĕ сас каять çĕрле
Юмахри вут-кайăк пек
Хуларан инçенелле.

Кĕмсĕрт-кĕмсĕрт алăка
Хытă çапнă сасă та
Кăшкăрни сасартăках
Илтĕнсе каять тулта.

Концерта пăсма иккен
Килнĕ халь полисменсем.
Хускалман-ха хĕнекен
Реçинкке чукмарĕсем.

Самăр йĕкĕтсем зала
Кĕрĕс-мĕрĕс кĕресрен
Сыхланса тăма мала
Тухнă халăх пур иккен.

Çамрăк, çӳлĕ Генри Рун
Тăчĕ ушкăн хушшине:
— Çăмăл пулмĕ, юхĕ юн,—
Терĕ вăл ăшра хăйне.

Юнама хаяр чукмар
Тытăнать, анчах кунта
Этемсем хăватсăр мар—
Кĕртмĕç юраллă çурта.

Тăнлавран, хысанаран,
Хырăм айĕнчен пама,
Тыттарма çилли пуртан
Халăх тухнă урама.

Пултарать тӳпелешме
Халăх алă хĕриччен—
Сирпĕнсе тăрать тӳме
Полисмен тумтирĕнчен.

„Made in VSA"—тесе
Çырса лартнă йĕс тăха
Самăр пилĕкрен вĕçсе
Вăркăнать-çке аякка.

Çурăк тум та чăл та пар
Вĕçкелет çынсем çинче.
Шăхăрса лекет чукмар
Генрие янахĕнчен.

Вăл ӳкет, сиксе тăрать,
Çиллине тӳсмен енне
Икĕ аллипе тытать
Лутрарах полисмене.

Вăл ăна теприн çине
Çĕклесе çапать, вара
Тата тепĕр эсрелне
Пăчăртать атакăра.

Юнлă, тĕттĕм урамра
Çапăçу хĕрсе çитет,
Чарăнмасть, анчах залра
Çаплипех концерт кĕрлет.

Юрлама чарма иккен
Чукмарсем начар, кĕске.
Пушарсем сӳнтерекен
Машинсем килеççĕ-çке.

Пысăк юраллă шава
Сӳнтерсе лартма иккен
Сирпĕтеççĕ сив шыва
Насуссен пыршисенчен.

Тăмлă шыв кĕрет зала,
Чашкăрать çынсем çине.
Мĕн туса-ши шăнтмалла
Вут пекех чĕресене?..

Халăх çумăр айĕнчен
Ушкăн-ушкăн тухрĕ халь.
Ян каять урамсенче
«Интернационал».

2

Янахне çыхса пĕтернĕ,
Шыçă питлĕ Генри Рун
Вăхăта пăхса типтерлĕн
Ĕçе тухнă тепĕр кун.

— Концерта кайма пултарнă
Халĕ ĕнтĕ юрă çи!—
Тенĕ те хуса кăларнă
Шофертан гараж хуçи.

Выçă пыршă пĕркеленĕ,
Пăкăр-пакăр юрласса
Кĕт-ха, савнă тусăм,—тенĕ
Йĕкĕлти хуçа кулса.

Унтанпа çитет пĕр уйăх.
Чăн та выçă Генри Рун
Танккаса çӳрет çул тăрăх
Каллĕ-маллĕ, ун та кун.

Апат-çимĕç магазинĕ
Умĕнчен иртсе кайма
Питĕ йывăр—çăкăр çинĕ
Вăл чĕре сури тума.

Ун ĕнер укçи пĕтменччĕ,
Илнĕ çăкăр таткинчен
Паянхи пĕр-ик тĕпренчĕк
Юлнă пулнă кĕсйинче.

Кĕленче тыттарнă кантăк
Хушшинче сысна сали
Курăнса каять сасартăк,
Колбаса выртать тулли.

Ăшаланă сарă пулă
Хӳрине тăсса выртать.
Тем те, тем те, тем те пулĕ...
Тӳлесе илме ыйтать.

Пăрлантарнă пăчăр-каййăк
Лавккара нумаййине
Пĕлтерсе питех те лайăх
Çырнă кантăк анлăшне.

Сĕлехи тухса шĕркерĕ
Мĕскĕн çын çăварĕнче.
Вăл кăштах персе ўкмерĕ
Магазин урамĕнче.

Куçĕ-пуçĕ алчăрарĕ,
Миссисипи хĕррине
Вăл кĕçех выртма пултарĕ
Чунĕ тарăхнă енне.

Полисмен ăна ямарĕ,
Шĕвĕр пўрнипе пĕрре
Тĕллесе ăна кăтартрĕ
Сарнă ешĕл кавире.

Ун пек сарăма курман-тăр
Пĕр этем те халиччен.
Утмăл пилĕк километр
Тăсăлса каять иккен.

Хулари сăра королĕн
Çуртĕнчен пуçлать вĕçне,
Перĕнет кавирĕн çулĕ
Колбаса хуçи килне.

Пуянсен туйне культурлă
Ирттерме шутланипе
Вăл иртет нумай хир урлă
Миссисипи хĕррипе.

Малашне кулмалăх юлĕ
Ассенче пуян парад...
Çĕпрепе сăра королĕ
Хăй хĕрне качча паратъ.

Пулмалла иккен кĕрўшĕ
Колбаса король ачи.
Çамрăк çыннăн ĕнтĕ ўсĕ
Доллар—тимĕр арчинчи.

Шăпăрт тасатса çитернĕ
Хулари хупахсене.
Хĕр сăнне юри ўкернĕ
Сăра кĕленчи çине.

Куçĕ чакăр та кăварлă,
Чăмăр питлĕ, чиперкке—
Çав ўкерчĕкре тыттарнă
Хĕрĕн аллине черкке.

Тĕнчере ĕçсем пыраççĕ
Еплерех? Апла-капла
Хыпарсем пĕртте памаççĕ
Хаçатсем эрне ытла.

Паллă ик миллионерăн
Туйĕ пуласси çинчен
Вуласа пăхма пултарăн
Кулленех хаçатсенче.

Лапсăркка хўреллĕ йытă
Çамрăк хĕрĕн пур иккен.
Ун валли туяннă çутă,
Анлă ылтăн турилкке.

Пур иккен тата пĕр ватă
Ырă чунлă упăте,
Талăкне çиет тăваттă
Яланах таса çĕрте.

«Кашăкпа ăсса çитерчĕ
Упăте пĕрре йытта»—
Тенĕ те фото-ўкерчĕк
Кĕртнĕ пысăк хаçата.

Упăтеллĕ хĕрĕн туйĕ
Чăннипех те çитнине
Урамра такам та туйĕ
Халĕ уçă ирхине.

Ку туя кĕтсе çўренĕ
Хулари полисменсем,
Хытă хырнипе хĕрелнĕ
Хутлă-хутлă ĕнсисем.

Малтанах хула хаçачĕ
Çырнă пек, пĕлме хушса
Вăрçăри пекех хăварчĕ
Симĕс хăмпă сывлăша.

Çурçĕрти штатсен сехечĕ
Вунпĕр çапнă тĕлсенче
Вăл хыпар туса çĕкленчĕ
Пысăк çуртăн тăррипчен.

Хапхине уçса шавларĕ
Чаплă шурă чуллă кил.
Тухрĕ те шăва пуçларĕ
Малтанхи автомобиль.

Вăл çемçе кавирĕ тăрăх
Пынă май, ăна пăхма
Кĕпĕрленнĕ хăвăрт халăх
Ик енне те урама.

Самăр питлĕ каччă ларнă
Типшĕм питлĕ хĕрĕпе.
Машинне çакса тыттарнă
Тĕрлĕрен çеçкесемпе.

Ашкăнса пыма шутланă,
Çавăнпа хĕрпе качча
Аппĕ-амĕш лартса панă
Вак укçаллă пĕр арча.

Йăл кулса вĕсем лараççĕ,
Иккĕш икĕ ывăça
Тултарса илсе сапаççĕ
Шăкăр-макăр вак укçа.

Тепĕр хут ăсса илеççĕ
Иккĕш те укçа алла.
Пăхăрсем вара вĕçеççĕ
Ушкăн сарă сăпсалла.

Вак укçа пухма тăраççĕ,
Пĕр-пĕрне тапта-тапта
Этемсем чупса çӳреççĕ
Урамра унта-кунта.

Арчинче пĕтмен-ха, çитĕ
Çынсене харкаштарма.
Ķăшкăрни те, макăрни те
Тулчĕ анлă урама.

Çамрăк мăшăр иртсе кайрĕ.
Умлăн-хыçлăн йĕркипе
Пысăк туй тухса шавларĕ
Шучĕ çук машинсемпе.

Хыçалтан пыма кăларнă
Грузовой машин тата.
Ķолбаса королĕ ларнă
Шоферпа пĕрле унта.

Ķолбаса ўке пуçларĕ
Ункăн-ункăн урама.
Генри Рунăн вăй юлмарĕ
Йĕрĕнсе пăхса тăма.

Мăшкăла тўссе пĕр татăк
Илмĕ çамрăк Генри Рун.
Выçăхни хăех сасартăк
Иртсе кайрĕ халĕ ун.

Ķавире сурса хăварчĕ,
Вăл таптарĕ çиллипе,
Ķаялла пăхми уттарчĕ
Миссисипи хĕррипе.

Вăл ларса канма пĕлмерĕ,
Çитрĕ пĕчĕк хулана.
Тинĕс хĕрринче чĕтретрĕ
Сивĕ нўрлĕ çил ăна.

Вăл аран утса пыратчĕ,
Ĕшенсе ырса çитсен,
Питĕ йывăр туйăнатчĕç
Хăмпăланнă урисем.

Ķунĕпех хĕвел пĕçернĕ,
Халь чиксе сурать ĕнси.
Генрие шартах сиктерчĕ
Пĕр ачан çинçе сасси:

— Пĕр канмалăх, вуламалăх
Тухнă халь кăна хаçат.
Советран Иван Михайлов
Генрие салам ярать!

Генри Рун чылай ухтарчĕ,
Телейне тин тупнă пек,
Ачана пырса тыттарчĕ
Тутăх тивнĕ вак-тĕвек.

Тĕксĕмрех урам хунарĕ
Çутă тăкнă кĕтесре
Йăпшăнса тăрса вуларĕ
Хаçата пĕрре, тепре.

Чăваша кайса çӳренĕ
Мăкăрти корреспондент
Çиленсе çырса тиркенĕ,
Асăнман ырри çинчен.

Генри Рун хальхи пек лайăх
Ылтăн çăлтăрлă çынна
Астăвать... Иван Михайлов
Йăпатать пĕччен чуна.

Тинĕс çийĕнче çĕкленнĕ
Сĕлтĕш пек çăра тĕтре.
Генри Рунăн ĕнтĕркенĕ
Учĕ-тирĕ сивĕре.

Имшерленнĕ хыççăн йывăр
Ыйхă килчĕ—тĕлĕкре
Инçетри Иван çĕршывĕ
Килтĕр ун умне пĕрре!

— Килтĕрех!—тесе вăл халсăр
Кĕтессе пырса ларать.
Иртнĕ кун ĕнер апатсăр,
Халĕ те лекмест апат.

Куççулли тумлам-тумламăн
Шăпăр-шăпăр аннипе
Умĕнчи хула урамĕ
Чĕтренет çутисемпе.

3

Выртать сар майăр курланки ялта,
Хирти çулсем çинче унта, кунта та.
Авал хĕрӳ тыр вырнă вăхăта—
Çурла тесе каланă. Ячĕ ватă.

Комбайн уйăхĕ—теме хăвачĕ пур,
Апла теме пур халăхăн сăлтавĕ.
Уя тĕпрен кисретнĕ пек матур
Яра кунах кĕрлет моторăн шавĕ.

Илсе те иксĕлми пуян тĕнчен
Сĕткен апачĕн çук хĕрри те, шучĕ.
Вĕçет каю чечекĕсем çинче
Пĕрин çинчен теприн çине пыл-хурчĕ.

Кĕрхи хаяр çилсем вĕрессине
Сиссе ĕçреваскас килет чĕр-чунăн.
Çĕмел пек пысăк тăкăс йăвине
Çĕкленĕ кăткă, йӳçĕ пыл та хунă.

Патаккуна хăвар йăви çине,
Кайран илсе çула ăна пăртакçă!
Епле аван! Ялти çынсем пылне
Юри пухса кĕленчере тытаççĕ.

Чĕрчун çӳрет тулли хаваслăхпа.
Çурисене ӳстернĕ. Ĕнтĕ çитĕ!
Ури çинче йăраланать упа,
Какай чыхать, çиет хăмла çырли те.

Тивмест кĕске хӳреллĕ мулкача,
Шăши тытмасть, тутла вĕреннĕ тилĕ.
Хура, кăвакала, чăхха анчах
Тытма ăна чее ăсталăх кирлĕ.

Хĕвел ансан, пăртакçă тĕттĕмре
Тил тус çӳрет çырма çыранĕ тăрăх.
Хитре тĕсе ларса çитмен тире
Пăсас килмест, пемест Тимаç Тухтаров.

Нумай вĕçеççĕ Атăл тăршшĕнче
Кăвакалсем—пеме май çук Тимаçăн.
Ĕçре ĕшеннĕ пĕвĕ çийĕнче
Тăрать кăвак тӳпеллĕ август каçĕ.

Хĕвел хăрпăкĕсем хускаличчен
Çынсем иксе тăрса хирте çӳреççĕ.
Кĕреплесен, шăпсен те сенĕксен
Хуçланчăк мĕлкисем хире ӳкеççĕ.

Çанталăк кайнă кӳкĕрт пек типпе.
Тырпул туни муртак, тулли пучахĕ
Ĕнсе силленĕ уярти çилпе.
Пĕрчисене тăккаласа вăл чакĕ.

Хăлхасене йăлăхтарми шавра
Вырать хăй тĕллĕн çӳрекен комбайн.
Тырра тултарнă пысăк бункера,
Сап-сарă ылтăна кăларнă майлăн.

Сысна тушки пек шур хутаççене
Суйланă пек таса тырра тултарнă.
Грузовиксем çӳреççĕ станцине.
Вĕсем çулсем çинче тусан тустарнă.

Тусан вĕçет. Тӳлек вăрмансенче
Пăван лашасене çыртса юнлатнă,
Ĕнесенне, ӳт-тирĕ айĕнче,
Усал пукра çăмартине хăварнă.

Шăпланнă шăпчăк. Халĕ таврана
Çеçке шăрши те сармĕ çутçанталăк.
Анман поэт сăввисенче кăна
Юрлать, çĕртме иртсен те, тĕрлĕ кайăк.

Тăри те хăпармасть—чĕпписене
Тăрантарма вăраннă ырă туйăм.
Юрлатăп, юрататăп эпĕ хирсене
Сана, ытла пуян пӳлмеллĕ уйăх!

Хĕле кĕтсе алса-чăлха çыхма
Кĕрхи çăра çăмне ӳстерĕ сурăх.
Каю пуçларĕ тикĕс хăпарма,
Каллех ешерчĕ пирĕн аслă улăх.

Ĕçчен этемсене шап-шур кĕпе
Памашкăн ашкăрса хуралчĕ кантăр.
Тăпра—тымарсене тăрантнипе
Чылай ĕшеннĕ. Халĕ ĕнтĕ кантăр!

Мана паян килти çавра сĕтел,
Пукан та кирлĕ мар. Çырма чараççĕ.
Çире—кăвак тӳпе. Пăхать хĕвел.
Çилсем вĕреççĕ, çӳçĕме лăпкаççĕ.

Курак-чавка пухать-и ушкăнне,
Е вĕтĕ пĕлĕтсем хуллен шăваççĕ—
Пурин те мĕлкисем ман хут çине
Саспаллисем пекех пырса выртаççĕ.

Яра кунхи шава, кĕрлен сасса
Итлетĕп эпĕ, карăнса утатăп,
Çерем çинче урасене тăсса
Выртатăп та екки ярса çыратăп.

Сиксе тăратăп эпĕ,—уй-хире,
Çиле те хĕвеле, пуян çĕре те
Мухтатăп хамăн юррăм-кĕввĕмре,
Каллех ырми-канми утса çӳретĕп.

Умран вĕçсе хăпарчĕ путене,
Аял вĕçет какайĕ самăртан-тăр.
Уй-хир ялан мул патăр çынсене,
Хавраслă кайăка та вăл тăранттăр!

4

Авăн çапнă хыççăн халĕ
Авалтан пыран йĕрке
Хушнă пек, кăçал хускалĕ
Шавлă пысăк ерминкке.

Сарлака çеремлĕ вырăн
Икĕ вырăн хушшинче.
Ташлама та питĕ ырă,
Юрлама та—каçсенче.

Лавккасем унта халь лартнă,
Çапса тухнă хăмапа.
Тахçанах тавар турттарнă
Лашапа, машинăпа.

Пĕлĕте çурса хĕвелĕн
Ярăнса çутти ӳксен,
Ирхине пурте йĕркеллĕн
Пухăнаççĕ этемсем.

Лашапа, машинăпа та
Çăмăллăн утса çуран
Вăтамми, яшши те ватă
Килнĕ пĕтĕм тавраран.

Савăнса тăрса сутмалăх
Тĕрлĕрен тавар пуртан
Хусантан та килнĕ халăх,
Горькирен, Шупашкартан.

Курăнса тăрать пурин те
Шĕкĕр çитнĕ халăхра
Тумĕ симĕс те, кĕрен те,
Сарă та, кăвак, хура.

Пур ялтан та килнĕ каччăн
Шухăш-туйăмне хĕртсе
Илĕртме юри чăнах-чăн
Капăрланнă сар хĕрсем.

Вăхăт пур писме паланăн,
Вăхăт пур ăна татма.
Хăшпĕр хĕрĕ шухăшланă
Çĕнĕ çамрăк кин пулма.

Ермикке иртсен курса тăр:
Çӳресе туйран туя
Халăх çĕклĕ тăпăр-тăпăр
Ташăра мĕнпур вăя.

Урлă-пирлĕ, каллĕ-маллĕ
Утнипе тухмасть тинке.
Тем ыйтсан та, сутĕ халĕ
Кĕрлĕ-шавлă ермикке.

Метр вĕççĕн хӳхĕм пурçăн
Чăррăн-чаррăн çурăлать.
Патефонĕ те пит уççăн
«Шупашкар туйи» юрлать.

Хакĕсем пурин те паллă—
Пăхăр, курăр, илĕр тум!
Ак пальто кăтра çухаллă,
Пуставран хура костюм.

Атăр тирĕнчен çĕленĕ
Çĕлĕк те кĕтет пуçа.
Тӳлеме çынсен ĕрченĕ
Кĕр енне чылай укçа.

Акăшкӳл сутма кăларнă
Çаврака арбузсене.
Çакă тутлă пархатарлăх
Илĕртет этемсене.

Лар та çи! Касма пĕр пекĕ
Пур унта, ларма—пукан.
Аслă улăхăн сĕтекĕ
Чĕлхене тивет паян.

Акăшкӳл столовăйĕ усна
Ермикке валли юри,
Çынсене кĕтмелĕх пуснă
Хур, така, сысна çури.

— Килĕре кайма ан шутлăр
Пушă выçă хырăмпа!
Пирĕн ял апачĕ тутлă!—
Такмаклать Татик аппа.

Чĕкеçле çемçе чĕлхеллĕн
Йыхăрни чарать çынна.
Тутанас пулать йĕркеллĕн
Какайне, ăна-кăна.

Юнашар лавкка тутарнă
Хăмаран Ильин Лукка,
Кăтартма пылне тултарнă
Сарă йывăç чашăка.

— Юлташсем, пĕрре тутанăр,
Тутансан кайран вара
Ĕмĕрех асра хăварăр
Пирĕн пыллă утара!—

Илтĕнет Лукка шавланă
Сасă пĕр самант хушши.
Пăчă сывлăшра хăпарнă
Вăрманти пек пыл шăрши.

Ташлани те, калаçу та
Илтĕнет мĕнпур çĕрте.
Хĕвелте тӳме те çутă,
Пиçиххи тăхийĕ те.

Карусель тени вăр та вăр
Çаврăть яш-кĕрĕме.
Тăвансем, юратăр, савăр
Шăрăх кун ларса вĕçме!

Карусель колхоз пасарĕ
Варринче ярăннăçем
Шурă, симĕс, хĕрлĕ, сарă
Хӳхĕм пурçăн тутăрсем

Вутлăн-хĕмлĕн явăнаççĕ,
Тĕрлĕ тĕс пĕрлешнипе
Курăнса вĕсем каяççĕ
Асамат кĕперĕ пек.

Тĕрлĕрен сăрпа сăрланă
Хăмпăсем ачасене
Илĕртсе çӳле хăпарнă,
Ăнтăлаççĕ тӳпене.

Пурăшварăн пур хăй енĕ,
Çыннисем ĕçре ăста.
Чӳлмексем вĕсем тиенĕ,
Сутма килнĕ халь кунта.

Иртенпе юлташ-тăванĕ,
Хурăнташĕ хушшинче
Уткалать Хаçат Иванĕ
Ерминкке кĕрлевĕнче.

Пăчă кун, ытла уярĕ
Типĕтсе тăрать пыра.
Вăл çимесĕр хăвармарĕ
Çарăка та хăяра.

— Хуньăм, кил!—тесе чĕнтерчĕ
Темиçе хутчен Лукка,
Сарă пыл ăна çитерчĕ
Темиçе тулли курка.

Пурçăнпа пустав таварĕ
Сутакан ерминккере
Самаях Иван тарларĕ
Пĕр канми çӳре-çӳре.

Вăл илес тесе çунмарĕ,
Ахалех пĕлме кăна
Шырасан та, тупаймарĕ
Çăпата сутакана.

5

Юлашки чугун кĕперĕ
Кĕр-кĕр пуйăс хыçĕнче
Юлсанах, Мускав кĕрлерĕ
Çичĕ çӳлĕ сăрт çинче.

Мускавра Михайлов пулнă
Темиçе те, ун асне
Малтанхи ун шавĕ юлнă
Пĕтĕм ĕмĕр тăршшĕне.

Хĕрĕх пĕрмĕш çул Михайлов
Хĕрлĕ çар парадĕнче
Пулнине тытать-ха лайăх
Халь те куçĕ умĕнче.

Аслати пек ӳхĕреççĕ
Тупăсем Можайск панче.
Кантăксем тăр-тăр чĕтреççĕ
Мускаври кил-çуртсенче.

Шурăмпуç шевли пăртакçă
Кăвакартнă пĕлĕте.
Ирхине танксем шăваççĕ
Лăпкă Хĕрлĕ Площаде.

Сивĕре вĕсем пасарнă,
Ӳкнĕ пас чулсем çине.
Шурă лĕпĕш пек пас ларнă
Салтаксен тӳмисене.

Ĕмĕрне асра тытмалăх
Чаплă кун тухать умне.
Шутарать Иван Михайлов
Вăтăр тоннăллă танкне.

Аслă Ленин мавзолейĕ
Умĕнчен çак паллă кун
Танкĕпе иртме телейĕ
Питĕ пысăк пулнă ун.

Салтаксем тухса тăраççĕ
Хĕрлĕ Площадь варрине.
Çўлелле çилсем туртаççĕ
Пуç çинчи ялавсене.

Чăрăшсем лараççĕ çамрăк,
Яланхи пек илемре.
Çил вĕрет, вара сасартăк
Сирĕлсе каять тĕтре.

Ватă Кремлĕн куранчĕ
Саккăр çапрĕ—ун чухне
Ерипен утса хăпарчĕ
Сталин мавзолей çине.

Аслă парти авангарчĕн
Çыннисем унпа пĕрле
Тухса тăчĕç таччăн-таччăн
Мавзолей çине çўле.

Салтакла ахаль шинеллĕ
Сталин тухнă самантра
Янраса каять илемлĕ,
Уçă паттăр сас «урра!»

Салтаксем пурте пĕр харăс
Кăшкăран сассем кунтан
Вăрçă фрончĕ тăрăх кайрĕç
Кăнтăртан поляр таран.

Нимĕç танкĕсем шăваççĕ
Хура тинĕс хĕрринче.
Вилĕме çĕнме тухаççĕ
Матроссем окопсенчен.

Вилĕме çĕнме тăраççĕ
Матроссем, гранатсене
Тытнă май, пырса выртаççĕ
Килекен танксем айне.

Партизанка Зоя халĕ
Сивĕре шăнми çӳрет,
Сĕм çĕрле пĕр вырăс ялĕн
Вăрманне пырса кĕрет.

Сарлака çĕршыв йыхравĕ
Хускатать атакăна.
Инçетри Гангут утравĕ
Çийĕнчи гарнизона.

Гангутри салтак çĕклерĕ
Çийĕнчен çурса кĕпе—
Хĕрлĕ пултăр—вăл пĕветрĕ
Вилнĕ тусăн юнĕпе.

Вăрçăпа хĕвел çунтарнă
Хирсенче юта çĕнсе
Çапăçма пĕр кар хăпарнă
Китайри партизансем.

— Шанчăк пур!—тесе пăхаççĕ
Инçене, Мускав енне,
Тата хытă чăмăртаççĕ
Алăри пăшалсене.

Хĕрлĕ ялавсем пуç тайнă
Мавзолей таврашĕнче
Çывăхах тăрать Михайлов
Танк бригади ретĕнче.

— Аслă Ленинăн ялавĕ
Хӳтĕлетĕр çул çинче!—
Терĕ Сталин. Ун йыхравĕ
Янăрарĕ пур енче.

Вăл сире вăй патăр!—тенĕ
Сăмахсем Мускав çинчен
Çак самант çитсе кĕрленĕ
Вăрçăри окопсенче.

Анлă Хĕрлĕ Площадь тăрăх
Иртекен ялавсене
Астăвать паян Михайлов,
Астăвать танкистсене.

Вăл чылай кăна çӳрерĕ
Метропа, тролейбуспа.
Кĕркунне хула кĕрлерĕ
Яланхи пекех шавпа.

Килнĕ чух вăрман сап-сарă
Курăнатчĕ çул çинче.
Пур кунта та кĕр сăнарĕ
Сарлака аллейсенче.

Канăçа пĕлмен Мускавăн
Аслă кĕввинче çăкан
Чăштăр-чăштăр лăпкă шавĕ
Илтĕнсе каймасть паян.

Инçетри Урал металĕ,
Хум та Атăл хĕрринчен
Килнĕ тейĕн, вĕсен шавĕ
Пур пек çак урамсенче.

Пĕтĕмпех кунта илемлĕ—
Кунĕпе çӳре те кур!
Пур кунта Кавказ хĕвелĕ,
Панулмиллĕ Крым та пур.

Тутанма тем те пĕр илен—
Магазин кĕтсе тăрать.
Пур кунта тусен шăршиллĕ
Сар хĕвеллĕ виноград.

Хĕр валли мĕн халĕ лайăх?
Мĕн каять-ши кăмăлне?
Пĕр чечек çыххи Михайлов
Илчĕ сулхăн кĕркунне.

Вал утать. Авто сасси те,
Шав та сисĕнмест ăна.
Кайĕ, кайĕ те вăл çитĕ,
Курĕ вăл Людмилăна.

6

Кĕрлесе нумай машина
Иртнине те итлеме
Вăхăт пулмĕ икĕ çыннăн,
Вăхăт кирлĕ пуплеме.

Ыранах ирпе Михайлов
Каймалла Будапешта.
Ёмӗрне асра юлмалӑх
Калаҫас пулать унта.

Чӗрисем епле хавассӑн
Хӑвӑрт-хӑвӑрт тапнине
Илтсе пынӑ пек ачашшӑн
Иккӗш тытнӑ пӗр-пӗрне.

Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫу та,
Савӑну чипер пыма
Ӳкнӗ янкӑр уҫӑ сутӑ
Пӗтӗм аслӑ урама.

Пин-пин лампӑ вӗҫсӗр-хӗрсӗр
Мӑчлатмасӑр ҫуннипе
Аслӑ кӗмӗл тинӗс евӗр
Ҫуталать кӗрхи тӳпе.

Халӑх шухӑшне пит тарӑн
Калашле, урамсенче,
Йӗп тупмашкӑн та пултарӑн
Эсӗ ҫурҫӗр тӗлӗнче.

Ҫӗр ҫинчи ҫӑтмах пек лайӑх
Тикӗс, такӑр урампа
Савӑнса утать Михайлов
Савнипе, Людмилӑпа.

Бронзӑран шӑратнӑ Пушкин
Асӑрхать гранит ҫинчен
Шавлӑ халӑх ушкӑн-ушкӑн
Иртнине бульварӗнче.

Пусмӑра хаяр ҫил-тӑвӑл
Ишессе шанса авал,
Иртнӗ йывӑр ӗмӗрте вӑл
«Милость к падшим призывал».

Чӑваша та вӑл хӗрхеннӗ,
Ӗрӗнпур хули енне
Кайнӑ чух кӗрсе ҫӳренӗ
Пирӗн чухӑн ялсене.



Çулçăсем хăрса саралнă
Вăхăтра, сентябрьте,
Шăнкăравĕ янăранă
Акăшкӳл ларан çĕрте.

Тинкерсе пăхать Михайлов
Чĕрĕ пек поэт çине,
Шăкăрт-шăкăрт утнă майăн
Асилет сăввисене.

Çĕр çине хĕрӳ Октябрь
Çитиччен чăваш çинчен
Çырнă пĕр харам тем те пĕр
Кадетсен хаçатĕнче.

— Раççейре чăнах та Ленин
Çĕнтерсен, ыран ирпе
Мускава чăваш иленĕ
Çĕрçăтман çăпатипе.

Пушкин умĕнче вăл ларĕ,
Тап-таса гранит çинче
Пылчăкне хырса хăварĕ
Уринчи çăпатинчен.

Çарăк та чăваш ӳстерĕ
Бульварта,—çапла пĕрре
Çырнă пĕр тĕнче тискерĕ,
Лĕкĕрти йĕке-хӳре.

Çĕршывра Октябрь çилĕ
Патшана, харампыра
Сирпĕтсен, чăвашăн çулĕ
Çитрĕ вырăс хулине.

Малтанах штиблет та атă,
Хӳхĕм тум пулманнипе
Килнĕ вăл, чăваш, чăнах та
Сăхманпа, çăпатипе.

Качака кĕтме е çарăк
Бульварта лартса-тăвас
Сăлтавпа килмен, пуçларĕ
Вĕренме ĕçчен чăваш.

Пусăра тусан тустарнă,
Тĕренпе шăрта кăна
Пĕлнĕ тертлĕ çын хастарлăн
Йĕнерлет наукăна.

Йӳçĕ сĕрĕм мăкăрланнă
Тăйлăк-тайлăк пӳртсенчен
Тухнă хыççăн пирĕн анлă
Пурнăç кайрĕ çĕр çинче.

Вуникке тахçан юрларĕ
Кремль башнинчи сехет.
Савнисен чĕри канмарĕ,
Қалаçса тăрас килет.

7

Совет çĕршывĕнчи кĕтессенчен
Такам та пур çак ушкăн хушшинче.

Пахчаçă, мамăкçă, тырпулçă та
Ларса пырать купеллĕ вакунта.

Делегатсем, хăйсен чунне уçса,
Лараççĕ шăкăл-шăкăл калаçса.

Вĕсем ĕçре туяннă телее
Илсе пыраççĕ çамрăк Венгрие,

Хуçалăха тытса пыни çинчен
Вĕсем унта пĕлтерĕç ялсенче.

Пĕр-пĕринчен чунтан ыйтса пĕлме
Чĕлхе чараймĕ халĕ этеме.

Илемлĕ, кăмăллă çынна ялан
Туйса илме пулать куçран пăхсан.

Нихçан та халăхсем пăхман капла
Пĕрне пĕри хавасլă хăналла.

Пĕри теприн патне çӳренĕ хĕçĕпе,
Çуртне-йĕрне çунтарнă вучĕпе.

Шутланă пĕр пĕрин хĕрĕсене
Пĕрех сехетлĕх арăм выранне...

Пĕри теприн йăхне хăртма вара
Ачисене пăрахнă кăвара.

Пĕр халăх теприне пĕтернипе
Историре те тухнă «хисепе».

Вĕлерттерме çар ертнĕ çынсене
Чул палăк лартнă ун чухне.

Колхозниксем телей тие-тие
Хӑна пулма каяҫҫӗ Венгрие.

Ҫынсем ӑҫти колхозсенчен кӑна
Килсе ларман купеллӗ вагона!

Саратов вырӑс ҫыннипе матур
Калаҫакан узбек, казах та пур.

Грузин ҫемҫе кунчаллӑ атӑпа
Хуллен утса иртет коридорпа.

Чӳречерен ҫил лӑпкӑ вӗрнипе
Вӗҫсе тӑрать украинла кӗпе.

Таҫтан та сисӗнет тутар пурри—
Кӗрлет «йӗрек яна» текен юрри.

Паян каҫпа Михайлов пӗр-пӗччен,
Каймасть пӗрре те кантӑк умӗнчен.

Ҫанталӑк кайнӑ сулхӑн кӗр енне,
Пушатнӑ ӗнтӗ тулӑх хирсене.

Сап-сарӑ хӑмӑллӑ ҫӗрсем иртсен,
Ума тухаҫҫӗ ешӗл тӗслисем.

Хирте халь хӑмӑр пӗлӗт иртнӗ пек
Хура курак вӗҫет ушкӑнӗпе.

Пралукӗсем, курак нумай ларсан,
Силленкелеҫҫӗ питӗ йывӑртан;

Екки таран ҫисе тӑраннипе
Пӗсехисем така шӑрттанӗ пек.

Вӗсен кӑрра-кӑрак сассисенче
Роялӗ пур кӗрхи пуян тӗнчен.

Кунта хӑҫан пулсан та вӑрҫӑра
Хирсем ӗнме пултарнӑ-ши вара?

Нумай ҫырма та шыв. Вӑрман та ял.
Михайлов ҫӳремен ҫӗрсем сахал.

Выртан ӗне пек ҫӳлӗ сӑрт ҫинче
Тӑшман тӑратчӗ август кунӗнче.

Сăртран сулахайра вăрман ларать.
«Ёне хӳри»—çаплаччĕ панă ят.

Унтан тухса çĕрле атакăна
Ҫайма приказ килет батальона.

Мускав ачи Каразин лейтенант
Танкне сăрта кăларчĕ пĕр самант.

Фашистсене окопĕ-мĕнĕпе
Ирсе çӳрерĕ йывăр танкĕпе.

Аманчĕ, тухаймарĕ башнинчен,
Çунса сухалнă çулăм ăшĕнче.

Ун кĕлĕ юлнăччĕ, ăна çĕре
Пытарнă çакă пысăк станцире.

Нумай юлмарĕ ĕнтĕ çитесси—
Хыпар пĕлтерчĕ пăравус сасси.

Анса хĕрелекен хĕвел хитре
Таçта та ӳкнĕ станцире.

Çӳрет вăл тирексен тăррисенче,
Кондуктор тӳминче, рельссем çинче,

Вылять çиçе-çиçе, чĕтре-чĕтре
Çынсен куçĕсенче, чӳречере.

Ансассăнах Михайлов çитмелле
Каразин тусĕ выртнă çĕрелле.

Металл чавса пĕтернĕ ку çĕре,
Ăна хуплавă халь çемçе çерем.

Шап-шурă чуллă постамент çине
Тирпейлĕ хунă танкăн башнине.

Чутланă хĕрлĕ çăлтăрлă юпа.
Портрет. Ăна тыттарнă хашакпа.

Кăтра илемлĕ çын вунтăххăрта
Тăван çĕршывшăн çуннă кăварта.

Михайлов «Смертью храбрых...» тенине
Вуланă майăн шăлчĕ куççульне.

Вăл çĕр сиксе кисреннĕ вăхăта
Аса илет, пăхса тăрать кунта.

Çуртсем вутра. Вакун çинче вакун.
Çĕрте ĕнет тăшман юхтарнă юн.

Нумай хура юпаллă тĕтĕмре
Танксем çунса выртаççĕ станцире.

Хĕвел пăхать. Çутти çитмерĕ ун.
Ытла та тĕтĕмлĕ, тусанлă кун.

Аманнă йывăç кайнă сыпăка,
Чиртен сывалнă, халĕ лапсăркка.

Тăшман мĕнле кăна урман,
Анчах хăрса пĕтмен ӳсен-тăран.

Вăрри-тымарĕ вăрçă вутĕнчен
Пытаннă нӳрлĕ çĕрĕн хӳттинче.

Помидорсем кăвар тиенĕ пек
Выртаççĕ халĕ лавĕ-лавĕпе.

Арбуз нумай—ăна тытса шакка.
Шалти сасси пĕлтерĕ пылака.

Касса илсен—çавра чĕлли çиме,
Çыртма чĕнсех тăрать-çке этеме.

Вăрри хура, арбуз тути сипек,
Утарçă тытнă пыл карасĕ пек.

Украинла эрешлĕ тумсемпе
Хĕрсем иртеççĕ станци умĕпе.

Çурхи сенкер, кăвак çеçкесенчен
Тĕс илнĕ пек илем пур куçсенче.

Юрра тăсма та калаçма иккен
Чăп-чăмăр тутисем кунти хĕрсен.

Чуппа тума та тутисем çӳхе—
Тăшман сӳнтереймен хитрелĕхе.

Чиперлĕхе Ҫаразин лейтенант
Сыхланă чух кĕлленнĕ пĕр самант.

Ахаль вилмен. Паян тăпри çинче
Этем те ешĕл курăк, çут тĕнче.

8

Ик енне те йĕркипе
Ушкăн йывăç лартса кайнă
Будапешт урамĕпе
Ирхине утать Михайлов.

Ҫаштансен тăррисене
Хачăпа яка кастарнă.
Машинсем асфальт çине
Халĕ шыв сапса хăварнă.

Чĕптĕм чухлĕ те тусан
Хускатмасть хула урамĕ.
Пӳрнепе пусас пулсан,
Пӳрнене те ним те лармĕ.

Вăрманти пекех тăрать
Сывлăш тутлă, янкăр уçă.
Хушăран кусса каять
Чăштăр-чăштăр сарă çулçă.

Юриех хула курма
Тăнă иртерех Михайлов.
Тин кăна ĕçе кайма,
Васкама пуçларĕ халăх.

Тарăн кăн-кăвак тӳпе
Хĕвелпе çунса вутланчĕ.
Машинсем кĕрленипе
Ыйхăран хула вăранчĕ.

Хир шăршиллĕ сывлăша
Пĕчĕкрен Иван юратнă.
Шавлă вырăн шухăша
Халь ӳсме паман, салатнă.

Шухăшăн хăйне кура
Ашкăрма пурах тымарĕ.
Халĕ тĕркĕш урамра
Вăл епле ӳсме пултарĕ?

Ҫирлĕ шухăш тĕввине
Пуҫтарма тӳлек тавралăх.
Ҫавăнпа Дунай енне
Талпăнса утать Михайлов.

Курăнса тăрать таҫтан
Юмахри пекех чиперрĕн
Сталин ячĕпе тăран
Будапешт хулин кĕперĕ.

Дуная кăвак тесе
Ҫалама сăлтав пулмарĕ.
Урăхла хитре тĕсе
Ҫĕркунне ларма пуҫларĕ.

Чул ҫыран шыва хитре
Сăпкари пекех вырттарнă.
Сĕт хăйми пекех тĕтре
Ҫиелтен кăна хупланă.

Урамсен кĕрлевĕнчен
Аякра чăнах та лайăх.
Ирĕкре кĕпер ҫинче
Тайăнса тăрать Михайлов.

Чарлансем пĕрре ҫӳле,
Пĕр аял вĕҫсе анаҫҫĕ,
Савăнса чӳхенмелле
Хум ҫине пырса лараҫҫĕ.

Атăлти пекех аван
Илĕртсе тăрать ҫанталăк.
Чăвашла юрра Иван
Тăнлама тăрать сасартăк.

«Тухать-и те тухмасть-и?
Эпир киле каятпăр...»—
Теекен чăваш юрри
Илтĕнсе тăрать пĕр тапхăр.

Тухрĕ тепĕр юрринчен
Чĕнтĕрлĕ чăваш кĕперĕ,
Хулапа Дунай çинче
Юрă явăнчĕ, çÿрерĕ.

Федор Павлов юррисен
Сывлăшра кĕрлет концерчĕ...
Аслă Атăл хĕрринчен
Кам ăна илсе çитерчĕ?

Чĕререн, чунтан-вартан
Юратса итлет манмаслăх
Сталин ячĕпе тăран
Чул кĕпер çинче Михайлов.

Вăл хăçан концерт çинчен
Астума пăрахĕ, манĕ?..
Будапешт хули иккен
Халĕ юрă параканĕ!

Савăнса итленипе
Вăл ута-ута çÿрерĕ.
Асамат кĕперĕ пек
Туйăнать хула кĕперĕ.

Вырăс юррипе пĕрле
Тĕнчере юрри чăвашăн
Çĕкленет çÿлтен çÿле
Ырă кăмăллăн, ачашшăн.

Пырса çитнĕ вăл паян
Катари Корейăна та.
Хуплама пултарайман
Йывăр бомба, канонада.

Йÿçĕ тĕтĕм айĕнче
Чыхăнса унта итлеççĕ,
Пĕчĕк халăх çĕр çинче
Пысăк пулнине пĕлеççĕ.

Итлесе тăрать паян
Ĕмĕрне асра тытмалăх
Сталин ячĕпе тăран
Чул кĕпер çинче Михайлов.

Кĕперпе ута-ута
Çын нумай иртни чакмарĕ.
Инçетрен пĕр çын малта
Курăнса киле пуçларĕ.

Ӳчĕ-тирĕ хуп-хура,
Шăлĕсем шап-шурă, паллă.
Утасса утать вара
Ирĕк, çăмăл та вăй-халлă

Кунашкал çынна Иван
Вăрçă хыççăн куркаланă:
— Мирлĕ кун!—тесе чунтан
Сывлăх суннă, алă пана.

Ун чухне нумай салтак
Вена хулинче канатчĕ.
Кӳкĕрт суннă пек кăвак
Курăнса Дунай выртатчĕ.

— Мĕн тума, мĕнле ĕçпе
Килнĕ-ши вăл?—тенĕ майăн
Хăвăрт сылтăм аллипе
Хăй патне чĕнет Михайлов.

Ылтăн çăлтăрлă тусне
Генрих Рун часах палларĕ,
Тытрĕ анлă ытамне,
Чăмăртарĕ, ыталарĕ.

Сталин ячĕпе тăран
Чул кĕпер çинче Михайлов
Тупрĕ питĕ катаран
Килнĕ туслăхпа юлташлăх.

— Хорошо, Иван!—тесе
Генри Рун ăна çĕклерĕ,
Куçĕсем хĕлхемленсе
Ялкăшса тăни пĕтмерĕ.

Çамрăксен фестифальне
Вăл килме пултарнă,
Кулленхи инкексене
Аякри çĕрне хăварнă.

## 9

Çӳлĕ, чăнкă тăвăн хĕррипе
Ярăнать автомобиль ирпе.

Палламан илемлĕ çĕршыва
Сăнама аван Михайлова.

Генри Рун та ларнă юнашар,
Қалаçма—пĕр пек чĕлхеллĕ мар.

Вырăсла пĕлет вăл ик сăмах:
«Хорошо» та «плохо» тет анчах.

Хăйĕн çĕршывне аса илет.
Ал сулать те «Плохо» тет.

«Хорошо» теме сăлтавĕ пур:
Çĕр илемлĕ, çыннисем матур.

Виноград пахчи курмассерен—
Хорошо!—тет Рун минутсерен.

Аялта, ту-чакăл хĕррипе,
Çимĕç сачĕ лартнă пĕтĕмпе.

Пахчасем пурте пушаннă халь.
Вĕсенче çынсем паян сахал.

Қуркалатăн çĕр çемçештерме
Тухнă харсăр ватă этеме.

Вылянать катмакĕ аллинче,
Çанăсăр пиншакĕ—çиййĕнче.

Қăчкă çăмлă усăк шĕлепке
Қилĕшет питех те старике.

Авăн машини кĕрленипе
Сывлăш кисренсе тăрать ирпе.

Вăштăр-вăштăр вĕрнĕ сил пирки
Пур çĕрте те ӳкнĕ хăлчикки.

Пирĕн маркăллă грузовиксем,
Горькипе Мускав кăларнисем,

Будапешт енне яка çулпа
Кĕрлесе иртеççĕ тырăпа.

Карпатри ту тăррисем çӳлте,
Кармашса лекеççĕ пĕлĕте—

Тăтăш хыр вăрманĕ витнипе
Ешĕл сăнлă ĕмĕр тăршшĕпе.

Кун пек пĕлĕт çӳлĕш вырăна
Вĕçсе çитĕ хурчăка кăна.

Мĕн тери хăват, епле чĕре
Салтака çĕкленĕ çӳл çĕре?..

Паттăрсем минометпа туппа
Çĕклесе хăпартнă алăпа.

Пулнă хулăн пĕлĕт лекнипе
Салтаксен шинелĕсем йĕпе.

Çитеймен карта-карта тăрна
Çуркунне окоплă вырăна.

Халь те юлнă сирĕн окопсем
Ту çинче, совет салтакĕсем!

Халь те паттăр вăрçăллă шава
Илтнĕн туйăнать Михайлова.

Татăк-кĕсĕк пĕлĕт тӳпере
Сарлака шинель пекех пĕрре,

Тепринче салтакăн çӳçĕ пек
Курăнса каять ăна ирпе.

Совет çарĕ çакă çĕршыва
Хăтарни çинчен Михайлова

Тутипе те аллипе кăна
Каласа пама тивет Руна.

Генри Рунăн хатĕр ик сăмах:
— Хорошо совет!—тени анчах.

Çӳлĕ чăнкă тăвăн хĕррипе
Ярăнать автомобиль ирпе.



Чилепе[1] хули заводěнчен
Тухнă трактор Венгри хирěнче

Хěвенӳллě тырă ӳстерме
Хайăрса уçать халь çереме.

Советсен çěршывě Венгрие
Пулăшни çинчен те Генрие

[1] Чилепе—Челябинск.

Қаласа парать Иван, вара
Лешӗ ӑнланать хӑйне кура.

— Очень хорошо совет!—теме
Халӗ ҫӑмӑл ҫамрӑк этеме.

— Очень хорошо!—тесе ун-кун
Пӑхкалать хаваслӑ Генри Рун.

Ҫӳлӗ, чӑнкӑ тӑвӑн хӗррипе,
Ярӑнать автомобиль ирпе,

Ҫу ҫинчи пек тикӗс вӗҫтерет,
Пӗр яла хайхи пырса кӗрет.

Салтаксен ирхи ӗречӗ пек
Тӑсӑлса каять нумай тирек.

Қалаҫаҫҫӗ ҫулҫисем ирпе
Шӑпӑл-шӑпӑл уҫӑ сассипе.

Ылтан ҫӑлтӑрлӑ ҫынна курсан,
Ачапча сиксе тухать таҫтан,

Пур енчен те васкаса кӑна
Ҫавӑрса илет машинӑна.

Питӗ, питӗ чаплӑ хыпарпа
Сиккипе чупаҫҫӗ урампа.

— Хорошо народ!—теме паян
Генри Рун вӗреннӗ Иванран.

Чӑннипех иккен хыпар ҫитет,
Кӑвакарнӑ ҫӳҫлӗ ҫын килет.

Вал пиншакӑн сулахай ҫанне
Чикнӗ пиҫиххийӗ хушшине.

— Сывӑ-и!—вал ӑшшӑн ал парса
Вырӑсла каларӗ тап-таса.

— Ятӑм—Шандор. Вырӑсла мана
Саша тейӗр ҫӑмӑллӑн кӑна.

Пирӗн халӗ кооператив.
Ячӗ пултӑр хамӑрла. Ан тив.

Туслă кăмăл хăвăрт килнипе
Виççĕн утрĕç ял урамĕпе.

Пĕр-пĕрин çинчен тĕпченĕ май
Пĕлмелли вĕсен ытла нумай.

Мăйăр катнă евĕр пуплевре
Пĕр сисмесĕр тухрĕç уй-хире.

Такăр çул çитерчĕ вĕсене
Анлă Тисса шывĕ хĕррине.

Лашасем хирте кĕтĕвĕпе
Ĕрĕхсе çилхе силленĕ пек,

Кăпăклă хумсем сике-сике
Чашкăрса хаяр килеççĕ-çке,

Çырана пырса çапаççĕ те
Ыткăнаççĕ каялла пурте.

Шандор шавлă Тисса хĕрринче
Каласа кăтартрĕ хăй çинчен:

— Тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра
Пулса куртăм эп те окопра.

Австри çарĕнче çĕрсе выртма,
Çапăçма кичемччĕ чунăма.

Нимĕçсен империн тупăшне
Хӳтлеме хушман мана анне.

Уншăн хурçă вутĕнче вилме
Усă пур-и ман пек этеме?

Малтанхи атакăра мана
Ырă вырăс илчĕ тыткăна.

Ун чухне мадьярсене—пире
Поездпа ăсатрĕç Çĕпĕре.

Янкăр уçă сивĕ кĕркунне
Эпĕ кĕтĕм пĕр чăваш ялне.

Пĕр турат çинчен теприн çине
Пакшасем сиксе çӳренине

Кантăкран пăхса тăма аван,
Чăннипех те лайăхчĕ, Иван!

Чăвашсем ĕçлетчĕç кунĕпе,
Турттаратчĕç лавĕ-лавĕпе

Кĕлете, таса пӳлмесене
Тутă тĕшлĕ кедр майăрне.

Тухрĕ ăшă чунлă чăвашпа
Пурăнма мана чипер шăпа.

Пирĕн сăмахсем пĕр пеккипе
Тĕлĕнеттĕм эпĕ пĕтĕмпе.

Чăвашла та селĕм калаçма
Вĕрентсе пыраттăмччĕ хама.

Сăмахсем сире «Салам!» теме
Халь те юлкаланă чĕлхеме.

Халăхпа пĕрле Октябрьте
Тăтăмăр эпир те Çĕпĕрте.

Вăхăт çитрĕ. Хĕрлĕ гвардире
Кирлĕ вырăн тупăнчĕ пире.

Тин çуралнă Совета пăвма,
Вĕлерме, унтан вара пуйма

Англипе Америка тата
Ыттисем те хапсăнчĕç унта.

Вĕсемпе пĕрле Япони те
Пулчĕ ылтăн çĕрлĕ Çĕпĕрте.

Çич ютсем совет çыннисене
Вучахра çунтарнă ун чухне.

Çуннă пăравус кăмакинче
Çыннăрсем çав паттăр çулсенче.

Яппунсем çарапакка çынна
Пăрлă шыв сапса кулса кăна

Вĕлерни аса килет паян,
Чĕрене шари çурать, Иван.

Сирĕн халăх хирчĕ вĕсене,
Сирпĕнтерчĕ тинĕс леш енне.

Эпĕ, тусăм, кăлăх аманман,
Юнăма пĕртте ахаль тăкман.

Ленин ялавне тăшмансенчен
Хӳтĕлерĕм Çĕпĕр сиввинче.

Çурçĕрти Америка пуян,
Вĕлерме унта нумай тăхлан.

Ун тăхланĕ ĕмĕр астума
Татрĕ манăн çакă аллăма.

Эпĕ сирĕн пысăк телее
Курнă хыççăн килтĕм Венгрие.

Пирĕн революци ирĕкне
Мулçăсем пытарчĕç юн айне.

Пилĕк çул хушши мана тӳсме
Пулчĕ сивĕ те хура тĕрме.

Хурлă-сурлă йывăр пурăнма
Çитрĕм хам çуралнă ялăма.

Юхăнса арканнă çурт-йĕре
Сиплесе лартас пулать тертре.

Выçăхса ырхан ача-пăча
Макăрать, пӳрне ĕмет анчах.

Ирĕке юратнă кăмăла
Хуçрăм-татрăм эпĕ малалла.

Эпĕ нимĕç графĕ патĕнче
Пултăм тарçă-тĕрçĕ хирĕнче.

Тӳлессе мана, чăлах çынна,
Граф тӳлетчĕ пĕчĕк хак кăна.

Фашистсем мана пĕррехинче
Тытрĕç-кайрĕç графăн хирĕнчен.

— Сулахай аллу ахаль ӳкмен,
Çĕпĕрте çĕрсе выртать иккен.

Хĕрлисем панче иккен апла
Эсĕ хытă тытнă пăшала.

Тытнă эсĕ сылтăм аллупа,
Сылтăмпа тĕлленĕ, çавăнпа

Пирĕн халĕ ку усал алла
Туртмалла та патăрт татмалла —

Терĕç те вĕсем мана хĕртме
Илсе кĕчĕç пĕчĕк пӳлĕме,

Ислентернĕ хыççăн маччаран
Çаклатаççĕ сылтăм аларан.

Çакăнса тăма тивет мана—
Вăхăтне пĕлмен, кĕмен тăна.

Тепĕр кун нумай кăвак пĕрче
Куртăм эпĕ тăнлавсем çинче.

Çунă тейĕн хăрпăк юр вĕççе—
Шурă ӳкнĕ ман хура çӳçе.

Умлăн-хыçлăн лагерь те тĕрме
Хавшатса çитерчĕç чĕреме.

Вăхăт çитрĕ. Сирĕн аслă ыра çар
Венгрие çитерчĕ пархатар.

Шандорпа Иван çыран çинче
Калаçса лараççĕ вăрахчен.

Генри Рун сиксе чăмать шыва,
Тĕпĕнчен каять шăва-шăва.

Кайнă йĕрĕ паллă курăнать,
Пăнчă-пăнчă кăпăк кăларать.

Генри Рун ишет, кăвак шывра
Курăнать-çке хăрăм пек хура.

Авăсса сулать аллисене,
Талпăнса тухать çыран хĕрне.

Генри леш енче тăрать вара
Кăмрăклă юпа пекех хура.

— Хорошо!—тени янра-янра
Кайрĕ Тисса тăрăх улăхра.

Чăнкă ту хушши ăна илтет:
— Хорошо-шо-шо!—тесе чĕнет.

10

Хăй малтан каланă пек, Михайлова
Ырă вырăн сарнă утă çиййӗнче.
Ырнă хыççăн çывăрса кайма аван
Типӗ, кăпăш ухлӗм курăк шăршинче.

Пысăк тутăр сарнă пек çарансене
Сарă, хӗрлӗ те сантал кăвак чечек
Хӳхӗме кӗртни ыйха каяс чухне
Асӗнчен каймарӗ, халӗ курнă пек.

Аслă симӗс улăхра чăпар куккук
Авăтни те тăчӗ унăн хăлхинче.
Куç хупсан, текерлӗксем сирме те çук
Явăнаççӗ самăр лашасем çинче.

— Хорошо народ!—тесе каларӗ Рун,
Выртнă халлӗн кайрӗ тутлă ыйăха.
Ӗмӗрте пӗрремӗш хут телейлӗ кун
Уншăн халӗ килнӗ, сирнӗ хурлăха.

Шухăша кайса, куçне хупать Иван,
Сӗмленет тутланнă курăк шăршинче.
Карăнса килет умне аваллăхран
Сехрене хăпартмăш чи хаяр тӗнче.

Атăл хӗрринчи çăра вăрмансенче
Чăвашсен хура пӳртсен тӗнисене
Ларттарма пулман-ха çутă кӗленче,
Ун çинчен çынсем пӗлмен-ха ун чухне.

Вăкăр хăмпине кӗлпе йăваласа
Карнă карăнтăк, кӗпелӗх пир тӗртме
Ӳснӗ йӗтӗн, ăннă кантăр та пуса,
Сухапуç аран кышланă çереме.

Камăн чунӗ хирӗç пынă харама,
Кам çилли тулса вӗренӗ пусмăрта—
Вӗсене çӳпçесене чиксе çакма
Юриех çăва вăрманӗ пур унта.

Çакăнса тăрать унта нумай çӳпçе.
Мӗскӗн чурасем тăп-тăвăр çӳпçере
Выçăхса та, шывсăр та ӗнсе-типсе
Вилнине хуçасене пăхма хитре.

Пурăнма хăрушă Атăл хĕрринче.
Виçĕ пӳрнине хыпса хурах тавраш
Шăхăрса çӳрет хура вăрмансенче—
Сехрине хăпартнипе чĕтрет чăваш.

Хурахсем эшкерĕпе кĕтмен çĕртен
Тапăнаççĕ, хăвараççĕ хĕнлĕхе,
Сăптăраççĕ тыррине пӳлмесенчен,
Хӳтерсе каяççĕ выльăх-чĕрлĕхе.

Хĕрсене, вăйпитти арçынсене
Кăкарса çыхаççĕ те вĕренсемпе,
Хĕнесе илсе каяççĕ вĕсене
Каялла килми чуралăх çулĕпе.

Кайăк тĕкĕпе пĕрле чăвашсене
Шăрăх, пăчă сывлăшлă пасарсенче
Ал çупса сутаççĕ хурахсем йӳне
Багдадра тата ытти хуласенче.

Çарана çава касса хырсассăн та,
Ешерсе каю çăра хăпарнă пек,
Чăвашсем чултан та хытă пусмăрта
Ĕрчесе пыраççĕ чун хăвачĕпе.

Çеçкене ларса шуралнă çĕмĕрт пек
Чакăр шурă тумлă хĕрĕсем вăййа
Ярăнса тухаççĕ, вăрăм юррипе
Янратаççĕ аслă улăха, уя.

Аслă Атăл тăршшĕнчи çеçенхире
Чăвашсем кайса çӳреççĕ сутупа.
Пысăк хак ӳкет унта катан пире,
Сутăнать унта карас пылпа урпа.

Сарлака хирти çынсем нумайранпа
Кĕмĕл пек кăлканлă тикĕс таврара
Чарăнми куçса çӳреççĕ ушкăнпа.
Нăтăркка ӳт-пӳллĕ. Çӳçĕсем хура.

Выльăх-чĕрлĕх çук вĕсен. Лаша кăна.
Яланах вĕсем кĕсре сĕтне ĕçсе
Пурăнаççĕ, çӳремеççĕ сухана.
Хăнăхман алли-ури хирти ĕçе.

Лашасен тирне сĕвеççĕ, çав тиртен
Туса лартнă çăмламас хӳшшисенче
Çывăраççĕ усă сывлăшлă çеçенхирте
Сăрă çăмлă кашкăр тирĕсем çинче.

Яланах кĕççе йĕнер çинчен анми
Лашапа кăна ялттам çӳренипе
Çакăнти çынсен ура пĕççи шăмми
Кукăрăлнă вăрăм ĕмĕр тăршшĕпе.

Лашасем çине вĕсем тăраççĕ икуран,
Çĕмĕрен пек хăвăрт пынă вăхăтра
Чукмарпа кăнтаççĕ сар тилле пуçран,
Вĕчерен параççĕ шăртлă кашкăра.

Хиртисем ырра сиссе пыра-киле
Кӳршĕ халăхпа каяççĕ туслашса,
Аслă Атăл тăрăх çурçĕр еннелле
Аякка хăйсем çӳреççĕ чăваша.

Туслашса тăни пымарĕ нумая.
Халăхсем килсе тухаççĕ катаран.
Атăл тăршшĕпе, вăрмансене, уя
Хупăрларĕ хуралса çăра тусан.

Вырăн шыраса историри вăйсем
Çĕпрелле тӳсми йӳçсе хăпарнипе
Рим импери еннелле тискер çынсем
Талпăнса шăваççĕ пур эшкерĕпе.

Кĕркунне тăхлан пек хăмăр тӳпере
Пĕлĕт шунă пек, таçтан хăпа-хăпа
Килсе тулчĕç кĕрлесе çеçенхире
Халăхсем юланутпа, урапапа.

Хĕвелпе хуралнă хевтисем çине
Халиччен кĕрсе курман йĕмпе кĕпе,
Арçынсем пĕркенĕ хулпуççисене
Тĕрлĕрен хăрушă енлĕк тирĕпе.

Пĕрхĕт-кайăк пек иккен хĕрарăмсем
Уртăнса лараççĕ йĕнерсем çинче.
Макăраççĕ пĕчĕк чĕчĕ ачисем
Çурăм хыçĕнчи сăран хутаççенче.

Халиччен çава та вашлатман хирте
Кайăк сиснĕ акăш-макăш шăв-шава.
Хăраса вĕçет хуркайăк инçете.
Таптанать хăяхлăх айĕнчи йăва.

Ав пăши, майракине ĕнси çине
Хучĕ те, тарать вăрман варринелле.
Ыткăнса сикме тивет мулкачсене,
Хăрасан та, шăллă кашкăрпа пĕрле.

Пысăк инкеке сиссе чакак вĕçет,
Kaçсерен чакăртатать хăвалăхра.
Ӳхĕсен кăвик сасси те пĕлтерет
Çитнĕ урăм-сурăм йывăр хĕн-хура.

Вирт каять, çунать кăлкан уй-хирсенче,
Ялкăшать вăрман та ял, вара çĕрле
Йăмăхать сар уйăх пĕлĕт хушшинче
Улăп вĕркĕчĕ вĕрсе хĕретнĕлле.

Эшкерсем кусса каяççĕ инçете,
Çул çинче тĕл пулнă халăхпа йăха
Аншăрт тăвăл пек килсе çапаççĕ те
Çаратаççĕ, çунтараççĕ пурлăха.

Ялсенче юпа тавраш юлмиччен
Çунтарса тискер çынсем иртеççĕ-çке,
Кӳсекпе çапса кăнтаççĕ çамкинчен
Пĕчĕк ачана та карчăк-кĕрчĕке.

Вăйпитти кервен чăваш çыннисене
Чурасем тăваççĕ, хăйсемпе пĕрле
Кăкарса каяççĕ вăрçă уй-хирне,
Аякка, Римри импери еннелле.

Тахçанах çĕр пăрлă пулнă тапхăртан
Тăрса юлнă кăтăркка чулсем çинче
Çăхансем виле çисе тăраннăран
Тĕлĕреççĕ юнлă сывлăш шăршинче.

Тăвăл иртнĕ хыççăн Атăл хĕрринче
Ашкăрать мăян, ахаль выртать ана.
Пуртă туклатни хура вăрмансенче
Илтĕнсе каять хутран-ситрен кăна.

Сехметрен тарса таçта çӳренисем
Кĕллĕ çĕрсене килеççĕ каялла.
Кирлĕ çĕнĕрен суха тавращĕсем,
Çĕнĕрен пӳртпе хуралтă лартмалла.

Сахалланнă халăх хăвăрт ĕрчеме
Пултармасть, ӳстерейместь тăван йăхне.
Умлăн-хыçлăн чир те выçлăх этеме
Шăпăр пек шăлса каять масар çине.

Тинĕсри тăвар пекех чăваш чĕлхи
Ирĕлсе пĕтмест асаплăх айĕнче,
Илтĕнет иртсе кайми хуйхи-суйхи
Туйсенче те çамрăксен вăййисенче.

Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртнĕ унтанпа,
Йывăр шунă унтанпа çул хыççăн çул.
Çулсерен кăра çилпе, хăватлă çумăрпа
Лутраланнă ту, шывра якалнă чул.

Халăхсем пĕрне-пĕри хаярлăхра
Турпасла туранă, шăмăсем çинче
Акнă та ăнтарнă çимелли тырра.
Курăк шăтнă куçсенчен, чĕресенчен.

Чăвашсем вăрах шыранă хӳтлĕхе,
Тамерлан, Батый, Мамай асапĕпе
Курнă çĕр чăтса тăми тискерлĕхе,
Çилĕ пухăннă вĕсен чĕрисенче.

Хырçă-марçă тӳлеме вăй-хал пулман,
Чăвашсем вара ытараймн ачисене—
Хӳхĕм хĕрсене кил-çуртĕнче пытарайман,
Леçсе панă хĕсĕк куç хансем патне.

Юрамасть, çитет тарни вăрмансене,
Пытанни те тĕксĕм тарăн варсенче!..
Павăрнай çынсем Хаяр Иван патша патне
Кайнă та каланă пĕтĕм чĕринчен.

— Эсĕ аслă вырăсăн патшалăхне
Йышăнсам пире, илсем ĕмпӳ, хӳтте!—
Тенĕ, тархасланă ун ури умне
Тайăм пуç çапса чĕркуç çинче пурте.

— Пултăр хăвăр ыйтнă пек!—тесе патша
Çакнă евчĕсен хулпуççисем çине
Кăпăк евĕр кăпăш çăмлă варкăшса
Тăракан чипер сăсар кĕрĕксене.

Вырăс халăх хÿттинче вара чăваш
Тупнă ĕмĕр-ĕмĕр утмалли çула.
Шăхăрса вашлатнă улăхра çава,
Кăчăрт-кăчăрт каснă пусăра çурла.

Çĕршыва çич ют хăрушă эшкерпе
Тапăнса кĕрсен, чăвашăн пулнă пĕр шăпа.
Утнă вăл пĕр харăс вырăс тусĕпе,
Керлекен вăрçа таптанă вăрçăпа.

Паттăр вырăс пиччĕшпе пĕрле чакми
Пулнă Мининпа Пожарский çарĕнче,
Пынă вăл Суворовпа... Салтак шăмми
Сапаланнă, курăк ÿснĕ ун çинче.

Çулленех кĕтсен, килмен çут ăрăскал.
Сĕмсĕр выçлăх хыççăн выçлăх килнипе
Йывăç хупписем те, тăм-тăпра та çинĕ ял,
Вилнĕ çитмĕл çичĕ тĕслĕ чир-чĕрпе.

Аншăрт йÿçĕсĕр ÿсмест аçа кикен,
Сăрă кашкăр та тăкмасть асав шăлне.
Улпутсен, сутуçăсен, харам çынсен
Яланах сÿсе тăрас килет çынсен тирне.

Пĕлĕт хыççăн хулăн пĕлĕт капланать,
Капланса çитсессĕн—çумăр çумалла!
Çиçĕм те çиçет, хаяр аçа çапать—
Халăхăн çилли те пухăнать çапла.

Чĕринчи вĕччи йÿçсе хăпарнипе
Чашкăрать, пултараймасть тÿссе тăма,
Тытăнать хайхи вăл тимĕр сенĕкпе,
Пурттипе касма, чикме те ваклама.

Силленсе тăрать хура такан çинче
Вайпутпа улпут, сутуçăпа тиек.
Çакманнин кил-çуртĕнчи кăварĕнче
Кăмрăкпа кукар пулма тухать инкек.

Вырăс пиччĕшпе пĕрле чăваш çӳрет
Харсăр Разин утаманăн çулĕпе.
Ун хаяр сасси пăлхавсенче кĕрлет
Вăрманта, хирте те Атăл тăршшĕпе.

Халăх утă çулнă чух чăнах йăваш—
Тăвăлра тăшман пуçне касать çава.
Çăкăр-тăварпа кĕтсе илет чăваш
Сĕнтĕрвăрринче хастар Пугачева.

Хĕрхенмен, çактарнă халăха патша,
Вĕлерттернĕ пăшалпа та тупăпа.
Пăлхава тата çĕкленмессе хушса
Вăл ларттарнă ялсенче хура юпа.

Хурлăх урлă ĕмĕр-ĕмĕр тăршшĕпе
Кĕтнĕ вăхăт çитнĕ—ырлăхлă тĕнче
Килнĕ аслă Ленинăн идейипе
Вĕлкĕшсе тăран ялавăн айĕнче.

Катăлми-ванми телейĕ чăвашсен,
Ӳснĕ, çитĕннĕ манми Октябрьте
Хурçă партин аллинчи ака-пуçсем
Çемçетсе алтса пăрахнă уй-хирте.

Мадьярсем чăвашсене «Урра!»
Тенипе, тавтунипе, залри шава
Илтнĕ хыççăн, туйнă хыççăн шухăшра
Капланса килмест ыйхи Михайлова.

Хĕрелсе хăпаракан хĕвел пăхать,
Кармашать пур шăтăк-çурăк хушшинчен,
Ылтăн çăнăх сапнă пек çути вылять
Типĕ ӳхлĕм курăк пĕрчисем çинче.

Сарă йĕтĕн пир кĕрри пекех хитре
Кĕрекен ирхи хĕвел пайăркисем
Карăнса тăраççĕ ăшă витере,
Пит çине ӳкеççĕ унăн çипписем.

Çерçисем чĕвĕлтетеççĕ мăнтăртан,
Ихĕрсе кăлтăртатать тулта кăркка.
Çĕкленет хуллен хĕвел инçе сăртран,
Йăпшăнса кĕрет пур шăтăк-çурăка.

Ӑт-кӑтик чӑхсен сассисемпе тулса
Хӑпарать ҫӑра каю шӑршиллӗ кун.
Алӑ тупанне тӑнлав айнė хурса
Ҫывӑрать ача пек лӑпкӑ Генри Рун.

11

Кӗрхи бульвар лутра ҫӑкисене
Ҫанталӑк тӑхӑнтарнӑ сарӑ пурҫӑн.
Профессорӑн кӑвак шӗлепкине
Килсе ҫакланнӑ икӗ-виҫӗ ҫулҫӑ.

Ҫуртсен тӑррисене лекес пекех
Шӑваҫҫӗ пӗлӗтсем аял та йывӑр.
Паян татти-сыпписӗр, иртенпех,
Кахаллӑн пӗрӗхсе тӑрать сив ҫумӑр.

Асфальт ҫӳп-ҫапсӑр, тап-таса, йӗпе.
Пуҫне чиксе айккинелле пӑхмасӑр
Чӑп-чап тутаракан калушӗпе
Утать пӑртакҫӑ ӳпӗнсе профессор.

Йӗс евӗр сар аллейӑ хушшинче
Хыҫран кас-кассӑн ҫил ҫапса вӗрӳҫӗн
Ун шӗлепки ҫуначӗ айӗнче
Вӗҫет кӑшкарлатса кастарнӑ ҫӳҫӗ.

Пуҫне килсе капланнӑ шухӑшне
Сиресшӗн вӑл, анчах та халӗ унӑн
Иртни-курни килсех пырать асне,
Ун чух хальхин пек сивӗ ҫумӑр ҫунӑ.

Вӑл килнӗ йывӑр граждан вӑрҫинчен,
Асра хӑма арчи, ҫири шинелӗ.
Минутсерен кӗрхи урамсенче
Мускав трамвайӗ кӗрлемен йӗркеллӗ.

Вӗреннӗ вӑл, апат валли укҫа
Йӳнеҫтерме вокзалсенче ӗҫленӗ,
Ҫамки ҫинчен вӗри тарне шӑлса
Тӑпра та чавнӑ, вутӑ та тиенӗ.

Ана сухалама та тыр вырма
Аллисене ача чухне хытарнӑ.
Ҫак аласем институтра ҫырма,
Кӗнекене ӑста тытма пултарнӑ.

Тăшмансене атака хирĕнче
Тĕлленĕ куçĕ халь куллен вуланă;
Пыра-киле салтакăн умĕнче
Наукăсен çăлкуçĕ ялтăранă.

Вутра кăна хĕçе шăратнă пек,
Ĕçре çеç шăранать этем хăвачĕ,
Ăсра пулать никам авми тĕрек,
Чиперленет çын ӳчĕ, сăнĕ, ячĕ.

Ирхи хаяр тăма та сывлăма,
Çиллес çиле курса тӳсмен чечекĕн
Илемĕ çук, хастарлăн хăпарма
Тымарĕсем те ун ытла черченкĕ.

Пĕртен-пĕр ачине хăй килĕнче
Ачашласа пăхса ӳстернĕ ашшĕ.
Людмила самана сакки çинче
Хăйне хавраслăхпа телей тупать-ши?

Профессор. тĕп хресчен ачи, ялан
Вăрмансене те хирсене юратнă,
Çуллен, çурхи çанталăк хăпарсан,
Хĕрне хăйпе пĕрле ялаваскатнă.

— Сана тăпра ĕçне савма халал,
Унта калчаланать тĕнче илемĕ,—
Тесе каланă вăл. Ачи кăçал
Пĕтернĕ ялхуçалăх академи.

Людмила ӳснĕ ашшĕ хӳттинче.
Юратнă амĕш вилнĕ, пысăк эрлĕк
Хăварнă килĕнче. Çтена çинчен
Пăхать хĕрне хĕрхеннĕ пек ӳкерчĕк.

Турат çинчи улма пекех хитре
Людмила çитĕннĕ кӳпшек сăнарлă.
Сад пек илемлĕ хваттертен хĕре
Çап-çамрăк çын илсе кайма пултарнă.

Сад хӳхĕм мар, улмисене татсан.
Çаплах хваттерĕ пушанса çаралĕ.
Юпа пекех пĕччен çĕ юласран
Профессор кунсерен хăрана халĕ.

Кам пулĕ-ши килес кĕрӳшĕ ун?
Кĕтмен инкек-синкек пекех сасартăк
Людмилăна çаклатмĕ-ши пĕр чун,
Хăмла пек çăмăлттай этем, каппайчăк?

Чечек çинче сăпса чее вĕçет,
Ялан яка усал çынсен ултавĕ.
Яш чух чипер хĕре те илĕртет
Ас мар, гитарăсен ухмах янравĕ.

Юрла хура кăтра çӳçсем çинчен,
Яштак пĕве мухта, анчах кур витĕр:
Кăтра та тӳрĕ хурăн айĕнче
Хутран-ситрен пулать çĕлен йăви-те.

Профессор чи малтан курсассăнах
Михайлова чунтан-вартан юратнă,
Иванăн чĕринче нумай ахах,
Ырри нумай тесе вăл шухăшланă.

Сăпайлă хĕрлĕ çăлтăрлă танкист
Сиксе ӳкмен мухтав та чап тупасшăн,
Людмилăна:—Ăна итле, унтан ан пис!—
Тесе каланă, ӳкĕтленĕ ашшĕ.

Чăнах та, иккĕш мăшăрлă пулсан,
Кичеммĕн тарăхни пĕтсе çырлахĕ,
Çуллен çулла яла канма кайсан,
Çĕрле çуталĕ пулăçсен вучахĕ.

Ун чух, шăмми-шакки имшеррине
Сиссен те, калĕ вăл хăйне: Ан ватăл!
Ун умĕнче çилхеллĕ хумсене
Кĕтӳлетсе кĕрлетĕ аслă Атăл.

Людмилăн савнă пĕчĕк ачине
Профессор утьăкка туса сиктерĕ;
Ачан кусне ӳкерĕ хăй тĕсне
Вăрман та, хир те, асамат кĕперĕ.

Çынна хăрушă мар сивве тӳсме,
Хăратмĕ кĕркунне йĕпе-сапа та.
Профессор илĕ пылчăка ишме
Пĕç тĕп таран вăрăм кунчаллă атă.

Тахçантанпа Людмилăна пĕрре
Пурне те уççăн каласа парасшăн
Шутланă урамра та, пÿлĕмре,
Анчах тертленнĕ те вăтаннă ашшĕ.

— Хĕре памастăп эп каппайчăка,
Хам пек хресчен ачи Михайлов илтĕр!—
Паян калатăп,—тет, васка-васка
Утса пырать вăл сивĕ çумăр витĕр.

Арбат урамĕнчи кив чул çурта
Çÿлти хута кĕрсе кайса профессор
Ытла васканипе коридорта
Хăварчĕ йывăр алăка хупмасăр.

Çилсем çинче те çумăр айĕнче,
Хĕл сиввинче тÿссе мăкланнă çуртăн
Шалта тăвата-пилĕк чÿрече
Хăма урайĕ те, маччи яка та çутă.

Кашта пек хунă хăмасем çинче
Йĕри-тавра кĕнекесен шаршанĕ.
Профессор вăрăм ĕмĕр тăршшĕнче
Пурне те вĕсене алла тытман-и?

Вуланă вăл, наука тĕшшине
Суйланă пинĕ-пинĕпе типтерлĕн,
Вара вăл сапнă халăх чĕрине,
Наукăна унта пăхса ÿстернĕ.

Пиçен-кикен наука хирĕнче
Шăтас пулсан, ăна тĕпрен кăкланă.
Профессор çырнине хуласенче,
Колхозсенче çынсем савса вуланă.

Людмила çăмăл çăм калушĕпе
Сиксе тухса нимле те сас тумарĕ:
— Атте! Атте!—тесе ик аллипе:
Тытса ашшин тумне хыва пуçларĕ.

— Атте, аттеçĕм! манăн романа
Вулать, ырланă пек калать редактор.
Ташлас килет. Ан пÿл-ха эс мана.
Хыпарусем пулсан, кĕтсе пăртак тăр!

— Тăхта, чипер ачам! Тата нумай
Çырма пултарăн. Эсĕ халĕ çамрăк
Мана итле!—профессор утнă май
Çиленнĕ пек татса калать сасартăк.

— Каччу савмасть каппайчăк шăв-шава.
Куçран пăхсах пĕлсе тăратăп эпĕ.
Мана итле, ачам! Михайлова
Наукăра кĕтет мухтавĕ те хисепĕ.

Михайловран вĕрен, ăна тăнла,
Шыра та туп хăвна илемлĕ вырăн.
Вара телейлĕ пулăн малалла,
Роман, калав та повесть эсĕ çырăн.

Яла пуç тай, ан йĕрĕн, ан тирке,
Çынпа паллаш, çынна итле те пулăш.
Ялти çил витмĕ ăшă кĕрĕке,
Ӳте шăнтса пăсаймĕ сивĕ сывлăш.

Пур манăн хамăн ĕмĕр тăршшĕнче
Юратнă ĕмĕт—халĕ çиттĕр ĕнтĕ:
Тытас килет халь аркă çиййĕнче
Сан савнă ачуна пĕрре пулин те...

Саватăн-и, ачам, Михайлова?
Татса кала, кайран вара ан ӳкĕн!
Ирттермелле паян канашлăва
Эпир пĕрне-пĕри вăрçмасăр иккĕн.

Чăнне кала, ачам!—тесе хĕрне
Хуллен ыталаса илет профессор.
— Юрать!—текен Людмилăн сăн-питне
Тухать кĕрхи пилеш пекех кĕрен сăр.

12

Ача çуратнă чух чечен
Пулмасть хĕрарăмăн сăн-пичĕ:
Тăртаннă кăкăр лапкинче
Çӳрет хăймаллă тутлă сĕчĕ.

Анаслатать хĕрарăма
Çĕрле те кăнтăрла та ыйăх.
Çапла тухса тăрать ума
Кĕрхи пахчаллă аслă улăх.

Çилсем хĕле кĕме ăна
Сап-сарă çулçăпа витесшĕн.
Кăшмəн йăранĕсем кăна
Шанса хăрман. Вĕсем ем-ешĕл.

Парка çулçисене хăртма
Паман-ха кишĕрĕн йăранĕ,
Анчах каç ÿкнĕ сив тăма
Тÿссе тăраймĕ. Вăл та шанĕ.

Çулла вăй илнĕ çут тĕнче
Каясшăн мар, вăрах тăрасшăн.
Çил çурнă пĕлĕт хушшинчен
Хĕвел пăхса илет ачашшăн.

Вăл сивĕ хĕрлĕ çуттипе
Хĕртмест, анчах кунта лĕп ăшă.
Ахах-мерчен çуначĕпе
Вĕçет часах чунланнă лĕпĕш.

Чылай çĕрте çара пахча.
Унта помидорпа хăярăн
Выртаççĕ аврисем анчах
Пăтрашнă çип пек йăрăм-ярăм.

Еплеччĕ шампăлти çулла!
Алла тытса силленĕ майăн
Салтакăн флягинчи шывла
Шавлаччĕ ун шĕвекĕ лайăх.

Тырпуллă август ăшшинче
Арбузăн кăчăрти шерпечĕ
Çыртмассерен чĕлхе çинче
Хуллен те сиввĕн ирĕлетчĕ.

Пĕр тăтăш ăннă купăстан
Выртать нумай-нумай йăранĕ.
Пĕр вĕçĕ лекнĕ ун сăрта,
Ун тепĕр вĕçĕ—шыв çыранĕ.

Шур пуçсене çĕççисемпе
Касса пухса пырать бригада.
Янра пуçларĕ иртенпе
Хĕрсен юрри унта, кунта та.

Машинăсем çине ăста
Карса сараççĕ шур шăналăк,

Йатса тиеççĕ купăста
Хула пасарĕнче сутмалăх.

Пахча çара кĕрхи кунта,
Хапхасăр кил пек улăх уçă.
Сапаланса унта-кунта
Выртать пăртак саралнă çулçă.

Кĕтӳ тăкаксене çиме
Васкатăр, халĕ иртсе тăтăр—
Пуçларĕ хытă мĕкĕрме
Тăпра чавса ăратлă вăкăр.

Хуран пекех çиллисене
Сĕт тулнă ĕнесем утаççĕ,
Парка кăшман çулçисене
Чĕлхисемпе явса хыпаççĕ.

Тăраннă хыççăн Энĕше
Мĕкĕрешсе кĕрсе каяççĕ,
Сивве пăхмасăрах ишсе
Пичке пек çăмăл ярăнаççĕ.

Тутисенчен ӳккелекен
Тумламсене хĕвел хĕретрĕ—
Çапла нумай тухать иккен
Пĕрерĕн асамат кĕперĕ.

Тăвата пысăк грузовик
Йĕпе тăпра ашса лараççĕ,
Вара çерем çине вăштик
Сиксе тухаççĕ, чуптараççĕ.

Грузовиксем çинче хĕрсен
Вĕçеççĕ тутрисем вĕл те вĕл.
Выртать йĕри-тавра хирсен
Калчи çăра, таса, ем-ешĕл.

Эрешменсен картисене
Çилсем, татса илсе каяççĕ,
Хăлха çине, пит-куç çине
Хутран-ситрен пырса сыраççĕ.

Машина та лашаллă çын
Татти-сыпписĕр тĕл пулаççĕ.
Пĕри çинче тăрать Лукка—
Хăйсен çынни, ĕçчен утарçă.

— Тăвата пин!—тесе Лукка
Укçаллă портфельне силлерĕ.
Çил пек машина аякка
Вĕçтернĕ май тусан çĕклерĕ.

Пыл сутнă, халĕ укçине
Колхоз шоферĕпе утарçă
Правленири сĕтел çине
Купаласа хума васкаççĕ.

Ирхине сĕт пек шап-шур тĕтре
Йăсăрланнă вăхăтра
Кантăкран пăхса пыма хитре
Тикĕс шавлă пуйăсра.

Çĕмĕрле çăра вăрманĕсем
Умĕнчен шăва-шăва
Тăсăлни тинкер пăхайнăçем
Килĕшет Михайлова.

Çирĕкпе çăка та тупăлха
Сарăрах, анчах юман
Çуллахи пекех ем-ешĕл-ха,
Тăм ӳксен те пăхăнман.

Вăрманта сайра хутран-ситрен
Вучахсем пек ялкăшса
Ларакан сапаклă пилешсен
Сăнĕ çапнă сывлăша.

Кукăр-макăр выртнă Сăр шывнĕ
Урлă каçнă чух хирте
Хăвăрт нӳрлĕ çил Иван питне
Сиввĕн перĕнсе иртет.

Ашшĕпе Людмила та
Уçнă пĕр чӳречене
Çил силлет кăритурта
Хĕрĕн çутă сар çӳçне.

Тусăр-сăртсăр тикĕс уй-хирте
Пуйăс хăвăрт кайнăран
Кинори экран пекех иртет
Ял та, улăх та вăрман.

Ку çулпа нумай çӳренипе
Ачаран Михайлова
Çырнӑ евӗр паллӑ пӗтӗмпе
Ял, çыран, пӗччен хӑва.

Çулсерен чӑваш çӗршывӗнче
Заводсем, катмар çуртсем
Ларнипе ӳсет мӗнпур енче
Халиччен пулман илем.

Акнӑ вӑрлӑхран ӳсет вӑрман,
Шывсене тытать пӗве.
Çӗнӗ вӑй-хӑват кӗрет паян
Пирӗн юрӑпа кӗвве.

Çук Швейцари пек аван
Хӳхӗм вырӑн—çӗр çинче.
Илтнӗ çак юрра Иван
Çӑмӑлттай этемсенчен.

Аслӑ Атӑл хӗрринчи уя,
Ешӗл улӑха илсен,
Мӗншӗн-ха вӗсем вара кая
Ют çӗрти илемсенчен?..

Кӗвенте пек кукӑр вырӑнтан
Иртсенех, анса юлма
Шур вокзал йӑмралӑх айӗнчен
Ярӑнса тухать ума.

*1950—1954.*

2.99

Цена 7 руб. 45 коп.


Я. УХСАЙ

АГАШКЮЛЬ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1955